ВУЧАХ БИБЛИОТЕКИ



1992
2

Владимир КУЗЬМИН

# Алӑри пӳрнесем те тан мар...

К С(Чув.)
К 89

84(2=Чув)6-445

Национальная библиотека ЧР
4-034091

Г ЕНО
20__

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

# Калавсем

# Туртăм

Хĕвел тухать, тӳпене çĕкленет, анать; уйăх тулса каталать; анлă уçлăхра пин-пин çăлтăр йăлкăшать. Çур — çутçанталăка чĕртет, çу — çуллантарать, кĕр — пуянлăхпа кĕрлет, хĕл — шурă шупăр парнелет. Юхать, куçать, пĕрмай улшăнса çĕнелет тĕнче. Çĕр çинче этем çуралать, ӳсет, ватăлать, вилет. Ун вырăнне каллех тепри хушăнать. Пурнăç аталанать, тĕнчекурăм анлăланать. Тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле, тенĕ пек, çав аталанура кашниех хăйĕн шăпа çиппине тĕрлĕ майлă арлать. Пĕрин çиппĕп пулать вăл — телей кӳрет, теприн хавшак пулать — нушалантарать, хăшин тĕвĕленсе ларать, хăшин сыпăнмасть, анчах пурин те пĕр çăмхана чăрканать. Çав çăмхара, этем ушкăнĕн çăмхинче, мĕн тĕрлĕ кăна шăпа çуккă-ши? Алăри пӳрнесем те тан мар та, çынсен те шăпи пĕрешкел мар çав. Кашнин — уйрăм, кашнин — хăйне майлă. Пирĕн Ченкасра та ытти ял-хулари пекех пуль. Е мана çеç çаван пек туйăнать-ши вăл?

Çуралса ӳснĕ тăван вырăн мĕншĕн темрен те хаклăши? Мĕншĕн вăл сан пуçунтан пихçан та тухма пĕлместши? Аякра чухне аса килe-килe, куçа курăна-курăна мĕншĕн тăтăшах чĕрене йăшкаттарса ыраттарать-ши? Çулсем иртсе пынă майăн мĕншĕн вăл хăй патне ытларах та ытларах туртать-ши? Кун пирки, паллах, этемлĕх ĕмĕрĕмĕр калаçать, Çĕр çинчи кашни çын хăйне евĕр шухăшлать, ăсĕ çитнĕ таран хуравне тупать. Миллион тĕрлĕрен шухăш-хурав тупăнсан та, вĕсенчен чи витĕмли, чи тĕрĕсси çакă пулас: çутçанталăк тытăмĕнчи эпир курман, туйман, пирĕнтен килмен вăрттăн вăй туртать пире унта, пĕр-пĕринпе çыхăнпă тĕнче тĕввинче, тупата, салтăну, аркану пулмалла мар иккен. Эпĕ-и е кам та пулин урăххи çавăнта çуралнă пулсан, вăл çав çĕр çинче, çав вырăнта кирлĕшĕн кун çути курнă, унăн çавăнта ĕçлесе, пурнăç туса, çемье чăмăртаса, ача-пăча ӳстерсе çавăнтах çĕре кĕ-



34091чув

мелле. Ҫав халăх хушшинче ырă ят хăвармалла, ҫав халăха мăлалла аталанмашкăн пулăшмалла. Анчах та, тĕрлĕ сăлтавсене пула, ҫын хăйĕн йăвинчен уйрăлса аякка ăсанать. Ҫав туртăм вăйĕ ăна ун чухне те ярасшăн мар асаплантарать-ха: пĕрне йĕртет, теприне уртарать, каялла ҫаврăнтара-ҫаврăнтара пăхтарса мĕнпур ыррине-усаллине аса илтерет.

Эпĕ те пурнăҫ пăтранăвĕнче ҫуралнă тăван ҫĕр кĕтесне, тăван Чеченкас ялне, ҫырма хĕрринчи тăван киле, вăхăтлăха ҫухатрăм. Вунтăххăра ҫитиччен мĕн-мĕн ытларах асра юлнăччĕ-ха маншăн хамăрăн Чăвашьенче? Эпĕ вĕсене йăлтах йĕркипе блокнота ҫырса пыраттăм. Блокнотне пасарта сутнă услам ҫу укҫипе Когиз магазинĕнче туяннăччĕ. Налуксемпе ҫаралса, тӳлевсĕр тенĕ пек ĕҫлесе тертленсе ҫитнĕ хресчен ҫемйинче кашни пусĕ хальхи вунă тенкĕ вырăнне шутланатчĕ. Ҫавăнпа мана, пустуй хут-хĕтĕр илсе тăкакланнăшăн, киле ҫитсен пит хĕреличченех ят тивнĕччĕ. «Перекетлĕ, тимлĕ пулмалла, кашни пусне пĕлсе усă курма вĕренмелле»,— куҫран кăмăллăн пăхса ăс паратчĕ анне. Малтанхи перекет урокĕсем маншăн усăсăр юлмарĕҫ — пурнăҫра кирлĕ пулчĕҫ.

Кăвак ҫутлах тырă уйне ҫитеттĕмĕр те курăк ҫинчи сывлăмпа пите ҫуса уҫăлтараттăмăр. Симĕс вăрман хыҫĕнчен шăрапса тухакан хĕвелтен ҫакăнса тӳпене улăхас килетчĕ. Купĕне ĕшенсе лутăрканнă шăмшакпа киле ҫитсен суккăр куҫпах пĕр стакан ăшă сĕт ĕҫнĕ те вырăн ҫине тӳрех тӳннĕ. Хĕвел, туртса ыратакан пилĕк, ҫурла каснипе суракан алă, кăпăклă сĕт, мамăк минтер, аннен хĕрхенӳллĕ ҫепĕҫ сасси... «Ытла вăрăма тăсăлчĕ-ҫке ку вăрҫă, чарăнсан та пире асаплантарма пăрахмасть, хăрушă алли-урипе ачаш чунсене амантса лӳчĕркет, вăйă-кулăра савăнас чухне халь ачамккăсем пушаллă пурнăҫ тарҫи вырăнне тăрса юлчĕҫ. Эй, турă пулăштăрах вĕсене телей курма»,— хăй тĕллĕнех калаҫатчĕ анне.

Ҫиччĕмĕш класран вĕренсе тухсан, ют ялти шкула виҫĕ ҫул утрăмăр. Унтан таврăннă чухне икĕ ҫухрăмри чăнкă тăвайккирен пирĕн ял куҫ умне ҫĕр ҫине ӳкернĕ чечек пек тухса выртатчĕ. Шупуҫ ҫырми тĕвĕрĕлсе пырать-пырать те пилĕк юпа пулса каять. Варринчи виҫҫĕшĕ тă-

рăх кил-çуртсем чăмăртанса ларнă, хĕррипчĕсем — сипсимĕс çулçăсем пек. Чечекĕн кашни çеçки хăйне евĕр илемлĕ, хăйне евĕр чĕрĕ. Çулталăк тăршшĕпех чечек çуралать, вăрă ӳстерет, таврана сапалать. Çĕнĕ вăрăран çĕпĕ çимĕç ӳссе яла çĕнетет, пуянлатать.

Çăлкуçĕсем мĕн чухлĕччĕ! Вĕсем типмеççĕ, юхсах тăраççе, Шупуç çырмине тулса малалла чупаççĕ. Чеченкас Шупуç çăлкуçĕсен техĕмлĕ шывĕпе çăвăнса тĕнчене илем кӳрет. Çапла хавхаланаттăм çамрăк чун хĕрӳлĕхĕнче илемлĕ ялăмпа, Шупуç çырмипе. Улăхĕнчи чечен чечек хушшинче чечен хĕр курăк çинчи сывлăмпа пит çуниие курса чуна килентереттĕм. Чеченкас урамĕсенче малтанхи юрату сывлăшĕпе антăхса çунакан ăшчике çăлкуç шывĕпе сапса сӳнтереттĕм. Салтак ячĕ тухсан, мана чăваш пăлли-йĕркипе, ял тăрăх лашапа чуптарса, тутăр вĕçтерсех ăсатрĕç Çара. Унпăн вăтаннăччĕ, халĕ аса илетĕп те мухтанатăп. Тăван халăх йăли-йĕркипчен мĕншĕн писмелле-ха пирĕн?

Виçĕ çул службăра пулнă хыççăн комсомол путевкипе юлташсемпе Донбаса шахтăна кайрăм. Унтах юлтăм. Макеевкăран виçех мар, тип çырма пуçĕнчи Сивĕ вар поселокĕнче пурăнма пуçларăм. Авлантăм. Икĕ ачаллă пултăм. Аллăра пенсие тухрăм.

Отпускра ялта пулмасăр пĕрре те ирттермен. Пурнăç йĕркеленсе пынă май аттепе аннене те кăштах çăмăлланчĕ. Шăллăмпа йăмăк пулăшатчĕç. Эпĕ ĕнтĕ — укçапа кăна.

Çавра çăкăр йăхĕнче пирĕн усал çын пулман. Асаттесемпе асаннесем те, аттепе анне те ял çинче ырăпа кăна палăрнă. Вĕсем пирки пикамран та япăххине илтмен. Çав сулăм, юппа пыракан пахалăх йĕрĕ, хамра та пурришĕн эпĕ, киревсĕр çынсем çине пăха-пăха, тем пекех хĕпĕртенĕ. «Çынна усал туни халăхра усал ят хăварать, ырă туни — ырă ят, асту çакна»,— ача чухне аттерен илтнĕ канаш чĕрере тымар яни мана пурнăç çулĕпе тӳррĕн утма пулăшрĕ. Çавăнпах пуль ячĕ-мухтавĕ хам ĕçленĕ çĕрте сарăлнах ĕнтĕ. Орденне те, хисеп хутне те темиçе илнĕ. Пурте пурччĕ ман шахтерсен çемйинче, анчах пĕтĕм савăнăçа пĕр канăçсăр йăшăлтату пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕнех шал-

тан — чĕререн — аркатма пуҫларĕ. Хайхи ҫутҫанталăкра курăнмасăр пурăнакан ҫивĕч туйăм туртать те туртать хăй патнелле. Куҫ умне пĕрмай тăван ял, хамăр ял ҫыннисем туха-туха тăраҫҫĕ. Тинĕс пек хумханакан тырă уйĕсем, вăрман, пĕҫернĕ ҫăкăр, кăмака яшки шăрши, анне алли шăрши сăмсана кăтăклать. Тĕлĕкре те ял урамĕсемпе утатăп. «Авă епле иккен вăл хитре чечекĕн пурнăҫ ҫилĕпе аякка кайса ӳкнĕ вăрри ют ҫĕрте тымарланаймасăр нушаланать. Сиплĕ шыв ҫитмест иккен ăна. Ҫав шерпет Чăваш ҫĕршывĕнчи Чеченкасра кăна. Сивĕ вартан тапса тăмасть ҫав асамлăх. Каяс, лăплантарас чуна, хамăн парăма, ватлăхра та пулин, татас халăх умĕнче, мĕн чухлĕ те пулин уса кӳрес тăван ҫĕре-шыва»,— тесе шухăшларăм-шухăшларăм та арăма пĕлтертĕм. Вăл, украин хĕрĕ пулин те, майĕпен-майĕпен килĕшрĕ манпа Чăвашстана яланлăхах куҫса килмешкĕн. Ачасем ӳссе ҫитĕннĕччĕ те, вĕсем хваттерте юлчĕҫ. Эпир вара, шахтерсен поселокĕпе сывпуллашса, кунталла ҫул тытрăмăр.

Ҫăмăлах пулмарĕ пăрахса килме. Ҫӳллĕ ту пек террикансем, ҫĕр кăмрăк тусанĕн сăмсана уҫăлтаракан шăрши, шахта. Стадион ҫумĕнчи террикон ҫине хам алăпа картса тунă яланхи вырăн... Сивĕ вар. Тип ҫырма пуҫĕнче пулин те, Сивĕ вар поселокĕ маншăн ҫирĕм сакăр ҫул хушшинче чун-чĕре ăшшипе ăшăннă, украин халăхĕн хĕрӳлĕхĕпе хĕрнĕ, илемлĕ халăх хĕрĕн юратăвĕпе симпыланнă. Ҫапах Шупуҫ ҫăлкуҫĕн, Чеченкас туртăмĕн вăйĕ ҫĕнтерчĕ.

Шăллăм уйрăлса тухнă, йăмăк качча кайнă хыҫҫăн аттепе анне иккĕшех пурăнаҫҫĕ. Вĕсемшĕн эпир тӳперен татăлса аннă ҫăлтăрсем пекех пултăмăр.

Урбанизаци серепинче Чеченкас, ытти хăшпĕр ялсем пек, ватă масар вырăнне тăрса юлман. Хамăр несĕлсен ăслăлăхĕпе канашĕ паянхи ăру ҫыннисен чĕринче те ҫирĕппĕнех вырнаҫнă. Ҫĕр ҫыннин ҫĕр ҫумĕнчен уйрăлмалла мар тенине манмаҫҫĕ иккен. Ҫавăнпах ял тулли халăх пирĕн. Пур ĕҫе те кар тăрса тума пултараҫҫĕ. Эпĕ малтанах хамăр валли ĕҫ те пулмасть пулĕ тесе кулянма пуҫланăччĕ. Анчах... ĕҫшĕн ҫунакан валли ĕҫ тупăнатехмĕн. Правленире пирĕн ыйтăва тивĕҫтерчĕҫ. Вăй-хал пур-

ха халлĕхе, икĕ алла пĕр ĕç тенĕ пек, карчăкпа иксĕмĕр те сысна фермине вырнаçрăмăр.

Аса илмелли, ĕлĕкхине хальхине танлаштарса охлатмалли-ахлатмалли ĕнтĕ ирĕншĕн хамăрялсемпе калаçнă чухне темĕн чухлех тупăнать. Мĕн кăна курмастăн, мĕн кăна илтместĕн. Пĕриншĕн хĕпĕртететĕн, тепириншĕн хурланатăн. Çăлкуçсенчен тапса тăракан чĕрĕ шыв çумĕнчех пăнтăхнă виле шыв та пур иккенне халăх хушшинче ытларах куратăп, таранрах туятăн.

# Çырма Машукĕ

Шупуçĕн виçĕ юппи шапах пирĕн урам пуçĕнче виçĕ еннелле уйрăлса каять. Чўречерен пăха-пăха тĕлĕнеттĕм ача чухне. Тăварах, йăмрасем хушшипе, виçĕ юпăри виçĕ пĕве тулса тăкăнса каяс пек çуталса выртатчĕ. Шывĕ пĕве пуçĕнчен те çўлерех хăпарса тăнăн курăнатчĕ Çырмара тăп-тăрă шыв шăнкăртатса юхатчĕ, шыв кукрисенче, кўлемĕсенче вĕтĕ пулă вылятчĕ. Çыран ишĕлсе çырма ан сарăлтăр тесе лартнă асатте, атте йăмрисем çумне ман йăмрасем те хутшăннăччĕ. Вĕсене эпир хам авланнă çул, чĕрĕк ĕмĕр каялла, арăмпа тата аттепе пĕрле çыр тăрăх, кĕпер çумне лартрăмăр. Асаттен йывăççисем хăрса, хуçăлса, касăлса пĕтрĕç. Вĕсем вырăнне çĕннисем ўсеççĕ. Вĕсене ачасем, çуркунне яла курма килсен, ман йăмра турачĕсене касса çĕр çине чикрĕç. Вăт çапла черетленсе, çĕнелсе симĕсленсех тăрать вăрман пек çырма тĕпĕ.

Ял çынни йывăçа ĕлĕк-авалтан е хăй килĕ умне, е хăйĕн çĕрĕ çине, çĕрĕ сывăхне лартма тăрăшнă. Çак хăнăхуллă йăлапа пирĕн йăхра та ку таранччен пăсман. Çаваннах пуль хамăртан аяларах пурăнакан кўршĕсен умне йышăнма шутламан.

Кўршисем пирĕн темшĕн-çке йывăç тавраш юратсах кайманскерсем пулнă. Пахчинче те, урамра та, çырмара та пĕр йывăç ўсмен эп астăваса, халĕ те ўсмест вĕсен ячĕпе. Çутçанталăка сиплессишĕн, пурнăç сывлăшне пуянлатса тытса пырассишĕн чĕрне хури чухлĕ те тăрăшман

çынсем хӑйсем мӗншӗн çӗр çинче пуррине туймаççех пулӗ тетӗп. Çӗр суранпе те курмӑш пулаççӗ. Çавна курма-туйма пӗлсен, хӑйсен умӗнчи шырлан симӗс улӑха икӗ еннелле çурса хӑпарнинчен те хӑраса ӳкмелле. Шырланӗ вара çулран-çул сарӑлать, тӑвалла çӗмӗрсе кармашать.

Астӑватӑп, аттепе иксӗмӗр эпир шырлан икӗ енӗпе йӑмра лартас тесе шӑтӑк чавма пуçланӑччӗ. Пире уншӑн темтепӗр каласа хӑртса пӗтерчӗç. «Пирӗн умри çӗрпе сирӗн мӗн ӗç пур, хӑвӑр тӗлти çитмерӗ-им, хапсӑнса çӳретӗр?!» — тесе Çырма Машукӗ çухӑрнине халӗ те манаймастӑп. Атте ӑна тем пек ӑнлантарма тӑрӑшрӗ, анчах кӑлӑхах пулчӗ.

«Çав Машукӑн ӑшчикӗ, чунӗ хӑй умӗнчи çӑл шывӗнчен те сивӗрех пулас, ытла никама та юратмасть. Çынна юратмасӑр, хӑвӑн ӑшшуна çынна памасӑр мӗнле пурӑнапха халӑх хушшинче!» — тесе тӗлӗне-тӗлӗне ятлаçатчӗ анне.

Машук аккан çӳçӗ тур лаша çилхи пек хуратчӗ, шултӑраччӗ, тӑрӑхла пичӗ тарӑн йӗрлӗччӗ, мӑн сӑмси çинче пӑрça пек шӗпӗнччӗ, шултӑра шап-шурӑ шӑлӗсем сарлака çӑварӗнчен ытла хӑрушшӑн йӑлтӑртатса курӑнатчӗç. Саркаланса, арçынла вӑрӑм утӑмсем туса утатчӗ. Пиртен кӗçӗнрех ача пурччӗ унӑн. Вӑл таçти хулана тухса кайса çухалчӗ. Пӗчченех пурӑнатчӗ Машук акка. Унӑн унӑшкине астумастӑп, вӑл вӑрçӑра вилнӗ тенине çеç илтнӗ.

Ача чухнех Çырма Машукӗ çухӑрни хӑлхана çурнӑ. Вӗсен умӗнчи тӑвайкки чӑнкӑрахчӗ те, эпир ярӑнма унталла ытларах туртӑнаттӑмӑр. Вӗрлӗк карта алӑкне уçса тухатчӗ те эй хӑвалатчӗ туйипе хӑмсарса. Аннене пӗррехинче, хамӑр умри шурӑ юр сахалланса юлнипе, вӗсем патнерех пир сартӑмӑр. Киле çитсен чӳречерен урамалла пӑхрӑм та, часрах аннене чӗнтӗм. Кӑмака умӗнче ухватпа чаваланакансӗр, вӑл хӑраса чупса пычӗ, Çырма Машукӗ мӗн хӑтланнине курнине сак çине лаках ларчӗ. Аннен шур çипне хутӑш тӗртнӗ пир тӑрӑхӗ çийӗн Çырма Машукӗ таплаттарса утать, туйипе пирӗн еннелле хӑмсарса тем палкать. Эпӗ аннене хӗрхенсе пуçӗнчеп ачашларӑм, вара çапла каларӑм: «Эп урӑх ӑна Машук акка тесе чӗнместӗп. Мӗншӗн ман путсӗре ырӑ ятпа хисеплемелле!»

Çакăн хыççăн вăл маншăн Çырма Машукĕ пулса юлчĕ.

Пĕр çул иитĕ уяр тăчĕ, кĕркунне те çумăр çумарĕ. Шыв çĕре тарчĕ, хĕл варринче çăлсем типрĕç. Пирĕн енче, ял хыçĕнче, çăлкуç чавса уçрĕç-ха, анчах черет нумай тăмаллаччĕ. Çырма Машукĕн çăлĕнче шыв туллиехчĕ. Çăлне аттесем майласа-юсаса панăччĕ-ха. Нуша килсе çапсан хупăнчĕ те ларчĕ çăл. Пура хуппине çăраççипех питĕрсе илнĕ Çырма Машукĕ. Тише тăрса юлнă çынсем услам çу, аш-пăш, тырă-çăнăх йăтма пуçларĕç. «Кил хушшинчи çăл шывĕ те мар-çке, урамри, çырмари çăлкуç шывĕ, ма çав таранччепех путсĕр пулмалла-ши, ма çынсене хĕрхенмелле мар-ши, виç ĕмĕр пурнап тет-ши çут тĕнчере»,— тесе витре тĕппе аш татăкки хурса пачĕ анне. Сăмах чĕнмесĕр илсе юлчĕ Çырма Машукĕ ăна.

Усал çын хăй пуçне хăй çухатать тесе ахальтенех каламан пуль çав. Çунашкапа пичке лартса шыв ăсма çитсен, ман çăнăха илекен пулмарĕ. Çырма Машукĕ çăла кайнă, сывмар выртать, терĕç. Те хăех асăрханайман, те такам тытса пенĕ тарăхнипе. вĕçне-хĕрне тухаймарĕç сăмахюмах çаптаракансем. Тем те пулма пултарнă, чăт-ха çавнашкал мăшкăла! Çавăн хыççăн Çырма Машукĕ чире кайрĕ. Çулла та пуçне ăшă тутăр çыхса кунтăк пек çӳретчĕ, кĕлеткинчен фуфайка, урипчен çăматă каймастчĕ. Хăй умĕнчи çерем çине выльăх-чĕрлĕх, хур-кăвакал ура ярса пустармастчĕ. Çырмара вĕçĕмсĕрех унăн хăрушла илтĕнекен хулăн сассиччĕ: «Çĕр çăтманскерсем, аçа çапса çунтарса яманскерсем, ăйăа чăмласа кайманскерсем!..»

Яла кашни килмессерен эпĕ çав çырма лаптăкĕнче мĕнле те пулин улшăну куратăм. Пĕррехинче сысна ушкăнне хăвалакан Çырма Машукĕ мана курнипе тăпах чарăнчĕ, куççульне шăла-шăла мăкăртатрĕ: «Çынсен телей пур çав, эс аçу-аннӳне кашни çул килсе савăнтаран. ман пĕртен-пĕр ывăла та çĕр çăтрĕ». Хĕрхенес килчĕ тăлăх хĕрарăма, анчах та вăл хыççăнах: «Эсир аçупа çав йăмрана юри ман еннелле чалăштарса лартнă»,— терĕ те, ăша тарăху тулчĕ. Тепрехинче ун патĕнче колхоз платникĕсем ĕçлетчĕç. «Аçа çапнипе çунса кайрĕ те хăрăк-харăк çурчĕ, юрать колхозĕ çĕннине лартса парать, лайăххăн пилĕк авса курман вăл уйра, халь пенсипе те пирĕнпе

танах илет, пур ырлăхне те курать. Тем пекех спаççипă каламалла ун патшалăха»,— терĕ анне, мана курнипе авăк шăртне сирсе ярса. Виççĕмĕш хутĕнче Çырма Машукĕ пӳрт умĕпчи çунăк каска çинче пуçне силлесе ларатчĕ. «Аййа чăмланă ăна, ытла ватти-вĕттине те, выльăх-чĕрлĕхе те ылханчĕ çав, ылханĕ хăйнех çитрĕ»,— илтрĕм аннерен.

Эп яла яланлăхах куçса килнĕ вăхăталла Çырма Машукĕ вилнĕ. Ун пирки атте çырса пĕлтернĕччĕ-ха. Симĕс тумпа капăрланакан çырмана чылайччен сăнаса тăтăм. Çырма Машукĕн килĕ выранĕнче тĕрлĕреп ăпăр-тапăр, пӳрт сакайĕн вырăнĕ, унран инçех мар тайăлнă çăл пури тăлăххăн курăнать. Килĕ умĕнчен те, хыçĕнчен те варсем тăвалла хăпараççĕ. Утрав çине тăрса юлнă пушă кил вырăнĕнче çăлкуç çеç чĕррĕн тапса тăрать, хăй вилĕмсĕрри çинчен пĕлтерсе тăп-тăрă имлĕ шыв юхтарать. Кӳленчĕке пухăннă шывĕ аякран çĕр куçĕ йăлкăшнăпах туйăнать. Çав чĕрĕ хăват çумĕнче çут тĕпчери усăсăр вилĕ чун ял халăхĕнчен уйрăлса тунсăх тĕтринче кураймаплăх сывлăшĕпе сывласа пурăнни маншăн ытла та тĕлĕнмелле пек. Ялан унтан сивĕ сывлăш капланса тăратчĕ. Халĕ, çур хĕвелĕ тӳперен йăл кулса шартарнă самантра, çырмаран хăпаракан лĕп сывлăш пите çепĕççĕн ачашларĕ. Эпĕ вара хул çине пусма çакрăм та пуртăпа пăчкă йатса урама тухрăм. Чӳречерен мана асăрханă атте те çырмана анчĕ.

— Çав çырма усалне пулах çĕре сурапларăмăр, мĕн сарлакăш пулса кайрĕç варсем. Халĕ те кая мар, лартар ик айккине йăмра. Пирĕнех чармалла, пирĕпех сиплемелле сурана. Унсăрăн тĕнче кулли пулăпăр, вилсен те çĕр умĕнче айăплă пулса юлăпăр,— тесе атте кĕреçипе шăтăк чавма пуçларĕ.

«Çĕр çине пурте усă тума çуралмаççĕ иккеп, çавпашкал çынсеп суккăрлăхне пула шырлансем, Çырма Машукĕп килне утрав çине тăратса хăварнă пек, пурнăçри телее те тăлăха тăратса хăварма пултараççĕ. Такама шанмалла мар, хамăрăнах тăрăшмалла, вĕсемшĕн те пирĕнех ĕçлемелле»,— тесе шухăшласа эпĕ йăмра тăрпе улăхрăм.

# Пирĕн Петюка курман-и?

Ял урамĕсемпе çырмисем те эпир çамрăк чухнехи мар халĕ. Мускавран е Шупашкартан çăмăл автомашинăна асфальт сарнă çул тăрăх клуб умне ярлаттарса çитсен те, йĕпе-сапа вăхăтĕнче, çуркунне-кĕркунне килӳ патне атă-сăр çитейместĕн. Мăн урапаллă тракторсем чаваласа хăварнă йĕрсем ӳт çинчи тарăн суран пек туйăнаççĕ. Пирĕн умри çырмара та тин çеç сăрлама вĕренекен ача хура кăранташпа туртса тухнă пек курăнса выртаççĕ çав йĕрсем. Пĕр çĕртен çӳресе арлан тăпри е тăм кăларнă та юнашарах çĕнĕ йĕр тунă. Киввисем, шыв çурнипе, тарăнланса, анлăланса пыраççĕ. Тепĕр темиçе çултан урам варрипе тарăн вар пулса каять. Пирĕн урамра çеç-и?! Кайлах пурăнсан, Чеченкаса Тарăнвар ят пама та кĕçех вăхăт çитет.

— Тăпра та тултарса пăхатăп, çапăпа та картлатăп, анчах пĕччен çĕнтерейместĕп, хавшарăм, тăхăрвунна пусрăм-çке, ывлăм,— йывăррăн сывла-сывла кулянать атте.— Кӳршипех тракторист та, кашни кунне пĕрре килсе кайсан та вуппилĕк йĕр юлать. Пĕрле юсар-ха тесе хăйсене те чĕнсе пăхатăп, шантараççĕ сăмаххипе, кайран ĕçре те ĕçкĕре манаççĕ пуль çав. Ĕлĕкхи мар халь, ывлăм. Çын чунĕ-чĕрни улшăнчĕ. Ял тасалăхĕ, тирпей-илемĕ темшĕн çамрăксене хумхантармасть. Ытларах вăрăм укçашăн, хăйсен хырăмĕшĕн çунаççĕ. Кам айăплă уншăн? Хамăрах. Пĕчĕккĕн, майĕпен вĕрентсе, ăс парса пыраймастпăр ачасене. Ытла ирĕке яратпăр. Тирпейлĕхре ӳсекеп ача яланах тирпейлĕ пулать, çăрăлчăк ăшĕнче — çăрăлчăк. Чечен-лĕх çухалать.

Аттене эпĕ ăнланатăп. Вĕсем вăхăтĕнче, чăнах та, ял çынни ялшăн, ял илемĕшĕн, ял культуришĕн, ял малашлăхĕшĕн чуппе напă. Мĕн ачаран асра юлнă сип-симĕс курăклă, йăмраллă таса урамсем, çырмасенчи кутран-кут сарăлса выртакан пулăллă пĕвесем. Çурхи шыв аташса илсе кайнă пĕвесене кĕреçепе-наçилккапах туххăмра пĕвелесе пăрахнă. Çырмара, урамра шырлан тавраш сарăлма паман. Кил-çурт умĕнче çӳп-çап тăратман, çулăк-

па, шапăрпа пермай шăлса тăнă. Халĕ пӳрт умĕнчи шырланра хăшĕсен трактор урапинчен пуçласа çĕтĕк-çатăк тумтир таранах сапăнса выртать. Кĕпепсене те ун чухне çиппĕнчех юсаса тăнă. Пирĕн умра та эреш карлăклă кĕпер пурччĕ. Вăл майĕпен юхăнса, çĕрсе пĕтрĕ, айккисене шыв çирĕ. Унрап аяларах эпир икĕ енне йывăç лартса сыхласа хăварнă ансăртарах вар урлă пăрахса янă çурма пĕрене татăкĕсем пĕртте кĕпер пек мар. Кашни урапа, автомашина-трактор каçса каймассерен, лайăх çапса хытарманскерсем, аякри аслати сасси пек халтăртатса илеççĕ.

Ватти-вĕтти хаваслансах тухатчĕ çак ĕçе. Никам та бригадир хистесе хăваласса кĕтмен. Чуп хавалĕпе хăйшĕн, халăхшăн, ялшăн тăрăшнă нимере. Бригадирĕ епле хаваслантарма, чуна çĕклеме пултаратчĕ тата! Турикасри Урипен кăкăртан тухакан ăшă та илемлĕ, чунтуртăмлă сăмахĕсене пирĕн те, ачасен, илтес килетчĕ. Шӳтлеме, юрă шăратма хавасчĕ Урипе инке.

Урам алăкне хупса çырманалла тепĕр хут пăхса илтĕм. Лупамра темле хĕрарăма асăрхарăм. Вăл темшĕн кĕперпе мар, тӳрĕрен, сысна ферминчен навус шывĕ юхнипе тулса ларнă çăрăлчăк урлă ашса каçрĕ те тăвалла хăпарма пуçларĕ. Çывхарнă май эпĕ ăна чарăнсах сăнарăм. Питĕ кăсăклантарса ячĕ ку этем хăтланăвĕ. Аркине тĕрленĕ, чĕнтĕр тытнă сарлака çапăллă шурă пир кĕпи пахчари катемин çипе уртса янă пек çакăнса тăрать. Çӳçне усса янă, чĕркуççирен аяларах шурă йĕм пĕççисем курăнаççĕ. Çаруран. Йăлт лапра ăшĕнче. Пӳрни тăррисенче кукăрăлса ларнă вăрăм чĕрнесем. Хуралса хытнă пит шăммисем малалла кăнтарса тухса тăраççĕ. Вĕсем хушшинче шĕвĕрĕлсе юлнă каçăртарах сăмса ӳкерме вĕренекен пĕр-пĕр ача сăрмакласа хунă пек вырансăр курăнать. Шăлĕ-çăварĕ çеç пĕчĕкленмен, çунса ĕнсе ларнă тутисем усăлса-хупăнса тем пуплеççĕ. Хам ума çитсе чарăнсан тин ăнлантăм вăл мĕн калапине: «Пири Петюка курман-и? Пири Петюка курман-и?»

Çак сăмахсене илтнипе аран-аран палласа илтĕм хăрушă кĕлеткене. Ара, Петрав Петюкĕн арăмĕ Урипе инке вĕт ку? Нихçан вăйă-кулăран, юрă-такмакран татăлман

пирĕн бригадир пулнă хĕрарăм. Вара эпĕ хĕпĕртенипе часран алла тăсса патăм: «Салам пултăр сире, Урине инке! Мĕнле чунтаратăр? Хăçантанпа курман...» Ак тамаша! Урине инкен скелет пек тăрса юлнă кĕлетки юпа пек хытрĕ, ничĕ нимĕн чухлĕ те улшăнмарĕ, шалалла путса кĕнĕ çырмари çăлкуç пек куçĕнче те шăрçа вылямарĕ, каллех кулнă пекки турĕ те хăйĕн юррине малалла тăсрĕ: «Пири Петюка курман-и?..» Тăчĕ-тăчĕ те хускалмасăр ман умра. пăрăнса малалла тăнкăлтаттарчĕ. Кăкăртан тухакан хăрăлтирех сасă хăлхара янăраса юлчĕ: «Пири Петюка курман-и?» Çав сасă çумне пуç куптăкĕн тĕпĕнче пытанса упраннă тахçанхи сасă хутшăнчĕ:

Çут тĕнчере иккен мĕн хаклă? —
Ырлăхпа сывлăх пит хаклă.

Урине инке сасси вĕт ку! Çав хитре, йăрă, вĕçен кайăк сассиллĕ бригадир юрлатчĕ ял нимине пухăннă çынсене пĕве тума хавхалантарса. Унта кăна мар, уйра та, йĕтем çинче те, ĕçкĕ-çикĕре те илтнĕ эпĕ Урине инке çак юрра юрланине: «Ырлăхпа сывлăх пит хаклă». Мĕншĕн вăл çак юлашки сăмахсене темиçе хут çавăрса шăрантарнине ун чухне ăнланма пултарайман-ха. Малтан ача шухăшĕ пуçра явăннă, каярахпа, каччă пӳне çитсен, юрату хĕлхемĕпе çунса ăна-кăна асăрхама пăрахнă.

Астăватăп, ял тăрăх хурлăхлă салтак юрри юрласа çӳренĕ кунсенче пире Урине инке те хăйсен килне кĕртсе каларчĕ. Унăн ачи, манран кĕçĕнрех Йăванĕ, пурччĕ. Таса, хитре, сăмах-юмах çаптарма ăста ывăл пăхса ӳстеретчĕ. Йăван шкултан тин çеç вĕренсе тухнăччĕ те, çар училищине кайма хатĕрленетчĕ. Урине инке тур кĕтессине çурта çутса кĕрекене кĕртсе лартрĕ пире, сăра ĕçтернĕ хыççăн, арчаран пир татăкĕ кăларса ман хулпуççи урлă парне çакрĕ. унтан, тем аса илчĕ те, сĕтел сунтăхне уçса, типтерлĕ чăрканă чăмăрккана салтрĕ, унти йăлтăркка япалана парне çумне тытрĕ. Аялалла пăхрăм та палласа илтĕм. Ара, Хĕрлĕ Ялав орденĕ-çке ку! Тахçанахчĕ-ха вăл, пĕррехинче Йăван кăтартнăччĕ ăпа пире, ачасене. Атте ячĕпе фронтран ярса панăскер, тетчĕ. Эпир Петюк пичче

наградине тĕлĕнсе, ăмсанса, çавăркала-çавăркала пăхнăччĕ. «Пири Петюк пек паттăр пул. Пири Петюк пек... Вăрçă мана çак Ялава парнелерĕ. Эпĕ сана çав хаклă парнепе пиллесе салтакра хамăр ырлăхшăн Тăван çĕршыва сыхлама, каялла чипер таврăнма ырă сунатăп»,— Урине инкен чăп-чăмăр тулли питçăмартийĕсем çине юхса аннă тăварлă шăрçасем халĕ те куç умĕнче йăлтăртатса илчĕç. Çамрăк пуçăн тăлăха тăрса юлнă хĕрарăмшăн Хĕрлĕ Ялав орденĕ упăшкин вилĕмсĕр сăнарне куçнине, уншăн орден арçын хăюлăхĕн, этем паттăрлăхĕн символĕ пулса юлнине, яланах чĕрĕ хăват парса тăнине эпĕ çав самантра туйма пултарайман, каярахпа тин ăнланса илтĕм.

Урине инкене пуриншĕн те тав туса, салтак юрри юрласа тухса кайрăмăр. Ачи ун çар училищине кĕреймен, ӳпки начар пирки комисси витĕр тухайман, колхозах ĕçлеме юлнă. Ялти ăста платник халĕ вăл. Çырма тăрăх хăпарнă май тури кĕпер тĕлĕнче шăпах тĕл пултăм ăна.

— Ăнсăртран аннене курмарăн-и эс? — ыйтрĕ вăл тӳрех хыпăнчăклăн.

— Ак анчах хамăр умра тĕл пултăм, манпа темшĕн калаçмарĕ те вăл, хыçалалла уттарчĕ. Итле-ха, мĕн пулнă Урине инкене?

Йăван чарăнса тăмарĕ, аллине çеç сулчĕ:

— Каçар эс мана, халь васкатăп, кайран,— терĕ.

Кунĕпе пуçран тухма пĕлмерĕ ку тĕлпулу. Куç умĕнчен каймарĕ Урине инкен хăрушланнă сăнĕ-пуçĕ. Киле килсен, аннепе калаçса лартăмăр.

— Вăрçăччен эпир хамăр та хĕрĕхри çынсем кăна пулнă та, хальхи пек сăнсăрланса ларман, ватăласси çинчен шутламан та,— пĕркеленсе ларнă, хытнă питçăмартийĕсене сăтăрса илчĕ анне.— Уринесем вара вĕсем эп кунта каччă килнĕ çул çуралнăскерсем, куç умĕнче ӳссе хĕр пулчĕç, каччă кайрĕç. Петрав Петюкĕ хăй те хитрескерччĕ те, пит чечен арçыннччĕ те, ял чиперккинех илчĕ çав. Урине инкӳ ĕнтĕ халь утмăл урлă каçнă. Хĕр чухне пирĕн пата яланах лармa çӳретчĕ. Эс вĕсене астумастăн. Урине юрлама-ташлама юрататчĕ. Хамăр кĕлет умне вăййа тухакан çамрăк яш-кĕрĕм хушшинче упăп уçă сасси янках каятчĕ. Петюкĕ купăс калатчĕ. Чӳречерен пăхса выртнă май,

хамăр ялти вăйăсем аса килетчĕç. Туйне те чĕнчĕç. Аçупа пĕрлех кайрăмăр. Çимĕкре пĕрлешрĕç. Вăрçă тухсан, Петюка салтака илчĕç. Малтан Петюксем Шупашкар енче пурăннă, самăй вăрçине ăсатнă чухне, çĕртме уйăхĕнче, яла таврăннă терĕç. Урине вăл вăхăтра килте пулман, района тырăпа кайнă. Салтакăн хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн çулĕ пуль çав, кĕтсе илеймен, арăмĕ таврăннă çĕре тухса кайма ĕлкĕрнĕ терĕç. Тĕл пулайман вĕсем нĕрне-пĕри. Упăшки яла килнине пĕлнĕ Урине хирĕç пулакан кашни çынран ыйтатчĕ: «Пирн Петюка курман-и?» Эпĕ правлени ларăвĕнчен таврăнаттăмччĕ те, манран та çаплах ыйтрĕ. Халĕ те хĕрхенес килет, икĕ уйăх пурăнкалайрĕç-ши е пурăнаймарĕç вĕсем туй хыççăн... Мĕн чухлĕ çыннăн телейне, ырлăхне, сывлăхне, пурнăçне çирĕ ку вăрçă. Аса та илес килмест те вăл çулсене, анчах...

Атте пӳрте кĕнипе сăмах татăлчĕ. Вăл кăмака умне кĕрсе витререн шыв ĕçрĕ те пире чăрмантармарĕ, тăмасăрах каялла тухрĕ. Анне вара малалла каларĕ:

— Вăрçă тухни çулталăк çитиччен кăшт маларах, çуркунне, шăпах çак вăхăталла, Урине çăмăлланчĕ. Хăлхана пырса кĕнĕччĕ-ха Петрав Петюкĕн матки ача тупă хыççăн ухмаха тухнă тени. Ĕненмесĕр килне кайса пăхрăм. Чăнахах иккен. Малтан чиперех калаçнă пек, унтан тем амакĕ пулать, куçне-пуçне чарса пăрахать те: «Пирн Петюка курман-и?» — тесе ыйтать. Пĕр вуннă ыйтрĕ пуль. Амăшĕсем килтех сиплекелерĕç, ачине чĕчĕ пăрахтарсан, пульницара выртса тухрĕ. Сывалнăччĕ, чиперех çӳретчĕ, бригадира лартрĕç. Ун чухнехине хăвах астăватăн. Эх, мĕнле хĕрӳ, илемлĕ хĕрарăмччĕ. Ял касакĕсем хăпма пĕлместчĕç унран. Усал калама та, ятлама та пĕлмелле мар çамрăк кĕлеткепе пĕччен тăрса юлнăскере. Шăпи çавнашкал пӳрнĕ ĕнтĕ. Ырлăх-мĕнĕ вĕсемшĕн вăрçă вутĕнче çунпă. Вăрçă кĕлĕ тăрăх ута-ута тем тĕрлĕ нушине те, темле хăрушлăхне те курчĕç пуль тăлăх арăмсем. Мĕнле чăтрĕç-ши тулькки вĕсен чунĕсем. Çаплах ватта çитиччен айланкаласа пурăнаççĕ. Урине те, авă... Ачи çураличчен шăпах вилĕм хучĕ вĕçсе килчĕ-çке анăç енчен... Çав хĕрлĕ ялав ӳкерпĕ орденне те кайрантарарах тин яла ярса панă вĕсене. Шеремет Петюкĕ, çакса та кураймаи, тет, вăл ăна,

вилнĕ хыççăн панăскерпе. Халь орденне Урине çакса ярать. Йăванĕ вĕçертсе хурать, амăшĕ каллех çакать шур кĕпи çине. Курмарăн-и паçăр?

— Асăрхамарăм.

— Апла Йăванĕ вĕçертсе хунă пуль-ха. Антрамалла, тет, çав ордена пытарса хурсанах ӳлесе йерет, тет, эп ăна çухатасран хăратăп, тет. Эс шахтăра ĕçленĕ чухне аçу та çырса пĕлтернĕччĕ сана, те пĕлтерменччĕ, астумастăп. сăмах пуçарнă май. халь те пулин калам-ха. Эх, чăтăмлăх тени вăл, ывлăм, пурин те пĕр пек мар çав, чăтăмлăх çиппине ăна çутçанталăк пуриппе те пĕр япаларан туман пулас çав, камăн çирĕп вăл, камăн хавшак. камăн — çĕрĕк те. Хăшĕсем, чăтăмлăх питлĕхĕпе хупланса, хăйсем çывăхне усал-тĕселе, ултав-суйкава ямаççĕ, теприсем тумтирне йӳле ярса кĕлеткине уçса хураççĕ. Унашкисенчен пĕччен тăрса юлнă хĕрарăмсенчен чăтăмлăх чăтлăхĕнче хĕвелсĕр-çăлтăрсăр пусăрăнса пурăнакансене миçе çынна лайăх пĕлетĕп. Ачи-пăчин, мăнукĕсен çутипе киленсе пурнĕрех савăнăçла туяççĕ вĕсем. Хамăр кӳршĕри Верук акунах илĕпĕр, сăмахран... Хăшĕсем ют арçынсемпе ача туса лăпланчĕç, хăшĕсем... Эх, Урине, Урине... Арçынсемпе пурăннăшăн ăпа ял халăхĕ каçарать, анчах «симĕс çĕлене» явăçса кайнăшăн, çук, каçармасть. Энĕ те уншăн ăна ятламаллипех ятлатăп. Вĕрентсе те, ӳкĕтлесе те пăхнă. Итлемерĕ. ĕçке ярăнчĕ те пĕрре бригадирта чухне, такки чарăнаймарĕ, килĕрен киле çӳресе, çын вырăнĕсене шӳтере-шӳтере йăлăхтарса-тарăхтарсах çитерчĕ. Урă кун кураймастчĕ. Çутă хĕвел те майĕпенех сӳнчĕ, кĕлетки те, сăнĕ-пуçĕ те типрĕ, этем мĕлки вырăнне çеç тăрса юлчĕ ăсран тайăлнă хыççăн. Çамрăклах ухмах чирĕпе паллашса курнăскерен малашлăха пăхмалла пулнă та çав, вăл, пур, эрех-сăра пичкипчен сăрхăнтарнă наркăмăша çăтрĕ те çăтрĕ, хăйпе хăех пĕтерчĕ. Кам айăплă-ха? Хăй чăтăмлăрах пулпă пулсанах... Авă, Верук аку юман каски пек. епле таплаттарса иртсе кайрĕ, çитмĕл пиллĕкре халь вăл. Урипепе танлаштарсан... Çирĕплĕх, чăтăмлăхах кирлĕ çынна. Мупчала пек ленчешке пикама та пумай усă кӳреймест. Пурнăç кăмăрĕ, пурнăç кулли пулса юлать.

Анне кун пирки меншӗн питӗ тӑрӑшса нумай калаҫнине ӑнланатӑп эпӗ. Пире вӑл хӑй пурнӑҫӗ тӑршшипе ҫирӗплӗхе, тасалӑха, чыслӑха вӗрентсе ырать-ҫке.

Ял пуҫӗнче, масар ҫумӗнче, Аслӑ вӑрҫӑра пуҫӗсене хунӑ ентешсене сума суса тӗлӗнмелле туртӑм вӑйлӗ, курӑмлӑ палӑк лартнӑ пирӗн колхозра. Ҫентерӳ кунӗнче ҫуллен унта пӗтӗм халӑх пуханать. Кӑҫал та ҫанталӑкӗ калаҫса татӑлнӑ пекех илемлӗ килчӗ. Хӗвелӗ те уява пухӑннисене уйрӑмах ӑшшӑн пӑхса саламлать тейӗн. Ҫӳлӗ палӑк умне фронтовиксем йӗркипе тӑрса тухнӑ. Митинг пуҫланман-ха. Военкоматран килнӗ подполковник вӗсенчен уйрӑлса картлашка тӑрӑх чупса анчӗ те, пирӗнтен пиҫех мар тӑракан Урине кинене ҫавӑтса хӑйне уттарчӗ, фронтовиксем ҫумне ҫитерсе тӑратрӗ. Никам та чармарӗ, пӗр сӑмах та чӗнмерӗ ӑна. Кӑкӑр тулли орден-медаль ҫакнӑ, сывӑ, чирлӗ, аманнӑ ватӑ салтаксен ретӗнче, подполковникпа юнашар, Урине кинке те пӗр ҫӗрелле кӑпп пӑхса хытнӑ пек тӑрать. Вӑл шурӑ пир кӗпепе, ҫара пуҫӑн, урине калуш тӑхӑннӑ, кӑкӑрӗ ҫинче кӗпе ҫине тирсе хунӑ Хӗрлӗ Ялав орденӗ хӗвел шевлипе йӑмӑхать. Нихҫан курман-илтмен Петрав Петюкӗ тӑнӑ пек те, пӗве пӗвелекенсене хавхалантарса юрӑ юрлакан чипер, чечек пек чечен илӗртӳллӗ бригадир тӑнӑ пек те туйӑнать. Куҫа хупса уҫатӑп та, каллех кӗрхи тинӗ курӑк пек хыткан пӳ-силлӗ, хуралса пӗрсӗрленнӗ пит-куҫлӑ, шурӑ тумлӑ мӗлке тухса тӑрать.

Ҫӗнтерӳ кунӗ хӑй тӗллӗнех майӗпен асӑну еппе сулӑнать. Хурлӑхпа терт, савӑнӑҫпа хӑпартлану самантне ҫӗр ҫынни масар ҫинче малалла тӑсать. Хаяр вӑрҫӑран киле таврӑнаймап ҫывӑх ҫыннисене кашни ҫемье ваттисен йӑлипе асӑнать.

Эпир те сип-симӗс йывӑҫсем айне пытнӑ сӑвапӑ вырӑнта хуйхӑллӑ калаҫурӑччӗ. Кӗтмен-туман ҫӗртен пирӗн пата Урине инке кӑштӑртатса ҫитрӗ. Путса кӗнӗ куҫӗсем сиксе тухасла йӑлкӑшаҫҫӗ. Типсе кушӑркапӑ тутисем пӑшӑлтатаҫҫӗ: «Пири Петюка курман-и?» Сӑра куркине пушатрӗ те вӑл пуҫӗне сӗлтрӗ, вара вил тӑприсем хушшипе мӗскӗннӗн сӗнкӗлтетрӗ. Кӑкӑртан тухакан хӑрӑлтирех сасси ҫак самантра масара ҫурасла янраттарса янӑп илтӗнчӗ: «Пири Петюка курман-и?!»

# Нимĕç кин

Иксĕр аллă киллĕ Чечепкасра унччен чăвашсăр пуçне урăх наци çынни пурăнман. Камăн та пулин ачи-пăчи, аякка тухса кайса, такампа та пĕрлешнĕ пуль, анчах яла таврăнса ют халăх хĕрĕ-ывăлĕпе тĕпленсе йăва çавăрман. Çирĕм пилĕк çул каялла вара ял историйĕнче пулманни пулчĕ. Чечепкас йышне нимĕç хĕрĕ хушăнчĕ: Лаура. Пĕрле вĕреннĕ юлташăм Элекçи Казахстанран çаклатса килчĕ чиперккескерне.

Акă эпĕ, лавккана кайма тухнăскер, шăпах ăна хирĕç пыратăп. Элекçи арăмĕ учительница, ачасене нимĕç, акăлчан, хушăран, учитель пулман вăхăтра, чăваш чĕлхи те вĕрентет. Лаура Фирсовна качча тухнă çулсенчи кĕлеткине, сăнне-питне нумаях та çухатман. Йăрăс пӳллĕскер, йĕтĕн пек сарă çӳçлĕскер, таса, тӳпе пек кăвак куçлăскер, çамрăклăх уттипеваскавлăн утать. Аллинче — ялан хи сăран портфель. Пĕр харăсах сывлăх сунтăмăр та эпир, иксĕмĕр те сисмесĕрех чăвашла калаçса кайрăмăр. Лаура Фирсовна чăвашла яка, тап-таса, уçăмлă калаçать. Хамăр чăвашсен хăшин-пĕрин упран пумай вĕренмелле-ха. Чĕрĕк сехет хушшинче те уп çăварĕнчен пĕр вырăсла е лӳчĕркеннĕ хутăшла сăмах тухмарĕ.

— Элекçи паян ерçмест-ха, Туркай уйĕнче кăшман акса пĕтерессшĕн, ыран пырăр арăмупа иксĕр кăшт калаçса лармашкăн, вырсарникун эпĕ хам та ирĕклĕрех, ан улталăр, çирĕп йĕркене пăхăнаканскерсем-çке эпир, юратмастпăр вăхăтра çитмесен,— тесе уйрăлчĕ Лаура Фирсовна.

Шкултан таврăнакан шавлă ачасен ушкăнĕпе вăл малалла утрĕ. Эпĕ вара çула май иртнине аса илтĕм. Чĕрĕк ĕмĕр хушшинче чăвашланма ĕлкĕрнĕ нимĕç хĕрĕ ун чухне пирĕн халăх çиичен хăйĕн юратнă çынни, Элекçи тракторист, урлă кăна кăштах ăнкарма пуçланă-ха. Ун чухне вăл Лаура Фирсовна та мар, Лаура Фрицевна пулнă...

Пĕринче курма килнĕччĕ те, колхоз садĕнчи пĕверен шыва кĕрсе таврăнатăп. Ялти почтальон курчĕ те: «Эс

Целина Элекҫисем патӗнченех иртетӗн, кӗртсе пар-ха ашшӗсене ҫак ҫырӑва. Хам эп паян унталла ҫитейместӗп, ӑш ыратать»,— терӗ йӑлӑнсах. Маншӑн мӗн, йывӑр-им, ухутах килӗшрӗм, вӗсем патне кайма ахаль те хатӗрленеттӗм-ха, юлташ ашшӗ-амӑшӗпе чунтан калаҫмасӑр нихҫан та отпуска вӗҫлемен, халӗ сӑлтавӗ ытларах та хутшӑнчӗ.

Элекҫие ял калмӑкӗсем тупса пачӗҫ ку хушамата. Салтакран вӑл та, ман пекех, тӳрех киле таврӑнмарӗ, комсомол путевкипе романтика хыҫҫӑн хӑваларӗ, Казахстана кайрӗ, уҫнӑ ҫерем ҫинче тырӑ ӳстерме шутларӗ. Ҫав вӑхӑтрапа Целина Элекҫийӗ ӗнтӗ вӑл.

Целина Элекҫисем яланах хаяр йытӑ усратчӗҫ. Урам алӑкне уҫнӑ-уҫман мунча ҫумӗнчи хӳтлӗхрен пӑру пек сӑмламас йытӑ сиксе тухса ҫисе ярасла вӗрме пуҫларӗ. Пӳртрен кӑштӑртатса Элекҫи ашшӗ Митрахван пичи тухрӗ. Аттерен виҫӗ ҫул кӗҫӗнрехчӗ те вӑл, ҫавӑнпа ӑна, ватӑ пулин те, пурпӗрех пичи тенӗ.

— Ях! Пулать сапа, хурамккана! — ал туйине ҫӗклесе хӑмсарчӗ те вӑл, йытӑ нӑйкӑша-нӑйкӑша хӑй шӑтӑкне кӗрсе ҫухалчӗ, унтан пуҫне кӑларса ҫӑварне карчӗ, чӗлхине йӗпӗлтеттерсе илчӗ.— Атя, ирт, ирт, ан хӑра унран, усалтан, пӳрте кӗрер.

Хам астума пуҫланӑранпах Митрахван пичи маншӑн уксакураллӑ, чӑлах, туяпа кӑштӑртатса ҫӳрекен сусӑрланӑ этем. Энӗ ӑна, эпӗ кӑна-и, ялти, таврари пин-пин ҫын ҫав хурмӑллӑ курнӑ ӗнтӗ. Маншӑн та, вӗсемпӗн те вӑл — хӗрхенӳллӗ, асран тухми лутӑркапнӑ этем сӑнарӗ. Аманиччен мӗнлерех пулнӑ-ши тесе шухӑшлакан та сахалтарах тупӑннӑ пуль.

Митрахван пичи туйине вӗҫертмесӗрех алӑ пачӗ те тепӗр хут йытти енне хаяр куҫне ывӑтрӗ, эп умри кӗсьерен кӑларпӑ конверта курсан, хӗпӗртӳллӗн: «Ях, Элекҫи саламӗ-и?» тесе хыпӑнса ӳкрӗ. Пӳрт умӗнчи пусма картлашкипе хуллен, йывӑррӑн, туяпа шӑк-шак тутаркаласа хӑпартӑмӑр та уҫӑ алӑкран пӳрте кӗтӗмӗр. Шалтан Укахви инке сасси илтӗнчӗ:

— Элекҫи ҫырӑвӗ пур-им? Хӑвӑртрах вуласа парӑр-ха. Мӗнле пурӑнкалать-ши вӑл унта? Хӑҫан килес тет-ши



34091 чув

пире пулăшма? Аппĕ пĕр уксах-чăлах, хам аран-аран çўрекелетĕп...

Укахви инке тĕпел кукринчен тухса мана алă пырса пачĕ, сывлăхна, пурнăçна кăсăкланчĕ. Вăл вăхăтра Митрахван пичи конверта янаххипе сĕтел çине хĕстерсе уçрĕ те вулама пуçларĕ.

— Саспа вула-ха эс, ватти, сан пата анчах çырман пуль. Çапла çав вăл хăш чух пĕлтермест вара пурин çинчен те, кулянтарас килмест, сана пустуйран, тет. Вула, вула саспах, хăçантанпа илмен çыру таврашĕ,— васкатрĕ ăна карчăкки.

Митрахван пичи сасартăк пичĕ-куçĕ çуталса кайрĕ, çыру тытнă сылтăм аллипе хăлаçланса илчĕ те вăл саралнă сайра шăлĕсене кăтартса хăлтăр-хăлтăр кулса ячĕ.

— Ташла, Укахви! Ывăлу авланать. Туя чĕнет.

— Туя?!.— кĕтмен хыпар савăнтарса пăрахнипе хумханса ўкнĕ ватă хĕрарăм пĕр хушă чĕнмесĕр тăчĕ, унтан упăшки аллинчи çырăва туртса илсе мана тыттарчĕ.— Тинех авланать апла, вула-ха эс малалла. Кама илет-ши? Чăвашах-ши?

Эпĕ çырăва кил хуçинех тавăрса патăм. Митрахван пичче, арăмĕ çине вăкăрла сивĕ куçпа пăхса илнĕ хыççăн, малалла вуларĕ:

— «Юратнă атте-анне, эпĕ ĕнтĕ сиртеп ыйтмасăрах авланас шухăш тытрăм. Хамăр совхоз инженерĕн хĕрĕпе паллашрăм та, пĕрлешес терĕмĕр. Лаура ятлăскер. Манна тĕнче хĕрне те кайма хатĕр. Яла куçса килес-тăвас пулсан, пĕрле пыма хирĕçлеместĕп, тет. Чупăм ман хамăр Чеченкасах туртать, тепĕртак ĕçлесен кунта, кăштах ура çине тăрсан, сире пăхма таврăнатпăр. Сирĕн ахаль кин те мар, нимĕç кин пулать. Эпĕ Лаурăна чăвашла вĕрентме пуçларăм...

— Нимĕç кин?!.— Укахви инке сасартăк шурса, кăвакарса кайрĕ. Сулăна пуçланăскерне тытма ĕлкĕртĕм те сак çине хуллен лартрăм. Вăл антăранипе кăкăрне хыпашларĕ, ахлатса сывлăш çавăрса илчĕ те ĕнепмесĕр тепĕр хут ыйтрĕ:— Нимĕç кин тепине тĕрĕсех вуларăн-и? Йăнăшмарăн-и?

Арăмĕп шăв-шавĕпе хăлтăкланнă Митрахван пичи хут

татакккипе уп сăмсп умне тытсах вуларĕ:

— Ях, сана, шанмаспскерне! Ман сапни пек мар, куç витĕр курать. Ак, итле: «Лаура Фрицевна халь чăвашла «атте», «аппе», «салам», «тавтапуç», «яшка», «çăкăр», «тав сана» тата ытти сăмахсене те аванах калама пĕлет. Аппĕ, Фриц...»

— Фриц?!.— ӳлесех йĕрсе ячĕ Укахви инке.— Нимĕçсемпе тăванлашмалла пулать-ши вара пирĕн? Эй, çӳлти турă, çăлах пире усал-тĕселтен, Хрицсемпе юнашар пĕр кĕрекере ытакланса лармалла-и вара? Нимĕç хĕрне кин тесе чĕнмелле-и? Хриц ачине хам ача вырăнне хурса кăкăр çумне хĕстерсе ыталамалла-и? Эй, тура... Ак ман хрицсем парнеленĕ катемпи çумрах. Ун çине кашни пăхмассерен тарăху лăкăртатса вĕрет чĕрере. Тылă витĕр кăларнă пек лăсканă вĕт ăна, урп-алли çук, кĕлеткинче суран йĕррисĕр таса вырăн çук. Кунти тылĕнче хамăр тыллантăмăр. Сăр хĕрринче çĕр чавса шăнса пăсăлпнех çапса хуçрĕ хама та. Хвашист йыттипе унтан малалла ирттерместпĕр тесе эпир те кунĕн-çĕрĕн чаваланнă. Юрать, ямарĕç ăна кунталла. Юрать, ура ярса пустармарĕç чăваш çĕрĕ çине. Халь, халь каллех чупра çĕнĕрен вут чĕртсе ячĕ ку Элекçи. Эй, турă усала сиртĕрех пирĕн умран. Эй, турă... Çук, кĕртмесп нимĕç таврашне киле. Ура ярса пустармасп. Фриц... Хриц...

Упăшки кăштăртатса чӳрече патнелле утса кайрĕ те çырупе тур кĕтессине кармашкаласа хучĕ, вара лăпкăн каларĕ:

— Анлан-ха эс, Укахви, Фриц вăл пирĕнпи пек çын ячех. Лаурăн ашшĕ Фриц Генрихович. Пирĕн кин Лаура Фрицевна пулать. Вăрçăра нимĕçе усаллатса пĕрре «фриц» тесе калама пуçларĕç те, вăл пĕтĕмĕшле вилĕм кӳрекен тăшман вырăнне тăрса юлчĕ. Нимĕç те вăл кашниех пирĕншĕн тăшман пулман. Антифашистсем пурччĕ. Фашист вара... Вăл сувсем урăхла усал. Фриц ят килĕшмест пулсан, ара, атя кине Лаура Фирсовна тейĕпĕр...

Укахви инке упăшкине каласа пĕтерме памарĕ, куçне шăла-шăла хаяррăн тавăрчĕ:

— Эх, сана, ухмах пуçа, хăй аран сĕнкĕлтетсе çӳрет, çав хвашист ахрачĕсене пулах ĕмĕр нуша курать, анчах

çав хриц аçтахисене çаплах хӳтĕлет.

Манăн та Укахви инкене ăнлантарса кăмăлне çавăрса ямашкăн пулăшас килчĕ, вара эпĕ ăна Германи патшалăхĕ, нимĕçсем Раççее хăçан йышлăн пурăнма куçни. Атăл тăрăхĕнче те иртнĕ вăрçăччен нимĕçсен автономийĕ пулни, халĕ те хамăр çĕршывра икĕ миллиона яхăн нимĕç пурри, вĕсем мĕнпур совет халăхĕпе пĕрле туслăн килĕштерсе ĕçлесе пурăнни, нимĕç ачисемпе салтакра та пĕрле пулни çинчен кĕскен каласа патăм. Укахви инке итлесе ларчĕ-ларчĕ те алă çеç сулчĕ:

— Пулĕ, эс калани те тĕрĕсех пулĕ. Патшалăхĕ тем пекех пысăк та, нимĕçĕ кăна мар, туркка-пасурманĕ те, яппун-сапунĕ те, италийĕ-хыпалийĕ те, такамĕ-шаккăлĕ те йăва çавăрнă тенине илтнĕ эп çĕршывĕнче. Хутăшса кайнă ĕнтĕ çӳп-çапĕ, çумкурăк вăррийĕ таса тырă вăрлăхĕпе. Анчах мана хуть касăр эсĕр, хуть ваклăр, эпĕ хамăн шухăшран иртместĕп. Эп çав çирĕм мĕльюн хамăр халăха тĕп тунăшăн, пиншер хула-яла ишсе çунтарнăшăн, пире йĕртсе нуша кăтартнăшăн виличчен те, вилсен те каçармастăп хывашист эшкерĕсене. Акă, хрицсем асаплантарса этем нĕрĕнчен кăларма пуçланă старик çумĕнче турăш умне тăрса пуççапатăп: çук, ман ăшри хуйхă ăшрах юлнă, сĕвĕрĕлмест, килĕшме памасть, пĕрлех леш тĕнчене ăсанать вăл. Хĕпĕртӳ мар, тарăхуллă хуйхă илсе килчĕ ку çыру. Çук, кĕртмесп нимĕç кинне киле...

Аллисене уснă пусăрăнчăк хĕрарăм куçĕнчен пăхма та хăрарăм, ку çырăва кĕртсе пама мĕншĕн килĕшрĕм-ши тесе кулянма пуçларăм. Хуçăк кăмăлпа тухса утрăм Целина Элекçисем патĕнчен.

Отпуск пĕтиччен эпĕ вĕсем патĕнче темиçе хут та пултăм. Туйне ĕнтĕ вĕсем хăйсем те, ялти ытти тăванĕсенчен те пикам та каяймарĕç. Укахви инке сывлăхран йăшса пынипе сисрĕм-ха, юлашки вăхăтра вăл вырăнпах выртма пуçларĕ. Эпĕ тепре пынă çĕре ăна шалкăм çапнăччĕ. Хускалмасăр вырăн çинче выртать, тути хĕррисем чĕтренсе илеççĕ, куçĕ çеç ăшшăн пĕр çĕрелле пăхать.

Ашшĕ телеграмма янă хыççăн Целина Элекçийĕ çамрăк арăмпа вĕçтерсе çитрĕ. Вĕсене кĕтсе илме юлташ машинипе эпĕ те станцине тухрăм. Питĕ чиперкке, çе-

пĕç чĕлхеллĕ, кăмăллă арăм тупнă Элекçи. Çул тăршшипе Чăваш çĕршывĕ, пирĕн ял çинчен ыйтса-тĕпчесе пычĕ.

Килне эпир шавлăн кĕрсе кайрăмăр. Анчах темшĕн хура çăмламас йытти унчченхи пек туртăнса вĕрмерĕ, темле йыпăшса уласа ларать. Пӳртре шăпчĕ. Митрахван пичи туйине тăклаттарса хирĕç утса пычĕ.

— Ырă сунса кĕтетпĕр, пирĕн хисеплĕ нимĕç кин. Фройншафт, Лаура Фирсовна. Элекçи, каçар, аннӳне эсир çитиччен усраймарăм. Эсир пӳрте кĕриччен тин кăна куçне хупрĕ.

Элекçипе пĕр харăс «Анне!» тесе хăрушла çухăрса ячĕ те çĕнĕ çып йывăç кравать çумне чĕркуçленсе ларчĕ: «Анне, эп... салам... кин... парне...» Тин кăна вĕреннĕ чăваш сăмахĕсене сыпăнтарса калаймасăр нушаланчĕ вăл куççуль витĕр.

Масар çинчи халăх умĕнче татăлса йĕчĕ Укахви инкен нимĕç кинĕ. Çак ватă хĕрарăм хăйне виличчен те алăкран кĕртместĕп тесе турăш умĕнче тупа тунине те, Элекçи ашшĕ хăйне мĕншĕн Лаура Фирсовна тесе чĕннине те пĕлеймерĕ вăл. Унщăн упăшкин амăшĕ чипер те вăйлă, уçă кăмăллă Элекçпе çуратса ӳстернĕ ырă чăваш хĕрарăмĕ, юратнă амăшĕ вырăнне тăрса юлчĕ ĕмĕрлĕхех.

Амăшне пытарнă хыççăн Целина Элекçийĕ Казахстана урăх каймарĕ, арăмĕпе ялтах юлчĕ, тракторпа ĕçлеме пуçларĕ. Арăмĕ шкула вырнаçрĕ.

Митрахван пичи карчăкки хыççăн тата чылай пурăнчĕ. Кăштăртатса кинĕ умне пырса тăратчĕ те сывă юлнă аллине уп хулпуççийĕ çине хуратчĕ:

— Фройншафт, нимĕç кин, тавтапуç сана, мана пăхнăшăн. Кӳреместĕн-и мана, Лаура Фирсовна?

Элекçи арăмĕ хуняшшĕн куçĕнчен ăшшăн кула-кула пăхса ăна юрама тăрăшатчĕ. Ватă çыннăн кăмăл-туйăмне тахçанах хăнăхнăскер, вăл хăйне мĕншĕн Лаура Фрицевна мар, Лаура Фирсовна тесе чĕнме пуçланине те ăнланнă ĕнтĕ, çĕнĕ ята майĕпен хăнăхнă, ялта та халĕ ăна çаплах чĕнеççĕ-çке, кӳренме мар, пур енĕпе те ырă тума тăрăшнă Элекçи ашшĕне.

Фашист эшкерĕсем тĕп тăвайман хастар чăваша, ватă коммуниста Совет çĕрĕнчи нимĕç, коммунист хĕрĕ мĕн

виличченех хисеплесе пахса пуранчĕ. Ашшĕне юратна пекех юратса.

Чеченкас камалĕ нимĕç кин кăмăлĕпе татах пуянланчĕ.

# Вăрçă участникĕ

Суту-илÿ пĕр хушă сахăртан татăлса кайрĕ пулас та, пирĕн ялта та тÿрех сисĕнчĕ ку пăтăрмах. Уйрăмах упăп нушипе пĕччен пурăнакан ватă çынсемпе хĕрарăмсем туяççĕ. Вĕсен унта-кунта çÿресе аякран тупма хĕнтерех пылак тавара, ирĕксĕрех ял лавккипе турттарса килессе кĕтме тивет.

Сахăр килнĕ тенĕ хыпар чап сасси пекех пĕр харăс сарăлчĕ пулас. Анне хушнипе хыпăнса çитнĕ çĕре лавккапа халăх тулса ларнăччĕ. Алăк патĕнченех. Черет йышăнтăм. Ман хыçа Уксах Тарья пырса тăчĕ. Ялта упта темпĕн-çке ватă çынна та пĕрре тахçан çыпăçтарса хунă хушаматпах мĕн виличчен чĕнме хăнăхнă. Хулара пулсан ĕнтĕ йăмра туйи çине уртăнса аран пăшкаса тăракан сакăрвуннăсенчи хĕрарăма хисеплесе Дария... темелле. Дария, Дария... Чим-ха, хам та пĕлместĕп вĕт унăн ашшĕ ячĕ мĕнлипе? Çынсенчен ыйтса пĕлме аван мар, çитменнипе тата намăс та пулĕ тесе эпĕ ăна хăнăхнă йăлапах чĕнме шутларăм.

— Аван-и, Тарья акка? Сывлăхăр мĕнлерех?

— Пурăнип-качки, çĕрпе пĕлĕт хушшинче хыт кăпшанкă пек кăптăртатса çÿрекелетĕп. Лере каймa черет çитнĕ-ха та, ирĕксĕртен ырлăх тенĕ пек, халăх черетĕнче тăрса юлас тетĕп пуль-и...— вăйсăр сасăпа хуравларĕ вăл.

— Мен черетре тăмалла çак ват çыннăн, черетсĕрех парăр-ха Тарья аккапа пĕр кило сахăр?! — сутуçă илттĕр тесе чĕрне вĕççĕн тăрсах хыттăн каларăм.

Çынсем шавласа кайрĕç:

— Ват çын тесе... апла эп те аннене ярап.

— Уксах-чăлах çын Тарья анчах-им?

— Çур ял пенсире те халь.

— Мĕн, вăрçăра аманнă-им вăл?

Тата темтепĕр хупларĕ хăлхана. Сутуçă çиййĕнчен лаплаттарса хучĕ:

— Уксах Тарьян ун черетсĕр тавар туянма нимле удостоверени те çук. Ун тӳпине кинĕ паçăрах илсе кайрĕ. Кинне чартăр малтан кăрчама тума, вара чей ĕçме те сахăр çитет.

Лавкка вĕлле пек сĕрлет. Тарья акка майлисем те, черете çирĕп пăхăнмалла текенсем те, кинне ятлакансем те пĕрне-пĕри тăрăшсах ăнлантарма хăтланаççĕ.

— Кипсем вĕсем уйрăм пурăнаççĕ-çке, манпа мар. Эх, ку кинĕн çăхан хырăмне, хăçан тăранĕ. Ма парса янă-ши çав алкакулике ман сахăра?..

Уксак Тарья каласа пĕтерейменрĕ, алăкран хирсе кĕнĕ Хивре Кирилĕ чавсисемпе тĕрткеленипе пире кĕтессе персе хĕстерчĕç.

— Участниксем çитрĕç, вовсем, чăтса тăр халь,— илтĕнчĕ пăшăрханчăк сасă хĕрарăмсем хушшинчен.

Çапах та кĕтесре, пурте малалла ӳпĕннипе, тăма ирĕклĕрех. Хивре Кирилĕ, манран вунă çул аслăрахскер, пепсне тухнă пулин те, вăкăр пекех-ха, тулли пичĕ-куçĕ йĕрĕнчĕк куллиллĕ. Чи мала çитсе тăчĕ те вăл аллинчи пĕчĕк кĕнекипе прилавок çине çатлаттарчĕ:

— Сирĕлĕр аяккалла, ап кансĕрлĕр! Ман право пур!

Сутуçă ăна хыпăнса сахăр турттарса пачĕ те пуçланă сăмахне çине-çине каларĕ:

— Уксак Тарьян ун Кириле пичинни пек льготнăй кĕнеке çук. Тупса килтĕр вăрçăран, вара ăна та черетсĕрех сахăр паратăп...

— Чипертерех, кăмăллăрах пулăр-ха эсир. Тарья аккасем тăшмапа алла пăшал тытса çапăçман пулсан та çĕнтерӳшĕнех тапаçланнă ялта. Нивушлĕ ват çынна хĕрхенместĕр? Хăçан та пулин хамăр та вĕсем пекех йӳтетнĕр ак. Ман тӳпене турттарса парăр-ха апла ăна? — чăтаймарăм эпĕ.

— Ай-яй, чее пуласшăн, черетсĕр илет пать те ĕнтĕ, ваш кăна тухса вĕçет. Черет çитсен туянатăн та, хăвăн сахăрна хăть Уксак Тарьяна ярса пар, хăть салакайăксене сапса пар. Ап чăрмантар ĕçлеме! — сивĕ хĕлхем сирпĕтрĕ сутуçă пирĕн еннелле.

Хивре Кирилĕ каялла хирĕлсе тухнă хыççăн халăх лăшах сывласа ячĕ. Черетре виççĕмĕш тăракан Антун мучи пуçне пăркаласа, тарăхса каларĕ:

— Финсемпе те çапăçса куртăм, германсене те кӳпкерĕм пуль, виççĕ йывăр амантăм. Ман та пур унашкал кĕнеке, уннинчен вăйлăраххи те. Вăл участник анчах, эп — инвалид. Тĕрĕссипе ман...

— Эс черетре тăратăн та, аи, сана ман уйрăммăн пăхмаллаччĕ? Вăю пур та — тăр! — мăкăртатрĕ сутуçă.

— Ниçта та васкаман чухне мĕншĕн ман халăха тарăхтарас. Чăн та, халлĕхе пур-ха ура вăйĕ. Хивре Кирилĕ мар эп. Вăрçă мĕнне те пĕлмест вăл, вилĕме хирĕç куçакуçăн тăрса курман, тылри йĕкехӳре. «Ман право пур!» тесе хур аçи пек каçăрălса çӳреме пĕлет. Патшалăх туса панă япала, прави, чăнах, пурах ĕнтĕ унăн та. Вăрçă инвалидĕсемпе танлаштарса ячĕç те вĕсене, участниксене, брежневсем, халь вĕсем пиртен те ирттереççĕ, маларах тухма вĕсен вăй пур. Вĕсене пула халĕ пире те, инвалидсене, халăх сурсах вăрçать. Пире намăс кăтартаççĕ вĕсем.

— Тĕрĕс, Хивре Кирилĕ пеккисем, харсăрланса, дефицит таварĕпе спекуляци туса таса чунлă инвалидсене, вăрçă участникĕсене хирĕç тарăху вăйлатаççĕ,— терĕ пĕр хĕрарăм алăк патĕнчен.

— Çапах та, тăвансем,— малалла каларĕ Антун мучи,— темле право пулсан та, çыннăн чи малтан совеç пулмалла-çке. Чукун çул вокзалĕнче мар вĕт кунта, хамăр ялта, хамăр халăх хушшинче, ниçта та васкас çук. Чăнах та, мĕншĕн черетсĕр памалла мар-ха Тарьяна? Сакăрвун-тăхăрвун çулсенчи ватă çын та халĕ ялĕпе ик алăри пӳрнерен иртмест. Эсир, çамрăксем, пĕлес çук. Тарья та вăл вăрçă тухнă çултанпах нуша курать урипе. Хыçалти йĕтемрен кĕлетсем патне молотилка куçарнă чухне аманчĕ. Эп бригадирччĕ, тепĕр уйăхран хама та фронта илсе кайрĕç. Ман шутпа, вăл та вăрçă участникех, вăрçă инвалидех. Хут туса паман та ăна, никам та мар вăл — уксак карчăк çеç. Тĕрĕссипе ман çав вăхăтри асап тӳснĕ хĕрарăмсене вăрçă участникĕн кĕнекисене партарас килет. Нумай та юлман ĕнтĕ вĕсем, шереметсем. Парса яр çав карчăка черетсĕр!

Хаяр куçĕпе Антун мучие çисе ярасла пăхрĕ те сутуçă тарасине шăк-шак тутарса:

— Ме, пл хăвăн тӳпӳне,— терĕ.— Çен саккун туса таран. Эп сакунлă ĕçлетĕп, черетсĕр никама та тавар сутмасп, участникĕсене нихçан та кӳрентермесп. Уксак Тарьян уп пурпĕрех черетсĕр илме право çук.

Юнашар сулланса таракан Тарья акка уксах урипе кăштăртатса илчĕ те сутуçă еннелле кăмăлсăррăн пăхса:

— Эх, ытла хура юн вĕрет-çке сан кĕлеткунта, этем çуратман пуль сана. Ман, чăнах та, Хивре Кирилĕсенни пек çăлăнăç кĕнеки çукка, права текенни те çук черетсĕр сахăр туянма, пĕр права çеç юлнă пулас — масар çулĕпе каймалли права. Унта черетсĕрех йышăнаççĕ-ха та вилсен,— терĕ куçне шăлса. Унтан прĕклĕ аллипе чĕрине ярса илчĕ те лĕнчĕр кукленсе ларчĕ. Эпĕ ăна çĕклесе тăратрăм. Çав хушăра черетрен Антун мучи хирĕнкелесе тухрĕ те:

— Тарья, иксĕмĕр пайлăпăр сахăра,— терĕ.

Черете пăрахсах Тарья аккана çавăтса тухрăм. Пирĕн çине ытлашши тĕлĕнсе пăхаканах та пулмарĕ. Пурте сутуçă еннелле ӳпĕннĕ. Пурин те пĕр тĕллев — хăвăртрах сахăр туянса киле каясси. Киле çитсен, кам кăрчама тăвать, кам чей ĕçет — пурте хăй пĕлнĕ пек чунне кантарать. Хăйĕн чун-чĕри ытларах мĕншĕн канăçсăрланнине, мĕншĕн чи малтан хăйĕн хырăмĕшĕн хыпăннине çеç тăрăннăн шухăшласа илеймест унашкал çын çав вăхăтра.

— Эс, Тарья, ан кулян,— лăплантарчĕ Антун мучи уçă çĕрте сывлăш çавăрса янă карчăка.— Ку тарапччен айланкаласа пурăннă эпир, тата пурăнатпăр, вилместпĕр. Чурăс чунлă çын вăл — юрăхсăр. Унăн чунне навус хурчĕ çисе çĕр тăвать. Уçă та ырă кăмăл вара хăмăл çинче те çĕнĕ хунав ӳстерет. Эс хăвна яланах вăрçă инваличĕ, те. Фашиста тĕп тăвассишĕн эпир фронтра пĕччен çапăçман, пĕрле, сирĕнпе пĕрле çапăçнă, çавăнпа эсир те, эпир те паттăр пулнипе çĕнтернĕ. Çав усалсенчен хăраса тăратпăр-и? Суртăмăр эпир вĕсем çине. Пире, иксĕмĕре, фронтпа тыл инваличĕсене, ним те хăрушă мар. Хивре Кирилĕсем вĕсем, эпкамлатса кăкăрĕсене çапса çӳреççĕ пулин те, пиртен пурпĕрех хавшакрах. Чунĕ çук вĕсен. Чунсăр ва-

ра — çын та çук. Ячĕ те. Ан куляп, эсĕ те — вăрçă участникĕ. Кăна сана эпĕ, ватă салтак, калатăп: сакуннăй вăрçă участникĕ — вăрçă инваличĕ эс. Атя, ярт-яртрах уткала.

Çула май Уксах Тарьяпа эпир килнех кĕртсе хăвартăмăр. Сахăрне çуррине илсен вăл уншăн укçине тӳлерĕ. Лавккара сӳнме пуçланă карчăк куçĕсем çав самантра мĕнешкел телейлĕн ăшă çутă сапрĕç пирĕн çине.

# Вилĕм улшуçĕ

Шинка Кирукĕн хĕрĕ Мая фермăна хура тĕслĕ кĕпе тăхăнса хура тутăр çыхса пырсан, пурте тĕлĕнтĕмĕр. Çивĕч сăмах-юмахпа, шӳтпе-кулăпа ялан çынсене савăнтаракан хĕрарăмран темле хуйхă хумĕ çитсе çапрĕ. Çемьере инкек сиксе тухни каламасăрах паллăччĕ. Пичĕ çинчи тунсăх тĕтрине аллаппине шăлса сирчĕ те Мая:

— Паян Шупашкара самолетпа Вадима илсе килеççĕ... Кĕркунне службине пĕтерсе килмеллеччĕ, халь мĕн пулчĕ-ха... Мĕн курса лармалла пулчĕ? Ах, тур-тур, ма пирĕн пуç çине çеç çавать-ши вăл хуйхă пăрĕ...— тесе ӳлесех ячĕ.— Ма Вилĕм улшуçĕсен...

Хĕрарăмсем ăна хупăрласа илчĕç те кам мĕнле пултарнă çапла ăш сăмахсемпе лăплантарма тытăнчĕç. Иртнĕ эрнере çеç-ха çак вырăнтах мĕн тери хăпартланса, хĕрӳленсе вуласа пачĕ Мая ывăлĕн çырăвне. Вадим аякри Афганистанран мухтанмасăр, ним ӳстермесĕр çырнă салтак пурнăçĕ çинчен, тусем хушшинчи çапăçу хыççăн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ памалла тунни çинчен пĕлтернĕ. Амăшĕн çемçе чунĕ хĕпĕртӳ хĕрĕвĕпе хĕрсе епле çутăлнине пăхса тăма кăмăллăччĕ. Акă халĕ унăн вырăнĕнче хура тум айĕнчи хуйхă чулĕ айне пулса пусăрăннă чун чĕрене çурасла хăрушшăн ӳлет.

— Почтăна çула май кĕрсе шăллăма телеграмма çаптартăм-ха. Те килеет ĕнтĕ Микулай, темле. Хĕрача патне Шупашкара звонить турăм. Ах, сыснасене апат парасчĕ те, Вадима илсе киличчен килте кĕрик-мĕн тума ĕлкĕресчĕ те...

Майăпа урăх тăратмарĕç фермăра. Апат турттаракан Алюш урапапа лартса кайрĕ.

— Илтрĕн-и Мая камсене ылханнине? — тесе пуçне ялт пăрчĕ ферма хуралçи Салтак Петĕрĕ пĕве пуçĕпе каçакан урапа еннелле.— Вилĕм улшуçне — Упа Упрамне. Çав свулăчь тăлăха тăратса хăварчĕ вĕсене — Микулайпа иккĕшне.

Салтак Петĕрĕ çĕвĕллĕ, путса кĕнĕ сылтăм питне хăнăхнă йăлапа хупласа шăлкаларĕ те, уринчи протезĕне чĕриклеттерсе, шыв хĕрринелле утрĕ.

— Атя, уш пĕрре пуçларăм та, вĕçнех çитерем. Эс, ачи, таçта аякра кăмрăк кăларса çӳренĕскер, илтмесĕр те юлма пултарнă. Илтнĕ пулсан та тепĕр хут итле. Ун пирки, усал ĕç пирки, пирĕн пĕрмай калаçмалла, пĕлмеп çын ан юлтăр, пĕлекенни те ан мантăр, ламран лама куçтăр, пĕри теприне аса илтертĕр халăх тăшманĕсем çинчен, вут çунтăр вĕсен ури айĕнче,— тарăхнипе аяккалла çăвар туллии сурчĕ вăл.

Ман хăлхапа та кĕнĕччĕ-ха тахçан, те килте, те халăх хушшинче илтнĕ, халĕ лайăхах астумастăп, çапах Вилĕм улшуçĕ кам пулнине Мая хӳхлесе йĕнĕ чухнех тавçăрса илтĕм. Сăмах-юмах тĕрлĕрен пулать те, хушăран илтниилтменнинех ĕненсе ларма та хĕнтерех, çавăнпа эпĕ ялта тахçантанпа çӳрекен усал халапа пуçа хывман.

Хыçалта сасартăк ура сасси илтĕнчĕ. Çаврăнса пăхрăмăр та, ак тамаша! Хул хушшине михĕ хĕстернĕ Упа Упрамĕ саркаланса тăра парать. Куçĕсем чеен те хаяррăн йăлкăшса илчĕç. Тăваткал сарлака питçăмартисем тата ытларах кĕтесленчĕç. Хир сысни шăрчĕ пек шултăра кăвак мăйăхĕсене пӳрне тӳртĕшĕпе чăш-чаш шăлса илчĕ те, тутине çине-çине чаплаттарса:

— Мая-майра Алюшпа каллех якăлтатма вĕçтерчĕ пуль, килĕнче кансĕрлекен çук, кинĕ мапа хирĕç таçта вашлаттарчĕ,— мăшкăл пăтти сирпĕтме пуçларĕ усал çăварĕнчен.— Сысна çури илмеллеччĕ ман. Çапла уваштать тăваççĕ вĕсем пире, ветерансене. Супăнь сĕрнĕ пек лармалтăма пĕлмест вĕт хусах хĕрарăм вырăнта. Янă та пăреке...

Чăррик-чăррик, чăррик-чăррик тутарса утса пычĕ те уп патнелле Салтак Петĕрĕ, хыткан та тĕреклĕ чышкине

пĕррех сулса ячĕ. Тулли кĕлеткеллĕ Упа Упрамĕ сулăнса-сулăнса пычĕ те вĕлтрен пусса илнĕ шăтăка лаплатрĕ. Çĕр çĕмĕресле тулхăрса, темиçе хутлă сăмахсемпе ятлаçса упаленекен вата çынна пулăшма туртăнтăм. Салтак Петĕрĕ мана пиншак аркинчен карт туртса чарчĕ:

— Çыртакан йытта аш татăкĕ памаççĕ.

Упа Упрамĕ шăлаварĕпе пиншакне шăлкаласа тасатрĕ те шăл хăйраса хăйăлтатрĕ:

— Ма тепĕр пуля сахалтарах пулнă саншăн вăрçăра, уру вырăнне пуçна çухатманскер... Лăкăштатса çӳрен... Ни вилме пĕлместĕн...

— Упрам, эс ху тата пурнап тен пуль çут тĕнчере... Çук, вилнĕ эс тахçанах пирĕн ялсемшĕн, хĕрĕх виççĕмĕш çултах. Эпир, урасăр-алсăр таврăнтăмăр пулин те вăрçă хирĕнчен, пурпĕрех чĕрĕ-ха. Шипка Кирукĕ те пирĕнпех пурăнать. Пирте, халăхра, çĕршыв ятĕнче пурăнать. Уй куçлă, вăрман хăлхаллă... Халăх куçĕ пурне те курать, халăх хăлхи пурне те илтет. Унран нимĕн те пытараймастăн. Лайăх пĕлетпĕр эпир те Улшуçсем камне. Марш кунтан часрах йытă — Вилĕм улшуçĕ!

Çаплах хирĕлсе тăчĕ-ха Упа Упрамĕ:

— Эс турăн çак сăмаха. Эс кăлартăн усал ята. Сана-и, сана тахçанах пăчлантармаллаччĕ те, юрать хамăр ыр кăмăллă пултăмăр. Вилĕм улшуçĕ тенине доказать ту-ха. Ман бронь пулнă, ман кайран чир пулнă. Суда парап сана куншăн!

— Чир пулнă çав сан. Чирлĕ çав эсир, пурте дезертир чирĕпе чирленĕскерсем. Аçупа, сана, ывăлна, мăнукна суд тумалла — халăх сучĕпе айăпламалла сире, таркăнсене, çĕршыв хӳттинче пытанса пурăнакан йытăсене.— тарăхса кайнă Салтак Петĕрĕ ун патнелле танкăшрĕ. Сехĕрленсе ӳкнĕ Упа Упрамĕ тин пĕве пуçнелле тапăлтатрĕ.

Иксĕмĕр те çыран хĕррине, симĕс çерем курăкĕ çине вырнаçса лартăмăр. Тарăхупа сиçекен куçĕсепе таса тутăрпа шăлса илчĕ те Салтак Петĕрĕ, кĕсйинчен пирус кăларса, чĕртсе ячĕ.

— Эх,— ассăн сывлавипе тата тĕтĕмпе хутăш чыхăнса кайрĕ вата çын.— Шипка Кирукĕсемпе тата Упа Упрамĕсемпе пĕрле ӳспĕ-çке, пĕрле шкулта вĕренсе ар пӳне

ҫитнӗ, пӗрле... Кирукпа пӗрлех салтака тухса кайрӑмӑр... Ашшӗ ӑна вӑрҫӑ тухиччен маларах Канаша, вакунсем юсакан завода вырнаҫтарса, бронь илсе пачӗ те, юлчӗ вара пирӗнтен уйрӑлса. Ашшӗ райӗҫтавкомра ӗҫлетчӗ, хура сӑран пальтопа ҫӳретчӗ. Аттесем каланӑ тӑрӑх, вӑл та граждан вӑрҫинчен темле ултавпа хӑтӑлса юлнӑ, тет. Фронтран эп яла пӗрремӗш салтак таврӑнтӑм: лӑкӑштатса, сусӑрланса. Пирӗн юлташ Упа Упрамӗ председательтеччӗ. Канашран майлашӑнса тухса ӑш вырӑна кӗрсе ӳкнӗ. Хӗрӗх виҫҫӗмӗш ҫулта Кирук аманса килчӗ. Чулхула госпиталӗнчен янӑ. Арӑмӗ, Ирук, сусӑрланнӑскерне пӑхса, сыватса ура ҫине тӑратрӗ. Кӑкӑрӗнчен амантнӑскер, ҫавах юнлӑ суратчӗ. Шутланӑччӗ, Кирук ӗнтӗ хӑйӗнне ҫапӑҫса иртерчӗ, тылра усӑ парӗ, лаша такапӗ авма пултаракан Упрамсен алла пӑшал тытмалла. Ҫапла пулмасӑр, ара, кӗҫ Кирука военкомата чӗнтерчӗҫ, ҫӗнӗрен пухнӑ камантӑпа тепӗр куннех фронта ӑсатрӗҫ. Ҫулӗ упӑн малалла, анӑҫалла ҫеҫ пулчӗ. Лашапа ӑсатса ятӑм, кӗтсе илеймерӗм. Тепӗр ик уйӑхранах похоронкӑ ҫитрӗ. «Петӗр, чуп сисет, темшӗн яла таврӑнассӑн туйӑнмасть, кӑкӑр та тӳрленсе ҫитеймерӗ. Ирука, Мая хӗрӗме хӗрхенсе килет. Арӑм татах ача пулать терӗ-ха. Кам пулӑшӗ ӗнтӗ вӗсене»,— куляиса пычӗ ҫул тӑршшипе. Военкоматра пирӗн хӑта ӗҫлетчӗ. Ҫакӑ вӑрттӑн систерчӗ пӗррехинче. Сирӗн ялсоветӗнчен Медведев Абрамӑн каймаллаччӗ, военкомата пару килсе пачӗ те, хӑй вырӑнне Шипков Кирила яртарчӗ. Кайран та тивмерӗҫ ӑна, чирлӗ тесе суя справка хатӗрлерӗҫ те, ҫӑлӑнса юлчӗ, терӗ. Шипка Кирукӗ ҫапла Упа Упрамӗшӗн вилӗм тупрӗ. Упа Упрамӗ Шипка Кирукӗ хыҫӗнче чӗрӗ юлчӗ. Вилӗм улшуҫӗ пулчӗ. Тӗп-тӗрӗс ку. Кирук арӑмӗ Ирук ывӑл ҫуратрӗ, ачисене ӳстерсе пӗтерейменрӗ, чирлесе вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗчӗ. Астӑватӑп, хӗрачи, Мая, вуннӑмӗш класшӑн экзаменсем паратчӗ, ҫав вӑхӑтрах амӑшне пытармалла пулса тухрӗ. Шӑллӗне, Микулая, вӑл пӑхса ӳстерчӗ. Микулай вуннӑ хыҫҫӑнах офицера вӗренме кайрӗ. Халӗ полковника ҫитнӗ терӗҫ. Килет пуль-ха аккӑшӗн ывӑлне пытарма. Майӑн телейлӗ пулмарӗ пурнӑҫӗ. Каччине кайкаларӗ, икӗ ача ҫуратрӗ, упӑшки виҫӗмҫул машинӑпа ҫапӑнса вилчӗ. Пӗр-

май ĕçетчĕ те... Халĕ тепĕр пысăк хуйхă.

Ял историйĕнчи хура хултăрча çавăрттаракан вăрçă инваличĕ протезне майласа ура çине тăрасшăн пулнине асăрхарăм та пулăшма васкарăм.

— Тавтапуç, шăллăм,— терĕ вăл ыратнине пит-куçне чалăштарса.— Пирĕн йăхра та, сирĕннинче те, ялта урăх никам таврашĕнче те астумастăп унашкал путсĕрсене. Хăвах шутла эс, Шишка йăхĕнче упта ĕмĕрĕпех салтак паттăрлăхĕ пуç пулнă, çав паттăрлăх юнран юна куçса пынă, пырать те. Тахçан авалах турккă пассурманĕсене кӳпкенĕ вĕсен йăхĕ, хушамачĕ те Пăлкарирен куçса килнĕ. Шипкăсен салтак тумĕ тăхăнман арçын пулман. Мисен тăван килне таврăнаймап. Упа йăхне илсен... Упасен, эп пĕлнĕ тăрăх, пĕр арçын салтакра пулса курман вĕт. Черетпеле пăрăнса юлаççĕ çар служпинчен. Аслашшĕ, ашшĕ, ачи, мăнукĕ... Упрамăн Майăна тантăш ывăлĕ те, вăкăр пекскер, хăтăлса юлчĕ, ун ачи, Вадимпа пĕрле университетра вĕренекенскер, тушĕ Канашран малалла иртмен. Ашшĕ тухтăр та, комиссире майлаштарса хăварнă. Маншăн вĕсем — чăн-чăн халăх тăшманĕсемех. Вĕсем Конституцие ним вырăнне хумаççĕ, çĕршыва хӳтĕлесси çинчен мар, хăйсен кĕлеткисене сывă сыхласа хăварассишĕн çеç çунаççĕ. Вĕсем халăхран кулаççĕ. Вĕсем пурте — вилĕм улшуçĕсем. Вĕсемшĕн урăххисен пăшал тытмалла, ыттисен çапăçмалла тăшманпа, вĕсен мар, такамăн пуçа хумалла кирлĕ пулсан. Эх, енле чăтать мăнтарăн çĕрĕ хура чунсене — ултавçăсене.

Çул тăрăшшипе каласрĕ Салтак Петĕрĕ. Ватă фронтовик сăмахĕсем протезăн кансĕррĕн чĕриклетекен кĕввине хутăшса пушшех чуна тиврĕç.

Шишка Кирукĕн ывăлĕ Микулай виççĕмĕш кунне яла килсе çитрĕ. Масар çине эпир пĕрле кайрăмăр. Хурлăхлă самант пулин те полковник ялйышпа, тăванĕсемпе ĕç-пуç, пурнăç çинчен хуллен калаçкаласа илет.

— Ман хамăн ывăл та, летчик, пĕлтĕр çавăнтанах йывăр аманса таврăнчĕ, урăх вĕçесси пулмасть, сылтăм урине татрĕç, алли тӳрленмест. Мĕн тăвăп — шăпа,— терĕ те Микулай виле шăтăкĕ çумĕнче тем палкаса тăракан Упа Упрамĕ çине çиллессĕн пăхрĕ.

Вадимăн шăтăкне чавса пĕтернĕ хыççăн арçынсем туртса ячĕç. Эпир те вĕсем патне пытăмăр. Упа Упрамĕ мĕншĕн тулхăрни тинех паллă пулчĕ. Апшĕн вилтăприйĕ çине тăм катăкĕсем юхса аннă-мĕн. Çавна тасаттарасшăн. Ăна никам та итлекен çук. Вăл вара чалăш пусса лартпă кĕреçе патнелле мекеçленсе çывхарма пуçларĕ. Те урп шурĕ, те муклашкаран такăнчĕ, сиссе юлаймарĕ, хăрушла кăшкăрса кĕмсĕрт! турĕ аялалла.

— Тинех шалчи тулчĕ çăхапăн. Кирук мăнукех тытрĕ пулас-ха ку эсремете, кукашшĕшĕн тавăрас терĕ пуль усал-тĕселе, пурнăç вăл хăй судья, хăех юсать,— тесе Салтак Петĕрĕ кĕреçе ярса илчĕ те шăтăкаваскасах тăпра сапма пуçларĕ.— Çав кирлĕ сана, вилĕм улшуçне, вырт çĕрсе-хуртланса, усал йытă. Вадим валли эпир тепĕр шăтăк чаватпăр. А-ах!

Салтак Петĕрĕн аллинчен кĕреçене туртса илчĕç те Упа Упрамне шăтăкран туртса кăларчĕç. Тăмпа вараланнă шăйрăк-шайрăк пит-куçне çаппипе сăтăрса илчĕ те Вилĕм улшуçĕ, пĕр сăмах чĕнмесĕр хапха патнелле лăкăштатрĕ, йăмрасем хушшипе мĕлке пек курăнса пычĕ.

Афган халăхне интернациллĕ пулăшу панă çĕрте пуçне хунă чăваш паттăрне пытарма кӳршĕ ял çыннисем те пумайăн пынă. Вадим арăмĕ ача йăтса тăрать. Микулай Шиков пĕчĕк Кирука хулпуççи çине лартрĕ. Пĕчĕкскер хуйха-суйха пĕлмесĕр ним пулман пекех куккăшĕн пакунĕ çинчи çăлтăрсемпе вылярĕ. Салтак Петĕрĕ шĕвĕрккене симĕс турат тыттарчĕ те:

— Ны-ысăк ӳс, салтак пул,— терĕ.— Шипка йăхне малалла тăс.

Пăшал сасси умлă-хыçлă кĕрлерĕ. Масар çине çĕнĕ вилтăпри хушăнчĕ. Тимĕр палăк çинчен хурлăхлă çыпсем çине савăк сăн-питлĕ çап-çамрăк сержант вилĕмсĕр куллипе пăхать. Вилĕм улшуçĕсен куллийĕ мĕн тĕслĕн курăнать-ши çав самантра? Ăна энĕ те, Салтак Петĕрĕ те, Майăпа Микулай та, никам та кураймарĕ. Упа Упрамĕн йăхĕнчен Шипка йăхĕнчи салтака пытарма никам та хутшăнмарĕ.

# Тăрри шăтăк

Хир сыснин шăрчĕ пек мăйăхлă, выçă анчăк куçĕ пек антăх куçлă, каска пуканĕ пек кĕлеткеллĕ Тунката Платтунĕ мана кĕпер çинче хуса çитрĕ те, сĕрмен кусатăран сасси пек сассипе хăйăклатрĕ:

— А вĕт, хаклă юлташăм, пирĕн председатель çемçе пукан çине ларнăранпа тырă вырса курман тет, ĕне çилли ăçта вырнаçнине чухлаймасть тет. Мĕнле пурăнмалла-ха капла ним тума пĕлмен хуçапа? Çĕпетӳ те хăвăртлату тетпĕр тата хамăр...

Ахаль те фермăпа васкаканскер эпĕ çак кармаçăвар тытса чарнăшăн пит кăмăлсăрланнăччĕ, акă халĕ çак киревсĕр сăмахсене илтнипе пушшех тарăхрăм.

— Ан ухмахлан-ха эс, Платтун,— терĕм вара,— нивушлĕ председателĕн хура ĕçпе аппаланмалла? Унăн тĕп ĕçĕ — хуçалăха ăслă пуçпа ертсе пырса яла пуйтарасси, пире çăкăрлă, укçа-тенкĕллĕ тăвасси.

Ман еннелле куçĕнчен сивĕ хĕлхем сирпĕтрĕ те Платун хăйăлти хултăрчне çĕнĕрен çавăрчĕ:

— Çук çав, ăна ту та кăна ту тесе кăтартса çӳрениех ĕç тухмасть, хаклă юлташăм, хăвăн аллупа тытса тумалла пурне те. Перестройка, перестройка, тетпĕр хамăр... Нимĕнле улшăну та курмастăп эп. Пур çĕрте те йĕркесĕрлĕх, пур çĕрте те анрасурăхлăх. Сирĕн фермăра та... Заведующийĕн эсĕ кунĕн-çĕрĕн ĕçлетĕн, теççĕ.

Утса каймa тăпăскер, эпĕ каялла çаврăнса ун патне çывхартăм. Чăтаймарăм, чупа хытарсах каларăм:

— Эс ху анрасурăх, Платтун! Эп пĕлнĕ тăрăх, ялта йĕрке пултăр тесе эсĕ нихçан та урлă выртана тăрăх çавăрса хуман вĕт. Ман шутпа ĕмĕрне юмах çапсах иртеретĕн. Бригадирта чухне ултавлă куçупа халăхран кулнине аннесем лайăх астăваççĕ. Кайран завхозра ĕçлесех пуйрăн-çке. Ферма пуçлăхĕнчен те сыспа аяккалла ярăнтарнăшăн тухса ӳкнĕ, терĕç. Ун хыççăн кăшт лăпланса пурăннă пек пултăн та, акă халĕ Госстрах агентне кĕрсе кайрăн. Çӳретĕн, ав, ял тăрăх карма çăвараăнти хура çĕ-

лен сăнни пек наркăмăшлă чĕлхуна йĕпĕлтеттерсе. Нихçан пĕр кăмăллă ырă сăмах илтмен эп санран ку таранччен. Ялан пурне те сивĕ аллунти хура мелкепе сăрмаклатăн. Пирĕн ферма заведующине айăпласшăн-ха. Ылтăн çынна. Ара вăл хăйшĕн кăна мар, маншăн та, зоотехникшăн та, сысна пăхаканшăн тата такамшăн та чунне парса, вăй-халне шеллемесĕр ĕçлет, вăхăтне хĕрхенмест, санашкал хăйшĕн çеç çунмасть. Эпир хамăр ĕçе хамăр пĕлсе тăватпăр. Сан пата пырса пулăшу ыйтмастпăр. Ним ĕç те çук сан пирĕн ĕçпе те, председатель ĕçĕпе те. Тетпе тертленсех, тетпе çынна хур тусах хуралса кайрăн ĕнтĕ, намăссăр кĕççе пит. Хаклă юлташăм, тетĕн-çке мана? Каккуй юлташ пулма санпа, тункатапа. Ял халăххи ахальтенех наман пуль çав хушаматне те. Эх, шеремет, ниçта та пĕр тус-юлташ çук сан. Туссăр-юлташсăр çын вăл, тупата,— чăп-чăн тункатах.

Платтун вăкăрла пăхса илчĕ те ман çине, тем аса килнĕн, тăрхаларах каван пек пуçне вăлтăрт çавăрчĕ, мăйăхне пĕтĕрнĕ май пырне хыртарчĕ:

— Халăх çинче пулсан-и халь сана, шахтăра çĕр хупласа хуманскере, газпа чыхăнса çунса кайманскерне, ку сăмахсемшĕн... тӳрех актă çырмалла, çĕршывра революцилле улшăнусем пулса иртнĕ саманара çитменлĕхсене тăрă шыв çине кăларакана кӳрентернĕшĕн... хупса лартмалла. Кăна, çапах та, манмăпăр-ха. Ну, сана! Эх, пурнăç... çапла çав эс те, яла таврăннă хыççăн активиста кĕрсе кайрăн та, чăтаймасăр чуна уçса калакана юратмастăн. Пурте эсир пĕр урапа çинче. Пурте хĕсме хăтланатăр. Ахальтен-и пирĕн ăçта килчĕ унта арпашу, харкашу... Шавлаççĕ, кĕрлеççĕ, шантараççĕ, анчах пирĕн председатель пек кăтартса кăна çӳренипех ĕнтĕ пурнăç урапи лапкапікасепчен тухаймасть. Ăçта та пулин лăчăртлачăрт, шăтăрт-шатăрт тăватех. Шухăшла-ха эс лайăхрах, мĕншĕн тинĕсре пăрахутпа пăрахут пырса çапăнать, чукун çул çинче пуйăспа пуйăс хирĕç чĕвен тăрать, атом уççа вирхĕнсе тухса вилĕмле алхасать?.. Йăлтах çынсем хуравлăха çухатнипе. Çĕнĕлле шухăшламаннипе, чĕрисене улăштарса ĕçлеменнипе. Хамăр çумри пĕчĕк фактран вывăт туса тĕпче калăпăшĕпе шухăшлама пĕлес пулать

ăна... Акă, çырма юппи ман пахчана карта айĕпе шăтарса кĕрсе каять. Бригадирпа ял Совет председательне йывăç ларттарма кашни çуркуннех асăрхаттарса тăнă çĕрте ял эрозийĕ — пурнăç эрозийĕ сарăлать.

— Ху умăнти çырмана хăвăн йывăç лартса тĕреклетмелле ăна,— тесе малалла таплаттартăм. Платтун мана хуса çитсе чарчĕ те:

— Аха, килĕшмест сире, активистсене, критика,— терĕ куç айĕн пăхса.— Çапла çав вăл канăçсăр çын, ăшра капланнине çиелех кăларасшăн, калаçса, тĕнче илтмелле кăшкăрса йĕрке тăвасшăн, пурнăçа çĕнетсе лайăхлатасшăн. Тĕнче калăнăшĕпе янратмасан пире кам илтет? Тăпла-ха, Антарктидăра çав тери мăнă пăр ахальтен катăлса кайнă тетĕн-и эсĕ?

«Сан хăвăн чĕрӳнти ĕмĕрхи сив пăр катăлса каясчĕ!» — тесе тарăхуллăн шухăпласа илтĕм эпĕ.

— Юлашки вăхăтра унта та кунта çĕр чĕтрет, кисренет, тусем çинчен чул-юшкăн юха-юха анать — халăха пĕтерет, сиен кӳрет...

— Тĕнче тытăмĕнче, çутçанталăк аталанăвĕнче унта темле улшăну та пулма пултарать, Платтун. Мĕншĕн эсĕ тащти чăтлăха, инçет уçлăхне кĕрсе кайса пустуй чаваланатăн. Куçна çын анкартинелле кăна ан ывăт, каялла çаврăнса пăх та ху хыçăнта мĕн ларса юлнине лайăхрах асăрха.

Тунката Платтунĕ пĕр хĕрсе кайсан сăмахне каласа пĕтермесĕр нихçан та чарăнмасть, халĕ те вĕçнех çитерме хăтланчĕ пулас.

— Тĕнче проблемисене вĕсене йăлтах хамăр проблемăсемпе çыхăнтарса пама пĕлмелле. Мĕншĕн тесен эпир пурте пĕр çыхăра. Çук, начар ĕçлеççĕ-ха пирĕн ученăйсем те, нихçан пĕтмен энерги шутласа кăларассипе те çынсепчен юлаççĕ, çĕр чĕтреннине те чарса лартаймаççĕ, çанталăка та йĕркелесе тăраймаççĕ, пĕр пĕчĕкçĕ чăмăр çиçĕме те тытса усă курмалла тăваймаççĕ.

— Эсĕ ăна ху тытса пăх-ха пĕрре, Платтун, тыт та парăнтар, килӳнте электростанци туса тĕлĕнтер ял халăхне. Мĕнле пек, э? — чăтаймасăр ахăлтатса кулса ятăм эпĕ.

Килештермест хайĕнчен машкăллашине Тунката Платтунĕ. Тулхăрса илчĕ те ҫиллессĕн таварчĕ:

— Ах, сана, аҫа-ҫиҫĕм ҫунтарса ямалласкерне, ăсла ҫын сăмахне пуҫа хывма пĕлместĕн!

— Мана ҫиҫĕм ҫимест, аҫа ҫапмасть. Эпир хамăр — ҫиҫĕм йăхĕнчен.

— Сана кулă, а ман чун ыратать вĕсемшĕн. Ҫĕр ҫывраймастăп, пуҫ ыратакан пуличчен, ухмаха тухса кайиччен шухăшлатăп. Акă, анчахрах тепĕр хуйхă сиксе тухрĕ маншăн.

— Мĕн чĕмери тата?

— «Озон шăтăкĕ». Антарктидăра асăрхапă тет ҫавна ученăйсем. Хĕвел радиацине чăрмавласа тытса тăракан виҫĕ миллиметр хулăнăш чатăр кăна вĕт вăл, урăхла каласан, Ҫĕр лĕпки. Сарăлса кайсан ҫав шăтăк? Мĕн тăвăпăр? Сапламалла ăна хăвăртрах. Тăрăшсан, вăй хурсан, тем те тума пулать. Никаккуй та хамăр пата ҫитермелле мар ăна. Тĕнче лĕпки, Ҫĕр лĕпки шăтсан...— карттусне хывса пӳрнипе пуҫ тӳпине шаккаса кăтартрĕ Платтун.

Ҫав хушăрах ҫил ҫавăрттарса килчĕ. Ҫиҫĕм ялтлатрĕ. Хăрушă сасă яла кисретсе ячĕ. Тин хăпрĕ Тунката Платтунĕ манран. Эпĕ ҫаврăнтăм та:

— Эй, Платтун, Ҫĕр чăмăрĕн мар, сан хăвăн тăрри шăтăк пулас унта! — тесе кăшкăртăм.

Те илтрĕ вăл, те илтмерĕ ăна, пуҫне икĕ аллипе хупласа килнелле чупрĕ.

Ҫиллĕ-тăвăллă ҫумăр таврана кисретсе лӳшкерĕ. Мачча хăми тăрăх хуллен куҫакан хăнкăлана диван ҫинче сăнаса выртакан Тунката Платтунĕ розеткăран темле йăлтăр-ялтăрскер ҫуталса тухнине асăрхарĕ. Асамлă чăмăркка хĕмленсе алăк патнелле вĕҫрĕ, кăмака тавра ҫаврăнчĕ, диван тĕлне ҫитрĕ те, аллисемпе хăлаҫланса ҫĕклепме пуҫланă этем ҫамкине ҫапăнса, ҫурăлса кайрĕ.

Пушар тухнине курса эпир те фермăран чупса антăмăр. Хыҫалкас урамĕн вĕҫĕнче хăраххăн ларакан кивĕ пӳрт пит вăрах ҫунса пĕтрĕ. Ҫине тăрса сӳнтерес текенех те пулмарĕ пулас ăна.Кăмрăкна та кĕлне хутшăнса кайпă этем юлашкийĕсем вĕҫлешмен урăх улшăнăва куҫрĕҫ.

Çутçанталăк тĕлĕнтермĕшĕ — чăмăр çиçĕм — Тунката Платтунне тĕнче ыйтăвĕсене татса пама хăех пулăшрĕ.

# Курск шăпчăкĕ

Вăрçă хыççăнхи йывăр çулсенче ĕçсĕр аптăранипе урам тăрăх йытă хăваласа çӳрекен ача ялта пулман. Эс миçе çултине те, вăю пуррипе-çуккине те, хĕрачипе арçын ачине те ыйтса тăман: тем ĕç те тутарнă. Шкулта вĕреннĕ чухне пĕр каникулта та выляса-канса курман: хĕлле уя юр тытма, улăм турттарма кайнă, çуркунне колхоз çурт-йĕрĕ тавра тата вити тăрринчен юр хырнă, çулла вара... уйран кĕме пĕлмен. Пирĕн, «сăмса шывсен», ытларах хĕрарăмсем хушшинче тĕккелешсе çӳреме тиветчĕ, мĕншĕн тесен арçынсем вĕсем вăрман каснă çĕртеччĕ, платникреччĕ, трактор-машина патĕнчеччĕ е пуçлăхраштатраччĕ.

Шелсĕр çунтаракан хĕвел янкăр тӳпере хуçаланать. Унăн хĕрхенӳсĕр хĕрĕвĕнчен нимпе те пытанма май çук. Чикан ӳчĕ пек пулнă хурамкка кĕлеткесем тарпа йăлтăр-йăлтăр çуталса илеççĕ. Эпир, арçын ачасем, кĕпесене хывса пенĕ-ха, шăлаварсене те хывмалла, анчах труси-плавки тени çуккă. Çавăнпа вăтанатпăр. Хĕрарăмсемпе хĕрачасем вара çаплах тумтирпе мунчари пек пиçеççĕ. Вĕри сывлăш кăкăра пӳлет. Пĕр-пĕр кăтра пĕлĕт килсе тухинччĕ хăть пирĕн пуç тĕлне. Аçтан каплантăр ĕнтĕ çилĕ çук çĕртен пĕлĕчĕ! Ун вырăнне çил-тăвăл пек çавăрттарса бригадир çитет. Лашине тăрлатса трантас çинчен сиксе анать те вăл аллине чалăш патакĕ ярса тытать, черетпе тырă ани валеçсе пама пуçăнать. Ĕçкунĕ те ытларах тухтăр, çынран та намăс ан пултăр тесе, анне мана мăннисемпе танах лаптăк партаратчĕ. Виçĕ чалăш (ултă метр) анлăш вырса пымаллаччĕ эртелпе тан. Хӳрене юлса пăх-ха эс!.. Хăвăн ятна манса кайăн. Хальхинче анне авăн çапма кайнăччĕ те, ман пĕчченех ана тытма тиврĕ.

Çумра Ульяна акка вырать. Вăл, пиртен чылай тăварах пурăнаканскер, маншăн ютăрах пек. Çавăнпа ытлах

сӑмах-юмах вакланмасть пирӗн хушӑра. Пуç çӗклемесӗр тенӗ пек качӑртаттаратпӑр сарӑ тулла. Ульяна аккана хӑй пекех шурӑ пир кӗпе тӑхӑннӑ, чечеклӗ тутӑр çыхнӑ хӗрачи Василиса пулӑшать. Василиса, пиртен кӗçӗнрехскер, çурла тытма та , кӗлте çыхма та, тӗм тума та вӗреннӗ. Алли-ури амӑшӗнниччен те çаврӑнӑçуллӑраххи тӳрех курӑнать. Хӗрӗ пулӑшмасан, Ульяна акка ниепле те пирӗнпе танлашса пыраяс çук. Мӗштӗрккерех çынна эртелте йывӑр çав. Хевтиййӗ мӗнли тӗкӗр çинчиччен те витӗртерех курӑнать ӗçре. Хӑй тем чул хыпӑннӑ пек вырать, пурпӗрех ани малалла каймасть, хӑйпе хӑй хистесе ешкӗртсе пынипе пучах нумаи касӑлса тӑкӑнать. Бригадир курчӗ-тӗк, лайӑх тӗк тӑкать. Василиса амӑшӗ хыçӗнчен пучах пуçтарса хӑшкӑлать. Хирӗçсех каяççӗ вара. Амӑшӗ хӗрачине вӑрçма пуçлать: «Ах, çакна-çке, ашшӗ пек типтерлӗ, таса пулма тӑрӑшать-çке. Выр часрах, юлатпӑр!»

Вӑл вӑхӑтра ашшӗсӗр ача-пӑча туллиехчӗ те, Василисӑн ашшӗ камне те, ӑçтине те ыйтса тӗпчеме шутламантӑр. Хамӑр та ача пулнӑ-çке. Мана çакӑ çеç тӗлӗнтернӗ: мӗншӗн хитре мар хӗрарӑмах пукане пек чиперкке çуратнӑ-ха?

Ульяна акка пӳ-сийӗпе хамӑр бригада хӗрарӑмӗсенчен пӗртте кая марччӗ, сӑнӗ-пуçӗпе вара... Ятарласах ыттисенчен уйрӑмрах тӑвас тенӗ пуль-ши ӑна ашшӗ-амӑшӗ? Тем тесен те Ульяна аккан ашшӗ-амӑшӗсенчен хӑшӗ те пулин пӗрсӗртерех этем пулнӑ пуль çав. Ульяна аккан пичӗ-куçӗ мана темшӗн кинора курнӑ гномсен, клоунсен сӑнне аса илтерет. Тапчам çаврака питçӑмартисем хушшине пусса лартнӑ шӗпӗнлӗ сӑмси, сарлака тути, вылянчӑклӑ кулӑ юхтаракан асамлӑ куçӗ асран каймаççӗ. Сассийӗ тӗрлӗ хӗлӗх хушшинчен хӗсӗнсе тухнӑ пек чӗтренӳллӗ-хӗрӳллӗ. Кулса ярсан çӑвар тулли — тырӑ выракансем пурте пуçӗсене çӗкле-çӗкле пирӗн еннелле тинкереççӗ. Шурӑ пир кӗпи тӑхӑннӑ вӑтам пӳллӗ хӗрарӑм кӗлетки çине çутçанталӑк, мӑшкӑлланӑ евӗр, кулӑш чӑмӑркки лартса янӑ пекех туйӑнать. Василисӑнех йӑлт урӑхла. Хулӑ пек авӑнакан çиңçе кӗлетки писнӗ тулӑ кӗлти тейӗн, пуçне чикнӗскерӗн, куçӗсем унӑн хӑмӑл çумӗнчи утмӑл-

турат чечекĕпе пер теслĕн йăлкăшса çунаççĕ, хитрен сарăлса анакан сăмси тăрăх, çӳхе йĕр хăварса, тар пĕрчи юхать. Куштăрканă тути тар лекнипе выляниклаласа чĕтрет. Чĕлхине çулласа илет те хĕрача çав вырăна, ĕхлете-ĕхлете çурлине качăртаттарать, ывăнать пулас та, вăрăм кĕпе аркине çĕклемесĕрех чĕркуçленсе ларать, малаллах тапаçланать. Кĕлтине çыхма ун патне чупатăп. Çурлине хулпуççи çине çакнă Василиса эпĕ эхлетсе ĕçленине пăхса тăрать.

Кăнтăр апатне е кахал апатне ларатпăр та, таçтан вăл кĕрсе каять çак çинçешке кĕлеткене. Юрласа ярать те усăлсах çитмен янăравлă сассипе — пурне те хăй çумне туртать. Шăп пулса, хуйхăрса, хĕпĕртесе, хăпартланса итлеççĕ тырă выракан хĕрарăмсем, ача-пăча Василисăна. «Вăт ку Курск шăпчĕкех те Курск шăпчĕкех, артиста вĕренме çеç каймалла»,— тенине миçе хутчен илтмен. Мĕншĕн апла калаиине чылайччен ăнланман, пĕлмен.

Тепĕр уя куçсан пирĕн çума манашкал шаймăксем татах хутшăнчĕç. Ача — ачах ĕнтĕ, унăн выляссн те, куласси те пĕрлех. Ушкăнпа пупшех мĕн те пулин тăвас килет. Ульяна акка çаврăнса пахать те хыçалалла, тĕлĕннипе хытсах каять: хăмăл çинче унта та кунта пучахлă тырă тупи кăнтарса ларать. Пĕрне çурлапа касма хăтланать, теприне... Пурте çурла шăлĕпе çакланса çăмăллăнах тухаççĕ. Пире çурлипе юнаса: «Пулать сире, ачсем!» — тесе кăшкăрать те каллех ĕçе пикенет. Кĕлте çыхса ывăнчĕ тата. Вăл асăрхаман хушăра йăпăрт пĕрер ывăç хуратпăр та унăн çыххи çине, хамăр вăрттăн кулатпăр. Ултава сиснĕ Ульяна акка, пуçа пăркаласа, куçĕнчен кулă юхтарать. Сăнĕ-пичĕ камитленсе каять. Çурлине мăй тĕлне тытса кăтартать те вырма пуçлать. Эпир çакăн хыççăн хырăм тирĕ ыратиччен кулатпăр та лăпланатпăр, юлнă анасене кӳршĕсемпе таплаштарассипĕн малалла тапаçланатпăр.

Çурла-çава юрри çумне кĕçех уйра молотилка вăрăммăн ухлатса макăрни хутшăнать. Çыххине касман кĕлтепе çăтса яраймасăр чыхăнса асапланакан машина трактор моторне кĕç-вĕç чарса лартасла туртăнать. Пкĕ шкиф хушшинче чупкалакан сарлака хулăн чĕн хăю çатăлтти!

çatăltti! туса уçă çил кăларать. Çывăхри мăн каткаран карттуспа шыв ăсса тусанлă-хылчăклă пит-куçа йĕпетсе илетпĕр те капан кутне кĕлте йăтма чупатпăр. Ульяна акка кĕреплепе арпа туртать. Молотилка питĕ йывăррăн ухлатнă хыççăн трактор, пăк-пак туса, сӳнсе ларатех. Авăн çапакансем апатланма пуçларĕç. Çăмахпа хĕрлĕ помидор çисе яма пуçланăччĕ кăна, кĕлте купи хыçĕнче ахăлтатнине илтсе, ялтах çаврăнса пăхрăм. Ушкăн варрипе тăнă Ульяна акка аллисемпе хăлаçлансах тем ахăрттарать.

— Тăвар умми какăриччен персе лартрăм та хырăма, каткаран шыв ĕçсе ăша кантарас-ха, терĕм. Ав çав трактористсен тимĕр куркине ăсрăм та лăнкăртаттарма пуçларăм. Тăрук темле сивĕскер пыра кăтăклантарса илчĕ, анса кайиччен тесе ярса илтĕм карлапкăна, анчах каярах юлтăм çав, кăркк! тунă сасă çеç илтсе юлтăм. Хăсас теп, хăсăк тухмасть, пӳрне чиксе йĕкĕлтесе те пăхап, пурпĕрех йӳçĕ шĕвексĕр пуçне каялла нимĕн те хăпармасть. Турипăн та шапах пулчĕ пулмалла. Сĕлĕх-калта ун пек пулас çук.

Çынсем вар тытса кулаççĕ.

— Эй, тата, шапа вăл краççынлă-çуллă çĕтĕк татăкки мар-иç, вĕлерес çук, вăрçă тухнăраниа та аш-какай çисе курманскерне мана юрĕ-çке, терĕм те лăплантăм. Курск Курийĕ хăйсем Китайра ăшалапă шапа кăна мар, çĕлен те çинине каласа паратчĕ. Тутлă пулчĕ ку та. Шапи выçă вĕлермĕ-ха пире те, пĕвере нумай...

— Ха-ха-ха! — Эртел куллине вăйлатса трактор траталатма пуçларĕ, молотилка ухлатса илчĕ...

Çак кулăшла истори хыççăн камитле хĕрарăма Шапа Ульянĕ теме пуçларĕç.

Унтанна миçе çул иртрĕ ĕнтĕ. Нихçан кулянма пĕлмен Ульяна акка кукăрăлнă, ыйту палли пек курăнать. Туяпа. Куçĕ ĕлĕкхинчен самаях сӳннĕ, кулă вырăнне халĕ куççуль юхтарать. Кăнн пăхать. Ланчăк сăмси çинчи шĕпĕнĕ вăрăм тĕксĕмне витĕннĕ. Тути-çăварĕ йӳтенĕ. Мана вăл аллапшине çамки çине тытса, пуçне чалăштарса кĕтсе илчĕ. Хам каласап, тип палларĕ.

— Ватăлчĕ Шапа, каçхи тĕтре ăшне путрĕ,— терĕ, ас-

сăн сывласа.— Сан мĕлкӳне аякранах асăрхарăм-ха, сывхарса пынă май Курск Курийĕ пекех туйăнса кайрăн. Вăл та анатран çапла яртлаттарса хăпаратчĕ. Тумĕ çеç санни пек мар, вуеннăйччĕ. Атя-ха, эп сана ун карточкине кăтартап. Кури-мури, пур-и вăл, çук-и — пĕрех пулчĕ. Çăлтăр пек анса ларчĕ те ман ума, курса та юлаймарăм чун килениччен. Сӳнчĕ. Юрать хăй вырăнне тепĕр çăлтăр çутса хăварчĕ. Василисăпа йăпанса ĕмĕре ирттересчĕп. Вăл та аякран кăна çутатать...

Çапла калаçкаласа Ульяна акка мунчаран кăшт ысăкрах пӳрте илсе кĕчĕ. Пӳрчĕ тирпейлĕ, таса, тур кĕтессине тĕрленĕ шурă алшăлли çакнă. Унта çуллă сăрăпа ӳкернĕ турăш курăнать. Икĕ чӳрече хушшинче, кĕленчеллĕ рама ăшĕнче,— ысăклатнă сăнӳкерчĕк.

— Ак çак мулутеццă пулать ĕнтĕ вăл Курск Курийĕ — хăвăр ача чухне Курск шăпчăкĕ тесе кулакан Василиса ашшĕ,— çӳлелле куçне чарса пăхрĕ кил хуçи хĕрарăмĕ.— Ман пек мар чипер, пĕр кашăк шывпа çăтса ямалли хĕрупраçсем, хусах арăмсем пурччĕ те ялта... Мĕн тупнă-ши вăл Шапа çумĕнче? Хă-хă-хă. «Сан куçунти асамлăх ярса илчĕ мана, сăну чаплах пулмасан та, çав вăй сан çумах пăталарĕ»,— тетчĕ хăй. Эсир пĕчĕк ачаччĕ те вăрçă тухнă чухне, астăвас çук хамăр таврара салтаксем танине. Эх, утатчĕç рраслаттарса, урра кăшкăрса чупатчĕç, кĕрслеттерсе перетчĕç пăшалĕсенчен: çапăçма вĕрепетчĕç. Шартлама сивĕччĕ те, çывăрма яла килетчĕç. Пĕр камантирĕ ман пата лекрĕ. Ун чух ку пӳрт мар, атте-аннерен юлнă кивĕ пӳртчĕ, кăшт аслăрахчĕ. Кăна колхоз туса пачĕ. Пĕчченскерне сана çитет, терĕç. Килĕшрĕм те, анчах çав пĕччене тени чĕрене çурмалла касна пекех туйăнчĕ. Ара, епле пĕччен пулам-ха эпĕ, пăх-ха, пăх эс ун çине? Пӳртрех вĕт вăл, кунтах, манпах, юнашарах...

Куççульне çанă вĕçĕпе шăлакан Ульяна аккана хĕрхенсех кайрăм. Командир тумне тăхăннă çап-çутă сăнлă çарапуç çамрăк арçын шĕл-кăвар куçĕсемпе пире ыйтуллăн сăнать, чĕрĕлсе тăрассăнах, кĕç-вĕç сăмах хушассăнах туйăнать. Ватă хĕрарăмшăн вăл халĕ те хĕрӳ, çивчĕ çамрăк каччă вырăнĕнче пуль çав.

— Хĕрĕх пĕрремĕш çултанпа пĕртте улшăнман вăл,—

ман шухăша ăнланна пекех калаçрĕ Ульян акка.— Йăхха, йĕтĕн пек сарă çӳçĕ епле илемлĕн кăпкаланса тăрать. Çăраччĕ çӳçĕ, пĕрмай выляса шăлас килетчĕ. Василисăн та çӳçĕ унни пекех пулчĕ. Çамки тата епле сарлака, мăкăртса тăрать. Василисăнни пекех. Унашкал вут-çулăмлă çунтаракан куç эп ĕмĕрте те курман. Пулман ялта никамăн та. Çывхаричченех ура вăйĕсем пĕтетчĕç. Сăмсине те Василиса ашшĕннех илнĕ. Тути ман çур тута чухлĕ çеç. Юрать хĕрĕм хама мар, ашшĕне хывре. Юрлама ах çав тери ăстаччĕ. Шăхăрса та, шăпчăк пек хăвьиклетсе те, тем тĕрлĕ кĕвĕ кăларса та юрлатчĕ. Курск ятлă хула çывăхĕнчен, тетчĕ, карттă çинче те кăтартнăччĕ. Пиртен ытлашши инçех мар. Çавăнпа Курск Курийĕ тенĕ эпĕ ăна. Хушамачĕ — Удаловчĕ. Эх, ман телейсĕр шăпана...

Ульяна акка сак çине лаках ларчĕ, туйине сĕвсентерчĕ те икĕ аллипе пит-куçне хупăрласа тытрĕ. Ним калама антăрарăм. Шăплăха карчăк хăех хускатрĕ.

— Вăл пĕртте ватăлмарĕ, эпĕ вара сăнсăрланса, хăрушланса юлтăм,— хуйхăракан хĕрарăм куç айĕн сăпăкерчĕк енне тинкерчĕ.— Тĕкĕр çине пăхма хăракан пултăм. Никам та ĕненес çук халь çав мулутеццă вырăс каччийĕ ман упăшка пулнă тесе. Вырăсла-чăвашла çаптараттăмăрччĕ сăмахне. Çапах пĕрне-пĕри ăнланнă, мĕн тумаллине тунă. Авланманччĕ. Çирĕмре çеçчĕ. Эпĕ хам та унран икĕ çул кăна кĕçĕнччĕ. Пĕр каçхине килчĕ те çĕрĕпе çывăрмасăр калаçса выртрĕ. Ирпе сывпуллашрĕ. «Пире паян фрунта ăсатаççĕ»,— терĕ. Эпĕ те ăсатма тухрăм. Пĕри вĕрлĕк алăк ку енче, тепри тул енче тăратпăр. Эпĕ макăратăп, вăл мана пуçран шăлса ачашлать. Чăтаймарăм, персе ятăм: «Пирĕн, Кури, ача пулать...» Ман камаптир шаках хытса тăчĕ, унтан, тем пулнă пек ялт! сикрĕ те, мана йăтса килхушши тавра темиçе хут çавăрчĕ. «Пултăр, ӳстĕр,— терĕ савăпăçне ниçта хураймасăр.— Ывăл çуралсан, атте ячĕпе Василий хур, хĕр пулсан, анне ячĕпе Василиса ятне пар. Эпĕ сире вăрçă хыççăн хамăр пата илсе каятăп». Çук çав, уншăн вăрçин пуçламăшĕ çеç пулчĕ. Мускав патĕнчен хурлăхлă çыру килчĕ. Юлташĕсем çырнăскер. Ак çак карточкăна янă. Тем пекех тав вĕсене çавăншăн, мана сăнӳкерчĕкпе те пулин йăпатнă-

шăн. Çапла хĕрĕх пĕрремĕш çултанпах пĕрле вăл халĕ, пӳртрех, юнашарах. Вирçĕ уйăх пуранна-çке эпир. Çыранма ăс çитермен. Кайран ача çуралчĕ. Хĕрача. Ашшĕ хушнине итлесе, Василиса ят хутăм. Ялсуветĕнче хушаматне Удалова тесех çырчĕç. Çапла эпĕ салтак арăмĕ пулса юлтăм. Хам ăшра. Мана ялта никам та салтак арăмĕсен — тăлăх арăмсен — шутне кĕртсе хисеплекен çук, якăлтатса хĕрле ача тунă та пирĕнпе танлашасшăн тата, тесе мĕн чухлĕ хăртман пуль. Куляннипе вĕри куççуль таксах куçа çунтарса ятăм. Камантир арăмĕ те пулса пăхрăм, унран ача та çуратрăм, анчах чыслă ятпе çеç илтеймерĕм. Мĕн чухлĕ лькутă халь салтак арăмĕсем валли, патшалăхĕ хĕрхенет вĕсене, манăн çеç... Курск шăпчĕкĕн сассине итлесе чуна кантарма тивет. Авă, çав япрашка машинпе яр-ха?

Эпĕ тур кĕтессинчи сĕтел çинче ларакан «Астра» магнитофона ĕçлеттерме пуçларăм та, пӳрт ăшчиккине темле паллан пек уçă сасă янравĕ тулчĕ. Юрăç пите çĕклепӳллĕн, чунран шăрантарать чăваш юррине.

— Василиса вăл, пăх-ха, ашшĕ епле хăлхине тăратса итлет Курск шăпчăкне! Хушăран яратăп та вара, иксĕмĕр те вĕçне çитиччен итлетпĕр. Иккĕн итлеме те мĕн тери лайăх хĕрĕмĕр юррисене. Юри пирĕн валли çырса килсе парĕç. Ашшĕ пекех мулутеццă пулчĕ Василиса. Вĕренчĕ, кăнсерватури тенине те пĕтерчĕ, халĕ Шупашкарта пуранать, качча кайнă, икĕ ачаллă, хваттерĕ... Ман пӳрт патĕнче-и? Чĕнеççĕ, яланлăхах илсе каясшăн хулана. Ман кăмăл туртмасть. Мана ялтах, хам çуралпă кĕтесрех, хамăп юратнă арçынпах лайăх пуранма. Курп халĕ те чĕрĕ пекех, урамран чупса кĕрессĕпех туйăнать. Çавăнпа сапа пит тĕсесе сăнарăм. Уттусем пĕр пек те... Вăт, Шапа, шапăлтатса кайрĕ, чарăнма та пĕлмест, çапла-и? Каçар эс мана нумай тытпăшăп. Сана курса калаçпипе чуп уçăлчĕ.

Уп патĕнчен тухсан эпĕ хамăн ачалăха, хамăр аташăва, хамăр ял хĕрарăмĕсен шăпине аса илсе пытăм. Пирĕншĕн хитре мар куранпă камитлĕ сăплă хĕрарăм ăшĕпче мĕн тери илемлĕ çын сăнарĕ пытанса пуранать. Çăлтăр пек çиçсе илнĕ вилĕмсĕр юрату вăйĕ çăлкуç пек тапать

ватӑлнӑ хӗрарӑм ӑшчикӗпче, вӑл ӑна вӑй парса, ҫунатлантарса тӑрать. Ялта ку таранччен Шапа Ульянӗ ячӗпе пуранакан тӗссӗр, халӑха ытлашши хисеплӗн куранман карчӑка манӑн ҫакӑн хыҫҫӑн Удалов лейтенант арӑмӗ — паттӑр салтак арӑмӗ — теес килсе кайрӗ. Салтак арӑмӗсем усӑ куракан ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ куртарас килчӗ ӑна. Ан тив, хут ҫине ҫырса хуман пултӑр вӗсен юратӑвне хӗрӗх пӗрремӗш ҫулта. Анчах вӗсен юратӑвӗн ҫимӗҫӗ халӗ те чӗрӗ, халӗ те халӑх куҫӗ умӗнче. Клуб патнелле ҫывхарнӑ чухне урамри хӑватлӑ громкоговорительтен диктор сасси илтӗнчӗ: «..тава тивӗҫлӗ артистки Василиса Удалова юрлать». Хыҫҫӑнах Курск шӑпчӑкӗн уҫӑ сасси, хумлӑн-хумлӑн юхса, ял ҫийӗн янӑравлӑн саланчӗ.

# Упӑшкин палӑкӗ

Ял варринчи икӗ ҫырма хушшине лартнӑ клуба ачаранах астӑватӑп. Т саспаллипек пысӑк ҫурт пирӗншӗн вӑйӑ вырӑнӗччӗ. Шалта кӑвакарчӑн тулличчӗ. Кӗркунне типме махорка ҫакатчӗҫ.

Вӑрҫӑ чарӑнсан унӑн пуҫне туса кӗчӗҫ. Пӗчӗк залӗнче клубчӗ, коридор урлӑ вырнаҫнӑ икӗ тӑваткал пӳлӗмӗнче библиотекӑччӗ. Кӳршӗсемпе пӗрлешсен, колхоз вӑйланса пынӑ май, пысӑк залне те урайпа мачча сарчӗҫ, чӳречисене лартрӗҫ, сцена турӗҫ. Питӗ аванччӗ, Шупашкар артисчӗсем те ырлатчӗҫ.

Кӳршӗ ял пуҫне кирпӗчрен Культура керменӗ лартсан, Чеченкас клубне манчӗҫ, пӑхса тӑми пулчӗҫ. Майӗпен унӑн тӑрри ҫӗрсе шӑтса пӗтрӗ, вӗри шывпа ӑшӑтмалли хатӗр-хӗтӗрӗ ванчӗ. кино кӑтартмалли будка ишӗлсе анчӗ. Сӳнме пуҫларӗ ялти культура вучахӗ.

Ял халӑхӗн кӑмӑлсӑр сасси таҫта ҫитиех саланчӗ. Ман хӑлхана та кӗнӗччӗ. Эпӗ вӑл вӑхӑтра шӑпах яла таврӑнтӑм. Клуб умӗне иртсе пыратӑп. Ак тамаша! Пысӑк залпа коридор тӑррине пӑсса пӑрахнӑ та ҫӳлте иккӗн пӗренесене чиперех пӑчкӑпа татса антараҫҫӗ. Ҫӗп урамри Кулине кинемей аллинчи шупка тутӑрӗпе сулкаласа кӑшкӑрать:

— Мĕн тăватăр эсир, ачамсем?! Чарăнăр! Сире-и, пулать сире!

Чаш-чаш! чаш-чаш! юрлать пăчкă. Шултра кĕрпе пăр пек çăвать, хĕрарăм пуçĕ çине тăкăнса çӳçĕ ăшне тулать, куçне кĕрет.

— Пăрăн унтан, мĕн çухăран качакалла?! — хирĕç тавăрчĕç çӳлтен.— Тип вутă пулать, ташла! Хăвăра валлиех-çке, пенсионерсене пама хушнă. Пустуй янраса тăриччен илсе килесчĕ сăра. Ăш хыпать. Туххăмрах турттарса паратпăр.

Мана асăрханине Кулине кинемей пит-куçне йĕрсе ярасла пăркалантарса илчĕ, пулăшу шыраса пулас, хирĕç тăплаттарса пычĕ те йăлăнса ыйтрĕ:

— Эс те чараймастăн-ши?

— Шахтерăн пирĕнпе мĕн ĕç пур? Вăл хăй пĕлнĕ пек çӳрет, эпир хамăр пĕлнĕ пек ĕçлетпĕр. Пире хушнă.

Çапах та анчĕç хайхискерсем пирĕн пата. Кулине кинемей, тутăрне çыхса, йăлтăркка кăвак çӳç пĕрчисене майларĕ те куçĕнчен шăрçаланса анакан куççуль тумламĕсене çăта-çăта ятлаçрĕ:

— Хăвăр пӳртĕре татма хушсан та таттăр-и вара?— терĕ.— Эй, турă, мĕн туса хутăр эсир, ачамсем. Вĕт ку çурта сирĕн аçу-аннӳсем, пичу-аккусем ялĕпе пĕрле ушкăнланса турĕç. Вăрçă тухнă çулхи çуркунне пурине хăпартса, тăрă витсе пĕтерчĕç. Ман упăшка Хветут председательтеччĕ. Социализм парни пулать пирĕн яла, тесе çĕр çывăрмастчĕ унпăн. Вăрçинчен таврăнаймарĕ те... Манпăн çак клуб упăшкана асăнса пурăнмалăх палăк вырăнĕнчех шутланать. Чӳречерен пăха-пăха мĕн киленмен туса пĕтерсен. Халь эсир мĕн хăтланатăр? Ман Хветута çурмаран татнă пекех чашлаттарнăн туйăнчĕ те, çавăнпа хăшăлтатса çитрĕм çав. Ма пуçпа шухăшламалла мар-ши хуçасен те? Ах, Хветут хăй чĕрĕлсе тăрас пулсан-и çак самантра? Вĕрентмелле те хăйĕнчен кулнишĕн, мăшкăлланишĕн...

Пурте пухăнчĕç пирĕн тавра. Сăмах-юмах тепĕр майлă çаврăнса кайрĕ.

— Кулаççĕ мар-и пирĕнтен?

— Культура кермене икĕ çухрăм утиччен ял хуп-

шинчи хамăр клубрах савăнма аван мар-и?

— Хветут мучисем ял халăхне çутта кăларасшăн çуннă, эпир вĕсен çутине сӳнтеретпĕр-и?

— Нивушлĕ çак çурта этемле тытса тăма пулмасть?

Платниксене итленĕ май карчăк пит-куçĕнче те хĕвел шевли çиçрĕ. Анчах вăл нумая пымарĕ, хуçасем çитнипе тĕтре ăшне путрĕ.

— Ма ĕçлеместĕр? — ыйтрĕ строительсен хуçи.

— Киле кайма пуçтарăнтăмăр. Эпир клуба урăх пăсмастпăр. Материал тупса пар, юсама пуçлар.

— Çук-çук, пăсмалла. Кермен туса панă. Урăх мĕн кирлĕ? Сире пĕчĕк клубпа та çитет,— хушрĕ правленирен килни.

— Эпир унта спортзал тăватпăр,— терĕ пĕр çамрăк.

— Мачча каштн йăтăнса ансан, кам отвечать тăвать? Пуçĕсем çĕрĕшнĕ. Пăсăр, пăсăр! Ак, пенси карчăккисене çунтарма вут кирлĕ! — платниксене хӳтерме пуçларĕ строительсен хуçи.

Никам та вырăнтан хускалмарĕ. Унтан пĕри пăчкă, тепри пуртă йăтса пĕчĕккĕн саланма тытăнчĕç.

Кун хыççăн правленире урăхларах шухăш тĕвĕленет пулĕ тенĕччĕ. Çук, кĕтсе илеймерĕç пирĕн ялсем нимĕн ыррине те. Тара тытнă шапашниксем тепĕр темиçе кунтан клуба татса пайланă.

Кулине кинемее хуйхă çапса хуçнă. Килĕ умне турттарса пырса тăкнă кивĕ пĕрене татăкĕсем çинче куççульпе кулянса ларать.

— Çакăптах çĕрччĕр, çĕр пулччăр, Хветут çĕрĕпе пĕрлешчĕр хăть, çунтарса тĕтĕме кăларса вĕçтерме вăй-хал çитмест. Пĕтерчĕç мана, хуçрĕç, таптарĕç. Мана çеç мар, пĕтĕм Чеченкаса. Ял халăхĕнчен кулчĕç-ха та. Пăх-ха, мĕнле вăл халь, çав клуб тени. Кĕлеткесĕр этем пуçĕ пек. Пуç кĕлеткесĕр пулма пултарать-и? Эй, çук, çук... Ман Хветутăн çурчĕ те çавах. Хăй пуçне вăрçăра çухатрĕ, палăкĕн кĕлеткине пуççăр çынсем çунтарса ячĕç.

Ĕлĕкрех Т саспалли пек илемлĕн куранакан капмар çуртăн пуçне майласа типтерлесе лартрĕç ĕнтĕ. Çапах та вăл темле тăлăххăн, кичеммĕн ларать анлă лаптăкра. Пысăк зал пулнă вырăнта вĕлтрен ашкăрса ӳсет. Ун патĕн-

чен пртсе пыракан Кулине кинемей куççульне шăлса илет те хĕвеле хирĕç пăхса пăшăлтатать: «Этем пулатăр-и эсир, асăну хисенне пĕлменскерсем...»

# Хĕрлĕ пушмак

Кӳршĕри Евруç каçнă та аннепе пит хурлăхлăн калаçса ларать.

— Ытлашшиех ан хуçăл-ха, халь эс пĕччен ирĕклĕ пурăнма хăнăхнă та, сана ахаль тăвăрлантараççĕ вĕсем, кинӳпе ывăлу хăтланăвĕсем.

Евруç хыткан кĕлеткине туртăна-туртăна йĕрет, питне саппунĕпе шăлса илет те куççуль витĕр калаçать.

— Эс, инке, ун пек калан, ман кин вăл аçаçиçĕм вĕт, хуларан куçса килсенех йĕрке тума пуçларĕ те кил-çуртра, çаплах тем куçарать, майлать, улăштарать.

— Хăв та эс пит типтерлĕ-çке, теприн пӳрт ăшчиккинче такăнса ӳксе сăмсуна кататăн, сан ураю та яланах таптаса пулнă, сĕтел-пукану çинче те япала-мĕн сапăнса выртман, вырăну та йăлкăшса кăна тăратчĕ. Мĕн ытлашши тупăннă вара?

— Ним те мар. Пушмак. Хĕрлĕ танкетка, куçĕ-пуçĕ тип çуталса кайрĕ Евруç аккан.

— Э-э-э,— терĕ анне куларах.— Хайхи ху тевятăй майра тăхăнса ташлаканни-и?

— Çавă çав. Астăватăн пуль, ман вăл мăшăрĕнех сĕтел çумĕнчи тумбочка çинче ларатчĕ. Эпĕ ăна çулталăкра пĕр кун тăхăннă, çулталăкĕпе ун çине пăха-пăха савăннă. Юратнă каччă, пулас упăшка, илсе панăскер. Кин çеçтепи тӳрех ыйтрĕ: «Ку пушмакĕ тата мĕншĕн ытла пучутра?» «Пучутлăрап та пучутлăрах вырăна лартмалла та ăна ман, куптан чаплăрах вырăнĕ çуккă пӳртре»,— терĕм. «Навус куни çинче мар-и кив пушмакăн вырăнĕ? Ак сана хамăнне тăхăнтартап, чаплине парнелеп»,— тесе алăк патне кайса лартрĕ те ман танкеткăсене, чăматанран йăлтăркка путтинкăсем кăларчĕ. Парпешĕн тав турăм та хамăн танкеткăсене малтанхи вырăна лартса тумалла тухрăм. Кĕнĕ çĕре вĕсем алăк патĕнче выртатчĕç.

Ман та парăпас килмерĕ, кинĕн сăрламалли-сапăнмалли ăпăр-тапăрĕсене аяккалла сирсе, танкеткăсене малтанхи вырăна лартрăм. Кин сăнсăрран пăхса илчĕ те ман çине: «Вася, мĕн тумалла?» — терĕ тутине тăсса. Ваççук иксĕмĕре лăплантарнă хыççăн йĕркеллех пурăнаттăмăр. Ĕнер пульниçарап таврăнтăм та, хуйхи хирĕçех кĕтсе илчĕ. Тумбочка çинче те, çӳп шăтăккинче те, пӳрт умĕнчи кивĕ пушмаксем хушшинче те,— ниçта та курăнмаççĕ ман хĕрлĕ танкеткăсем. Киппе Ваççук çăвара шыв сыпнă пек чĕнмеççĕ. Ыйтсан та каламарĕç. Çĕр çывраймарăм, хамăн пурнăç çулĕпе çĕнĕрен утса тухрăм, ак халь сан пата чупса килтĕм, инке. Чĕнсе илсе килсе хам валли хамах чĕр пуша тупрăм. Кама айăплас...

Евруç аккан çӳхе çӳçне хыткан аллипе шăла-шăла ларчĕ те анне, эп йăпăрт тухса кĕрем-ха тесе, вăшт çухалчĕ, чăлантан шурă татăкпа чĕркенĕ япала илсе кĕрсе сак çине хучĕ. Çыхха салтрĕ те анне, Евруç акка умне хĕрлĕ пушмаксем тухса выртрĕç.

— Инке?! Тавах сана, тавтапуçах. Ăçтан тупнă эс ман танкеткăсене?

— Ăçтан? Авă, хăвăр умри тислĕк купи çинчен. Ăçтан пултăр тата. Хăвна «Васкавлă пулăшу» илсе кайнă кунах куç тĕлне пулчĕç йăмăхса выртакапскерсем. Кайса илтĕм те чĕркесе хутăм, упрарăм, акă, тăхăнса çӳре, ташла...

Çав вăхăтра алăкра Евруç акка кинĕ курăнса кайрĕ.

— Анне, апат çимелле, сана кĕтетпĕр,— чĕнчĕ вăл тӳрех.

Хыпăнса ӳкнĕ Евруç акка аллине çеç сулчĕ:

— Каккуй апат шухăшĕ халь, тăрантарпă эс мана, аванах, акă, пыртах ларать, вĕлереттĕр мана кулянтарса. Лар вăл кутна хĕстерсе, итле, тахçанах каласа парасшăнччĕ те эп сире, Ваççукпа иксĕре, уп çинчен, пĕрре кӳрентĕм те...— кинĕ енчен куçне вĕçертсе, аннене ыталаса илчĕ вăл.

— Мана эс, инке, ку парнене çамрăклăха тавăрса патăн. Астăватăн вĕт эп Шупашкара вĕренме кайнине?

Анне хашш! сывларĕ те:

— Астумасăр çак,— терĕ,— куç умĕнче ӳсрĕр те. Правлени ларăвĕсенче, ял Совет сессийĕсенче пĕрле хĕрсе ка-

лаҫаттӑмӑр. Эс ял ҫамрӑкӗсене мӗн кӑна тутармастӑнччӗ, «Хӗрсем — трактор ҫине!» текен чӗнӳ сарӑлсан, никамран малтан ху мӑтӑсӑна чавтартӑн. «Выҫӑллӑ-тутӑллӑ ӳснӗскерӗн, ҫав тимӗр урхамаха ҫӑварлӑхласа тытса пыма вӑйӗ ӑҫтан ҫитет-ши ку черченке чечекӗн»,— тесе тем чухлӗ те кулянни саншӑн. Хӗрарӑмсен трактор бригадине ертсе пынӑ чухне пӗтӗм Чӑвашра чапа тухсан, ялӗпех пурте савӑннӑ. Шупашкара ҫити депутата суйлантӑн та. Халӗ те манман пухӑва килнӗ мӑтӑсӑ директорӗ мухтанине: «Тутӑр ҫыхнӑ юланутҫӑсем карттус тӑхӑннӑ юланутҫӑсене хыҫала хӑвараҫҫӗ». Маттурччӗ ӗнтӗ, мӗн калӑн, ҫавӑнпах ячӗҫ пуль сана ун чухне вӗренме.

Хӑпартланнӑ Евруҫ акка хӑйне ҫак самантра тӗп хулари пекех туйрӗ пулас, хавасланса-ҫунатланса кайрӗ, чунтан каларӗ:

— Йӗпе кӗрпе сивӗ хӗл те, чечеклӗ ҫурхи кунсем те вӗлтлетсе кӑна иртсе кайрӗҫ, ӑшӑ ҫу ҫитрӗ. Экзаменсем хыҫҫӑн туйра ташлама тесе, Хӗрлӗ площадьри лавккара мана хамӑн каччӑ хӗрлӗ тӗслӗ танкетка туянса пачӗ. Анчах кӗтнӗ савӑнӑҫ каҫӗ вырӑнне хӑрушӑ хыпар персе ҫитрӗ: «Вӑрҫӑ!» Ҫунатлӑ ӗмӗт пирӗн те хӑрӑк турат пекех шартлатса хуҫӑлчӗ. Ҫимуна салтака ӑсатнӑ хыҫҫӑн, пуйӑспа Шупашкартан таврӑннӑ чухне, пуҫра ҫирӗп шухӑш тӗвӗленчӗ: «Фронта каятӑп!» Ку ӗмӗт те пурнӑҫланмарӗ ҫав, мана тылра хӑварасси ҫинчен пӗлтерчӗҫ. Кунпа килӗшмерӗм. «Эпӗ трактористка вӗт, нивушлӗ унта мана танкетка та пулин шанса памӗҫ»,— тетӗп. «Саншӑн кустӑрмаллӑ трактор танкетка вырӑнӗнче, ҫапӑҫу хирӗ колхоз уйӗнче пулӗ»,— тесе ҫирӗппӗн хушрӗҫ ҫеҫ. Йӗрки ҫирӗп, пӑркаланса тӑраймастӑн. Ҫӗнӗ пушмакпах колхоза ҫитрӗм. Трактор бригадин бригадирӗ кулать: «Ку майра ӗҫлеме мар, уҫӑлса ҫӳреме капӑрлапса тухнӑ тем?» «Ничево, ку танкеткӑсем ман савӑнӑҫ саманчӗ валли туяннӑскерсем, анчах пулмарӗ савӑнасси-куласси, ҫитӗ-ха вӑл вӑхӑт та, ун чухне вара вӗсене тӑхӑнса ташлӑпӑр»,— ҫапла каласа урари ҫӑмӑл пушмаксене хывса чӗркерӗм, тимӗр ещӗке хутӑм, кутамккаран кӑларса ҫӑпата сыртӑм. Тӑватӑ кустӑрмаллӑ «танкеткӑна» тапратрӑм та уй тӑрӑх малалла кӗрлеттертӗм.

Васçук арăмĕпе эпир вĕсен каласăвне хутшăнмарăмăр, тăнласах итлесе лартăмăр.

— «Пурте фронтшăн, пурте çĕнтерӳшĕн!» тесе çырса çапнăччĕ эс фанерпа трактору çине,— аса илчĕ анне.— Эсĕр те, эпĕр те чĕрĕм куç хупмасăр кутĕрленеттĕмĕр. Кăнтăрла — уйра, каçхине — авăн çинче... Эх, хĕрарăма пуснă йывăрлăха виçес пулсан... Чăтнă çав, пилĕке тӳрлетнĕ те, хулпуççисене сиктеркелесе сирсе янă та ăна — малалла пăхнă, пуçа усман, тӳснĕ. Вăйлă пулнă вĕт, Евруç?

— Ан та кала-ха, инке, вăйĕ таçтан тухатчĕ. Çамрăк пулнă çав, хальхи мар. Вăрçă кĕрлевĕнче çамрăклах ватăлса юлнине те сисмерĕмĕр. Краççын-мазут шăрши пирĕншĕн духи-одеколон вырăнне пулнă, çав шăршă ĕмĕрлĕхех çапса ларчĕ ӳт-тире. Халĕ те туятăп ăна. Эх, йывăр çулсенчи пĕр купа нихăçан та манас çук. Хамăр колхозри Шывпуç уйĕнче иккĕмĕш смена улшăнмасăр ĕçлетĕп. Хăтăзă майĕпен лăрласа ырать. Хĕвелĕ тем пулнă пек çуптарать. Куç хупăнсах ларать. Çырма хĕрринчи улăм купи çинче вылякан ывăлăма пăхса илетĕп те чĕрĕлетĕп. Ял енчен бригадир пушар тухнă чухнехи пек чупса килет. Ача патĕнче вăл та чарăнчĕ, эпĕ те «танкеткăна» тăратрăм. «Вăрçă чарăннă!» — ик аллине çĕклесе кăшкăрать бригадир. Çак сăмахсене илтнипе пĕр хушă хытса лартăм. Бригадир: «Илтетĕн-и, Евруç, çĕнтерӳ!» тесе тепре кăшкăрсан тин тăна кĕтĕм. Тимĕр ещĕкрен танкеткăсене кăлартăм та вара çăпатана салтса пăрахрăм. Хĕрлĕ пушмаксене тăхăнса, сип-симĕс çерем çине сиксе антăм, Васçука кăкăр çумне пăчăртаса çаврăнма пуçларăм. «Танкетка» моторĕн кĕрлевĕ çумне тăрисем юрланă сасă хутшăнчĕ. Çав хăнăхнă çемĕне уйра бригадир умĕнче вăтанмасăрах Çĕнтерӳ ташши ташларăм. Тăватă çула тăсăлнă хурлăх хыççăн савăнăç саманчĕ тинех çитрĕ. Савăнăçĕ пурнĕрех çурмалла çеç пулчĕ — Васçук ашшĕсĕр тăрса юлчĕ.

Евруç акка сăнĕ тăрук тĕксĕмленчĕ. Пĕр хушă чĕнмесĕр ларчĕ вăл, унтан хĕрлĕ пушмакĕсене майĕпен тăхăнчĕ, радиона паракан кĕвве илтсе тӳрленчĕ, аллисене пилĕкне тытса каçăрăлчĕ, «Эх!» терĕ те çинçе сассипе,

тăпăр-тăпăр! тутарса таша ячĕ. Çитмĕлти карчăк уринчи тĕсне çухатман танкеткăсем чӳречерен ӳкекен хĕвел шевлине йăлтăртатса йăлкăшрĕç. Çав çутă ватă трактористкăн пит-куçне çамрăклатса ячĕ, хавасна алă çупса тăракан кипĕп ничĕ çине ӳксе йăлл култарчĕ.

# Çĕрĕ

Тимĕрçĕ Тимукĕн Улатимĕрĕ яла таврăннăранпа хăйне тепĕр хут çуралнă пекех туять. Эрне ытла ĕнтĕ вăл синетлĕ сывлăша çăтса тăранаймасть. Типĕ тăнă çанталăк хыççăн хавшанă çĕре шăваракан ăшă çумăр пекех имлентерет вăл тунсăхпа чирленĕ ăшчике, кăмăл-туйăма çĕклентерсе урама, йăмрасемпе тирексен айне, хăвалать.

Юратать Улатимĕр пӳрт умĕнчи симĕс кавир çинче ларса-выртса канмашкăн. Акă паян та вăл, ута кĕртсе пĕтернĕ хыççăн, çăл кутĕнчи лĕп шывпа чӳхенчĕ те, сатин шăлаварпа тельняшка тăхăнса, çаруранах урамалла тухса кайрĕ, ăшăхланнă шăтăк хĕррине ларчĕ, кĕмĕлленнĕ çăра çӳçне пӳрнисемпе хыçалалла тураса якатрĕ, вăрăмах мар майăх уикисене пĕтĕркелерĕ.

Йывăç тăрринчи йăвасем тавра хура курак ушкăнĕ явăнать. Анатарахра шăпчăк хăфьиклетсе илет те, çырма леш енчи Кĕттер Кĕтеринĕсен сад пахчинчен ăна хирĕç тепĕр шăпчăкĕ ăнтăлса йыхăрав сасси кăларать.

Улатимĕр пуçа çĕклесе пăхрĕ те... Пахча алăкĕнчен тухнă хĕрарăма курах кайрĕ. Ара, шкула пĕрле чупнă, урам вăййисенче юнашар ташланă-юрланă, хĕр чухне хĕрхенмесĕр юрату вучахĕнче çунтарса асаплантарнă Кĕттер Кĕтеринĕн Кĕтерукĕ сукмакпа асăрханса лупамалла анать. Пуçĕнчи чечеклĕ тутăрĕ кăчăк туртнăн вĕлкĕшет, чĕркуççирен çӳлерех çĕкленсе силленекен кĕпи аркийĕ хумхатнă сывлăш хумĕ пит-куçа ачашнăн килсе çапса, пĕрле вĕçтерсе илсе килнĕ асамлă ӳсĕртӳ сывлăшĕпе кĕлеткене хытарса çĕклентерет.

Кĕтерук çăл умне çитсе хулпуççийĕ çинчен кĕвентине антарчĕ, икĕ витрине те çĕре лартрĕ, пуçне каçăртса ка-

рӑнчӗ, кӗппине тата ҫӳлерех таварса пиҫиххинчен ҫаклатрӗ те ҫӑлкуҫ умӗнчи кӳлленчӗкре тем ҫума пуҫларӗ. Хушӑран пуҫне ҫӗклет те вӑл каллех хӑйӗн ӗҫне пикенет.

Тӑрсан, чупмалӑх та ҫук ӗнтӗ, сиксен, вӗҫмелӗх те ҫук, умрах, сип-симӗс ҫырма урлӑ ҫеҫ, ҫӑлкуҫ умӗнче пӗшкӗнсе кӗпе-йӗм ҫӑвать Кӗтерук. Шӑмпӑлтатнӑ сасӑ та илтӗнет. Анчах темшӗн-ҫке ҫӗкленеймест, ҫӗртен уйрӑлаймасть Улатимӗр, пӑталанӑ евӗр урисене усса ларать.

Эх, Кӗтерук-пӗтерук...

Апшӗпе пӗрле вучах хӗмлентерсе хӗрнӗ тимӗре йывӑр мӑлатукпа тӳнккесе ывӑннӑ хыҫҫӑн Улатимӗр ҫав ҫӑлкуҫ синелле, шӑпчӑклӑ ҫав сад пахчи хыҫнелле чупатчӗ...

Эх, Кӗтерук-пӗтерук..

Ҫурҫӗр Флотӗнчен ҫиҫсе таврӑннӑ старшина, апшӗ хыҫҫӑн лаҫра тимӗрҫӗ хӗскӗчне тытса юлма ӗмӗтленнӗ ҫӗртенех, юрату пӑтӑрмахне пула, хуланалла тапса сикрӗ.

Эх, Кӗтерук-пӗтерук...

Хулара хурҫӑ шӑратма вӗренсе завода лекнӗ хыҫҫӑн Улатимӗр вӗрекен чунне юратнӑ ӗҫре пусарчӗ, ял ятне те, апшӗ-амӑшӗн ятне те ямарӗ. Авланса икӗ ача ӳстерчӗ. Виҫӗмҫул вара унӑн чӗри ҫурӑлас патнех ҫитрӗ. Пӗрле пурнӑҫа ӗмӗрлеме тупа тунӑ арӑмне рак чирӗ кӑшласа ячӗ. Кӑҫал вӑл аҫлӑра пенсие тухса ялах килес терӗ.

Эх, Кӗтерук-пӗтерук...

Сан та пурнӑҫу ӑнмарӗ-мӗн. Энтриел Энтрипянӗ сана манран илсе никамах та савӑнтараймарӗ. Кӗттер Кӗтерипӗ, тӑлӑх арӑм, кӗрӳшне киле кӗртсе, ҫемьере арҫынлӑ пулас терӗ пуль те... Тулли куркана алӑран яма шутламан алкаш ватӑ хӗрарӑмпа ҫамрӑк хӗрарӑмӑн чунне ҫунтарчӗ ҫеҫ. Хӑйӗн чунӗ те эрех сӗрӗмӗпе таҫти усал сывлӑшпа вӗҫсе кайрӗ. Унтанпа ӗнтӗ виҫӗ ҫул иртрӗ. Пӗччеnex-ши халӗ эсӗ?»

Кӗтерук кӗпи аркине вӗҫертсе ярать те пилӗкне тӳрлетсе каҫӑрлать, тутӑр айӗнчи ҫӳҫне майланҫи туса Тимӗрҫсен ҫыранне вут-ҫулӑмлӑ куҫ хӗлхемне сапса ярать, пӗр витрине ҫунӑ япалисене хурса, теприне ҫӑлкуҫ шывне ӑсса кӗвенте пуҫӗсене ҫаклатать те, йывӑррӑн ҫӗклесе, ӗнси ҫине ҫакать, кӗлеткине пӑркалантарса тӑваллла хӑпарма тытӑнать. Вӑрман хыҫне пытанма тӑхтаса

тăнă хĕвел хăйĕн хĕрĕвне улăх тăрăх чуптарса çитрĕ те çăлкуç умĕнчи кӳлленчĕк çийĕн йăлкăшса çутатрĕ, чĕрĕ тĕкĕр хĕмленĕвĕ хĕрарăм кĕпи çине ӳксе куçа шартарчĕ. Çав хĕрӳлĕх, хĕрарăм кĕлеткин хĕрĕвĕпе пĕрлешсе, пиçсе çитнĕ шăранакан хурçă пекех туйăнса кайрĕ Улатимĕре. Шăп хăйĕн вăхăчĕпе юхтарса кăлармалла лĕкĕртетсе вĕрекен шĕвеке вĕри алтăртан. Кĕтерук кĕлетки, çунса çухалакан хĕвел шевлипе шĕлкăварлапса, алăк хыçĕпче курăнми пулать. Шăпчăксем асса кайнăн çырмана янраттараççĕ.

Тек чăтаймасть Тимĕрçĕ Тимукĕн Улатимĕрĕ, чалт! сиксе тăрать те унталла чупса каять, выртса çăлкуçран мехле-мехле шыв ĕçет, ăшне кантараймасăр тăрать те валак пуçне хунă кĕмĕл çĕрре курах каять, ăна палласа илнĕ хыççăн, тăвалла чупать. Кĕтерук сукмакĕпе чупать-чупать, анчах вĕçне тухаймасть, ывăннипе тăсăлса ӳкет те месерле выртса тайăлнă уйăх çине ăмсануллăн тинкерет.

Уйăх çинчен Кĕтерук вăрттăн пăхать пек. Унăн çур пичĕ йăлтăр-йăлтăр çиçет, çур пичĕ тĕксĕм. Хăрах витрийĕ курăнмасть, тепри чалăшнă та, унтан симпыл юхать, Улатимĕр çăварне пĕрчĕн-пĕрчĕн тумлать. Тимук ачи ăна ĕçсе ӳсĕрĕлсе каять. Пуçĕ кашлама тытăннипе вăл анраса ӳкет. Кĕтерук кула-кула симпыл тăкать. Улатимĕр ĕçет, ĕçет çав астармăш шĕвекне, унăн анрасурăхлантаракан шăршипе чыхăпа-чыхăна хашкаса сывлать, вăта пӳрнине тăхăнтарнă çĕрĕ çине пăха-пăха тĕлĕнет: «Эх, Кĕтерук-пĕтерук, манăн çĕррĕмех вĕт ку. Вăйăра яланах «Ик аллăма сулкалама кĕмĕл çĕрĕ кирлĕ» тесе пĕрмай юрлаттăнччĕ те, Кĕтерин патша сăнне ӳкернĕ кĕмĕл укçаран тимĕрçĕ лаççинче хам ăсталаса панă манăн пĕрремĕш çĕррĕм, сана парнеленĕ вутлă çĕррĕм. Ха, эсĕ ăна упратăн иккен. Мĕншĕн манса хăвартăн-ха çăлкуç кутне? Мĕншĕн, кала?»

«Сан валли! Сан кăмăлна усмашкăн! Юри сана аса илтермешкĕн!» — илтĕнет çӳл тӳпереи. Хăлхана юрă такăкĕ вĕçсе кĕрет: «Ах, çĕррĕм-çĕррĕмçĕм, сан çукка-çке пуçламăшĕ те, вĕçĕ те...» Самрăксем магнитофон кĕрлеттереççĕ. Юрăç сăмахĕсене Кĕтерук сасси хупласа хурать:

«Ухмах эс, Улатимӗр, чӑн та Ула тимӗрӗм. Ҫав юрра ӗнепетӗн. Пӑх-ха лайӑхрах, куҫна чарарах. Пур вӗт пуҫламӑшӗ?»

«Пур, пур иккен ҫӗррӗн те пуҫламӑшӗ! — савӑнса кӑшкӑрса ярать Улатимӗр.— Авӑ, варринче унӑн пуҫламӑшӗ. Варринче! Шӗвӗр прутукпа шӑтарнӑччӗ те ҫав майра патшана, пӗчӗк мӑлатукпа шакка-шакка шӑтӑкне аслӑлатнӑччӗ, хӗррисене хӗрсе кайичченех сӑтӑра-сӑтӑра якатнӑччӗ, ун хыҫҫӑн ҫӗрре санӑн вӗри пӳрнӳ ҫине тӑхӑнтартса янӑччӗ...»

«Тимӗрпе ҫеҫ ӗҫлеме пӗлнӗ ҫав эсӗ, Кӗтерин патшана шӑтарма кӑна пултарнӑ, айванкка,— илтӗнет Кӗтерукӑн илӗртӳллӗ сасси.— Мана ҫӗрӗ парнеленӗ чухне те хӑравҫӑ мулкач пек чӗтреттӗн те, пилӗкрен тытма та хӑяймастӑнччӗ те, ҫумри хӗре Энтриелӗнчи Энтрияна куҫ хупсах парса ятӑн та... Тен, манӑн та парнешӗн парнепе савӑнтарас килнӗ сана. Хамӑн ылтӑн ҫӗррӗме тӑхӑнтартас шут пулнӑ. Анчах лекмерӗ ҫав ун чухне сана ҫавӑ хӑв нихҫан курман-пӗлмен ҫулӑмлӑ чӗрӗ ҫӗрӗ. Нумай еркӗнлӗ Кӗтерин патшана ҫеҫ пултартӑн шӑтарма хӑвӑн прутукупа. Халӗ вара... Акӑ, ил халӗ те пулин хӑвӑн ӗмӗрӳпе кӗтнӗ ҫӗррӳне. Ил!»

Уйӑх ҫинчен ҫӗрӗ тӑкӑнать те тӑкӑнать. Улатимӗрӗн ҫӳлелле кӑнтарнӑ вӑта пӳрни ҫине тулать те тулать: алмаз ҫӗрӗ, куҫлӑ ҫӗрӗ, ылтӑн ҫӗрӗ, кӗмӗл ҫӗрӗ...

«Ман Уйӑхӑм, ман Ҫӑлтӑрӑм! Мана ан ман. Ан!» — ҫав ҫӗрсене пӳрни тавра ҫавӑрттарса чӗнет Улатимӗр.

Акӑ, Уйӑх тавра Энтриелӗнчи Энтриян сулкаланса ҫаврӑнать, аллисемпе кармаша-кармаша Кӗтерук витри патнелле туртӑнать. Анчах нпепле те ун патне ҫитеймест. Кӗтерук ҫухалнӑ упӑшки енне шурӑ куҫпа пӑхса илет те алӑ сулать: «Ултавҫӑ пултӑн эсӗ, Энтриян. Манӑн ҫӗррӗме мӑшкӑл майпа туртса илсе мана пурпӗрех ӑшӑтаймарӑн. Ман ҫумра Улатимӗрӗн кӗмӗл ҫӗрри ялан кӑмӑл уҫҫи пулнӑ. Лӑпӑлан та ан хӑвӑн вырӑнпа. Каплӗн ҫывӑр мамӑк ҫӗр айӗнче. Эпӗ виличчен те пулин савӑнтарам хамӑн чӗрӗлнӗ юратӑвӑма симпыл сапса, ҫӗрӗ парса. Каҫар мана. Яр вараланчӑк аллусене. Ан ҫывхар шӑршлӑ ҫӑваруна. Каҫар, ар... Ар мар тек эсӗ маншӑн, ҫупатту ху-

ҫӑлнӑ. Ар... мар. Ярр! Ар мар... Ман ар... Пусӑ тӗпне кӗмӗл ҫӗрӗ ятӑм, Улатимӗр. Анса пӑх та, мӗн куратӑн, хӑпар ҫавна тытма, Улатимӗр. Хӑпар хӑвӑртрах. Хӑпар!»

Кӗтерук чалӑштарнӑ витринчен тӑкать те тӑкать симпылне, персе парать те парать ҫӗррине. Яп! та япп! каять тӗнче уҫлӑхӗнче Энтриянӑн хӑрӑлтирех сасси: «Кӗтерук, ан пар ман ҫӗрре Улатимӗре. Вӑл шӑтарман ӑна. Вӑл ман, манн. Ан ман, вӑл — манн!..»

Куҫа уҫать те хупать Улатимӗр. Хӑлхара пӗчӗк мӑлатук сасси... Куҫ умӗнче Кӗтерин патша. Аслӑланса пыракан кӗмӗл шӑтӑк. Чанк! Чанк! Хӑййӑрр! Хӑййӑрр!.. Ҫӗр ҫине кӗмӗл пӗрчи йӑлтӑртатса тӑкӑнать. Ҫӗр ҫине симпыл чарӑнмасӑр юхать. Уйӑх ҫинчен вӗҫекен ҫӗрӗ, ӳксе, ҫӗре чӗртет, чӗтретет, сиктерет. Улатимӗре ывӑтса ярса уралантарать. Улатимӗр мӑйӑх вӗҫӗсене пӗтӗрсе пӳрнисемпе шӑклаттарать те аялалла чупса анать, ҫӑлкуҫ кӳлленчӗкне пӗшкӗнсе пӑхать. «Пусӑ тӗпне кӗмӗл ҫӗрӗ ятӑм, Улатимӗр, мӗн вӑл, тупсӑмне туп»,— илтӗнет хӑлхара хӗр чухнехи Кӗтерук сасси. Улатимӗр тинкерсе пӑхать-пӑхать те, шыв тӗпӗнче таврана хӗм сапса йӑлкӑшакан ҫӑлтӑра курах каять. «Манӑн Ҫӑлтӑрӑм!.. Манӑн...» — тесе ҫӗр сӗткенне касӑхса кайса ӗҫме тытӑнать Улатимӗр. Ӗҫет, ӗҫет, ҫӑлтӑрне те шывпах ӗҫсе яма хатӗр ӗнтӗ, анчах тапса тӑракан ҫӑлкуҫӗ шӑла шӑнтакан шывне юхтарсах тӑрать. «Куртӑн пулсан мӗн курмаллине, Улатимӗр, хӑпар хӑвӑртрах ман патӑма. Хӑпар!» — чӗнет асамлӑ сасӑ. Сӑмсипе вӑрӑммӑн сывласа ярать те Улатимӗр, шыв ҫийӗ хумханнипе, Ҫӑлтӑрпа Уйӑх пӗр йӑлтӑркка ҫӑмхана ҫыхӑнса ташша яраҫҫӗ.

Тӑрса лӳчӗркеннӗ шӑлаварне шӑлса якатать те Улатимӗр, Кӗтерук утнӑ ҫара ура йӗрӗпе анкарти хыҫнелле хуллен мекеҫленсе ҫывхарать. Ют алӑкран ютшӑнса кӗрет. Унтан сарай алӑкне уҫать, пӗчӗк пахча алӑкне... Пӳртум алӑкӗ умӗнче чаранса тӑрать те, уйӑх ҫутинче хура ҫаврашка варринче хӗрлӗ пӑнчӑ ҫине пӑхса тӗлӗнет. Пусмалла ҫеҫ ӑна. Пуссассӑнах пӳртре шӑнкӑрав янӑрӗ. Ӑна хирӗҫ Кӗтерук сиксе тухӗ, алӑка уҫӗ... Пӗрре пӑнчӑ ҫине пӑхать те Улатимӗр, тепре — Уйӑх ҫине. Пӑнчӑ та чӗмсӗр, Уйӑх та тӗссӗр. Пӳрнери ҫӗрӗ ҫеҫ чӗрӗ. Хӗрнӗ

кĕмĕл ӳте ирĕлтерсе ярассăн пĕçертет, алла çунтарать, кĕлеткене вутлантарать, чĕрере пушар кăларать. Паçăрхи тĕлĕклĕ-хумхануллă самант иртсе кайнă хыççăн Уйăх çинчен тек тăкăнмасть ĕнтĕ симпылĕ, Уйăх çинчен тек вĕçсе анмасть ĕнтĕ çĕрĕ. Уйăхĕ те, авă, вăрттăн кулнăн, кăтра пĕлĕт хыçнелле шуса кĕрет. Улатимĕрĕн мĕнпур лăпкăлăхĕ те, мĕнпур ĕмĕчĕ те халĕ çав хĕрлĕ пăнчă çинче çеç. Пăх-халĕ ăна, хура çаврашка ăшĕнчи хĕрлĕ пăнча, этем пекех, куçне чăлл уçрĕ те чĕрĕлчĕ, арçын аллине шăлавар кĕсйинчен кăларттарса çӳлелле çĕклеттерчĕ, шĕвĕр пӳрнипе хăй çине пустарчĕ.

Хăйĕнчен хăй хăранипе Улатимĕр вĕриленсе кайрĕ, электрица выранне чĕри ĕрĕхсе чупса кĕрсе илемлĕ кĕвĕ кĕмĕллентернĕн туйăнчĕ. Шăнкăрав хыççăнах шалта шăкăр-шакăр турĕ, чӳрече ялл! çуталса кайрĕ, ура сасси илтĕнчĕ, кĕçех алăк уçăлчĕ те... çӳхе кĕпе тăхăннă Кĕтерук ун умне юмахри пек тĕттĕмлĕхрен çуталса тухса тăчĕ, хĕрарăм ăшшипе çап-çурăмне вĕрилентерсе ячĕ.

— Кĕр, Улатимĕр. Тахçантанпах кĕтетĕп сана.

— Мана?! Мана-и? Чăнах мана кĕтетĕн-ши? Тĕлĕкре мар-ши эп? Çĕрĕ...

— Ан чĕтре, Улатимĕр. Каччă чухнехи пек мулкач мар пуль эсĕ? Упа вĕт, упа-утаман халь эсĕ. Ан вăтан, чуптуман каччăмçăм. Ут хам хыççăн. Хăюллăн.

— Акă, санăн çĕррӳ, Кĕтерук. Çăлкуç умĕнче тупман пулсассăн, тен, хăю çитерейместĕмччĕ те пуль сан уру йĕррисем çине пусса утмашкăн.

— Эпĕ кашни куп каçалапа сапа курас тесех тухатăп вĕт çăлкуç патне. Шывшăн мар. Кĕпе-йĕм чӳхеме те мар. Шывĕ вăл килкартинчи çăлра та туллиех. Кнопкăна пусмалла çеç. Энтрияи вилес çул моторпа уçламалла тутарттарса хăварчĕ.

— Ил, илех çĕррӳне, Кĕтерук,— чĕтрекен пӳрнинчен кăларса хĕрарăмăн вĕри пӳрнипе тăхăнтартса ячĕ Улатимĕр кĕмĕл çĕрре.— Эсĕ ăна ку таранччен сыхласа хăварма пултарнă-çке.

— Пултарнă. Пултарнă çав, Ула тимĕрĕм. Эсĕ аçун тимĕрçĕ лаççинче мăлатук шаккаса, вĕркĕч вĕртерсе çамрăклăхна ирттертĕн. Çынсем...

— Çынсем урăххине шаккаса, урăх вĕркĕч вĕртерсе...
— Ан калаç кирлĕ мара, чун савниçĕм...— Кĕтерук ăна икĕ аллипе те мăйран çавăрса илчĕ, вĕриленсе ирĕлнĕ тути хĕррисемпе питне йĕпетсе унăн çунакан тути çумне сĕртĕнчĕ те çыпçăнса ларчĕ. Хирĕç çунтаракан тута хĕрĕвĕпе чыхăнса кайнă май аллисене ластăрах усрĕ.— Кĕтерин патшана шăтарса тунă кĕмĕл çĕрре тепĕр хут парнелетĕн апла эсĕ мана, Улатимĕр, Ула тимĕрĕм, çутă тимĕрĕм, кĕмĕл тимĕрĕм, ылтăн тимĕрĕм. Атя, ут хам хыççăн...— Кĕтерук пӳлĕм алăкне уçса ячĕ.
«Миçе алăк витĕр кĕтĕм ĕнтĕ,— ăшра шухăшласа кулнă пек пулчĕ Улатимĕр.— Татах алăк пур-ши?»
Кĕтерук çутă сӳнтерсе симĕс-кĕрен тĕслĕ лампа çутрĕ те:
— Эпĕ ĕнтĕ хăçантанпа калаçса выртатăп санпала. Эсĕ çырманалла пăхса ларнине куртăм та. Анлантăн пуль, терĕм. Кĕтетĕп-кĕтетĕп сана, йăрăмлă упана,— терĕ тельняшка айпелле аллине ярса.— Эсĕ çаплах килместĕн. Куç умĕнчен каймa пĕлместĕн. Куç умĕнчен... Ан вăтанса тăр. Ан... Ах, эсĕ ман... Юри хăвартăм вĕт çĕррĕме хывса. Хыв... Юри... Ан...
Хăй умĕнче урăх алăк çуккине туйса илнĕ Улатимĕр хăюллансах Кĕтерук еннелле тукмак аллипе тăсрĕ.
Улатимĕр вăхăт картне те вĕçертсе ячĕ ĕнтĕ. Унăн халĕ каччă чухнехи ниçта кайса кĕрейми йывăрлăх лавне пушатнăн, Кĕтерин патша çĕрĕ вырăнне тупăннă Кĕтерук çĕрĕ уйăх çине каялла вĕçсе тарассăн, кăштах чалăшнă тута хĕрринчен юхса таракан симпыл типсе ларассăн туйăнчĕ. Тарланă çамкипе пуç вĕçĕнчи алшăллипе шăлса типĕтрĕ те вăл пĕшкĕнчĕ, паçăр çырмари çăлкуçран антăхса шыв ĕçнĕ пек юрату çăлкуçне пуçне чикрĕ.
Эх, Кĕтерук-пĕтерук...
— А-ах, эсĕ манăн ĕмĕрĕмпе кĕтнĕ юратуçăм, чупăмçăм, аллă çулта тин алла кĕтĕн-çке. Мĕншĕн ăнланма та, туйма та пултараймап-ха эпĕ хамăн хĕрарăм телейĕ юпашарах, çырма леш енчех çуралса ӳснине. А-ах!.. Турриех çырнă пуль ире иксĕмĕре çак тĕлĕкре аташмашкăн. А-ах!..
Улатимĕр пуçне аяларах, аяларах чикет, çĕр тĕпĕнчи

вылякан хĕмлĕ çăлтăра ĕмсе çăтса ярас патнех çитет. Çырма кӳлленчĕкĕнчи аякри çăлтăр халĕ ĕнтĕ ытарлă вăйпа хăех сывхарса, сывхарса пырать, Улатимĕр куçне шартарса ярать.

«Пусă тĕпĕнче санăн мĕнле çĕрĕ çутăлса выртнине те куртăм, унăн вут-çулăмлă хĕрĕвĕ мĕнлине те туйрăм, хамăн тахçанхи юратăван тупсăмне тинех тупрăм. Эх, Кĕтерук-пĕтерук...» — тĕлĕкри пек йăпануллă шухăшпа пăтранса выртрĕ тĕпсĕр тинĕсре ишекен, хурçă шăратакан Улатимĕр,— ял канлĕхне путнă Улатимĕр.

Чечекленнĕ хĕрарăм аллинчи кĕмĕл çĕрĕ тĕксĕм уйăх çуттинче шурăмпуçченех ташларĕ. Тухăç енчи чӳречерен вăтануллăн сăрхăнса кĕнĕ ăшă шевле çĕрĕ çинчи юрату сывлăмне çут тĕнче хĕрĕвĕне хĕмленсе çăтрĕ.

# Кĕве çинĕ юрату

Укахви вите пуçĕнчи пӳлĕме кĕрсе хăма сак çине ларчĕ те шухăша путрĕ. Çамрăклăх аса килчĕ. Машук ятлă тантăшĕпе путекле сиккелесе çӳренĕ вăхăтра ăна-кăна туйманччĕ-ха вăл. Хĕр пĕвне çитерехпе Машук тавра каччăсем пыл хурчĕ пек явăннинчен тĕлĕне пуçларĕ. Унăн вара вăйă картинчен хăр пĕччене тавăрнма тивет. Киле çитсен тĕкĕр умĕнче çаврăна-çаврăна тăнран кайрĕ. Пӳ-сине яштака пулин те, хитрелĕхпе турă пӳрмен ăна. Хур çăмарти евĕр тăрăхларах тухса тăракан питçăмартисем, сарлака тăрăллă лапчăкрах сăмса, хулăн тута хĕррисем, симĕс куçĕсем.

Кулянниие вăрттăн йĕрсе те пăхрĕ, явкаланчăк чипер тантăшне кĕвĕçрĕ те...

Амăшĕ çакна сисрĕ пулас, ăшшăн лăплантарса каларĕ:

— Ан кулян, хĕрĕм. Кашни çып вăл хăй çĕр çинче пурăннипе хитре. Илемпе мар пулсан, ĕçӳпе, кăмăлупа ырă ята тивĕçлĕ пул.

— Ах, аннем, калама кăна çăмăл. Эс ав мĕнле чипер. Куçусем пиçнĕ çĕмĕрт пек хуп-хура. Питӳ çавракa. Кĕлеткӳ те, урусем те пăхма мĕне тăраççĕ,— амăшĕн кăкăрĕ çине пуçне хурса пăшăлтатрĕ Укахви.

Амăшĕ пуçĕнчен ачашласа йăпатрĕ.

— Çӳçӳ те аçунни пекех çемçе, çамку та аçунни пекех сарлака, кĕлеткӳ те ун пекех вăйлă. Йăлтах аçуна хывнă, пурнăçра та унран ӳксе юлмăн-ха, намăс кăтартмăн.

Лăпланнă Укахви вара тек хуйхăрма шутламарĕ. Экзаменсем тытнă кун, каçалапа урама тухсан, пихçанхинчен хаваслăрах юрласа ташларĕ. Машук хыççăн каччăсем чупнăшăн тĕлĕнми пулчĕ. Амăшĕ каланине аса илчĕ: «Тиллĕн тирĕ хăйĕншĕнех тăшман пулнă, тет, хĕрĕн те хитрелĕхĕ тепĕр чухне çавнашкалах».

Укахви фермăна чăх пăхма кĕчĕ, Машук правление шут ĕçне вырнаçрĕ. Кĕçех пĕр вĕçкĕн киномеханика качча тухрĕ те, телейне çеç кураймарĕ, вăрман чечекĕ пекех хăвăрт шанчĕ. Типрĕ. Ĕçекен упăшка çамрăк арăмпа пĕчĕк ачине тăлăха хăварчĕ. Укахви техникума кайса кĕчĕ, вĕренсе тухсан, ферма заведующийĕ пулчĕ. Анчах... пумайлăха мар. Ун тĕллĕн пуç çине пĕр вĕре çĕлеп вĕçсе анчĕ.

Кĕпитун Моляков пулчĕ уншăн çав ылхаплă çĕлеп. Кĕве йăхĕ таврара мĕн авалтанпах усалпа паллă пулнă. Финанс техникумĕ пĕтерне качча пĕр хушă районта ĕçлерĕ. Шукăль тумланатчĕ. Чĕлхи ĕнтĕ, ай-яй, ним мар çынна вичĕ пуспа сутăп илет. Хĕр вăл айвантарах çав, çуллă сăмаха тутлă çăмах вырăннех хурать. Клубра паллашнă хыççăнах Укахви ăна ытараймарĕ, ун майлă çаврăнса кайрĕ.

Ашшĕ-амăшĕ пĕртен-пĕр хĕрне Кĕве Кĕпитунне качча пама хирĕçчĕ. Аслашшĕ те пӳрнипе юпасах асăрхаттарчĕ: «Тем, йăнăшатăн пек туйăнать, мăнукăм. Ытла çынна çиме юратакан йăх. Шутсăр лайăх пĕлетĕп эпĕ вĕсене. Телей тупасса шанмастăп. Туяп эп, ват çын. Тен, тăхтатăн качча тухма?»

Çынна итлет-и хĕр уп пек чухне? Кам çăварлăхлама пултартăр-ха яшлăх хĕрӳлĕхне? Качча каймa хатĕрленнĕ хĕре тытса чариччен çăвакап çумăра чарса лартма çăмăлрах, тет. Юрату ултавĕн сывлăшĕпе антăхса кайнă Укахви те вăрттăн качча тухрĕ. Упăшки икĕпитлĕхне майĕпеп туйса пыма пуçласан тин вăл хăй мĕп тери йăнăшнине ăнланчĕ. Ача çуралсан пĕр хушă чирлесе выртрĕ,

Пульницаран тухсан ӑна тепӗр хура хыпар ҫапса хуҫре. Кӗпитун ун тантӑшӗ патне ҫӳреме пуҫланӑ иккен. Машук хӑй те пытармарӗ. Ӗҫсе ҫӳрекен упӑшки уншӑн арҫын ячӗ ҫеҫ-мӗн. Кӗпитуна кӑмӑллать. Ҫакӑн хыҫҫӑн Укахви тантӑшӗнчен кӑна мар, упӑшкинчен те сивӗнчӗ. Ҫемье арканче. Ывӑлӗ, Михала, шкула каятчӗ ӗнтӗ. Укахви ашшӗ килне каялла таврӑнма шутламарӗ. Нуша урапи ҫине кил-йыш хирӗҫленине пӑхмасӑр хӑпарса ларчӗ-ҫке. Намӑс. Колхоз вӑл вӑхӑталла пурӑнмалли ҫуртсем лартма тытӑннӑччӗ. Правлени пӗр хваттерне Укахвипе ачине пачӗ. Тӑлӑх арӑма тӑлӑх хӑвармарӗҫ. Ҫавӑнтанпах икӗ ял хушшинчи Ҫӗн урамра пурӑнаҫҫӗ.

Кӗве Кӗпитунӗ те, Укахви те урӑх ҫемье йӗркелеймерӗҫ. Кӗпитун, районра вӑрҫса-хирӗҫсе пӗтнӗ хыҫҫӑн, ӗҫсӗр тӑрса юлчӗ. Ялта ӑна колхоза йышӑнчӗҫ, правленире ӗҫ тупса пачӗҫ. Ҫук ҫав, унта та пӗрмай тем чакаланчӗ. Ун шучӗпе, председательпе бухгалтер колхоза ҫаратаҫҫӗ, хӑйсем ҫеҫ пуяҫҫӗ. Ҫынра нихҫан та ыррине курасшӑн мар, ялан ӑна ҫурӑм хыҫӗнче таптасшӑн. Пӗлсе ҫитрӗҫ усала. Правленирен тухса ӳксен, Кӗве пушшех хаярланчӗ. Сирпӗтет те сирпӗтет таса ҫынсем ҫине наркӑмӑш.

Укахви тӗлӗнет: мӗн тупнӑ-ши Машук ун ҫумӗнче? Упӑшки виличчепех вӑл ӑна хӑй ҫумне туртатчӗ те, арҫын кирлӗрен-ши? Уншӑнах ҫав икӗпите, путсӗре юнашар ҫывӑхлатмалла-ши?

«Эх, Машук, Машук, хитрелӗхӳ сан пустуях сая кайрӗ, манран тем пек чиперкке пулсан та, пурпӗрех телей кураймарӑн. Ман хӑть сӑн-пуҫӗ те чаплах пулман-ха, пӗччен пурӑнма туррипех ҫырнӑ пуль. Эс ӗнтӗ арҫынпах пурӑнатӑн. Мана кирлӗ мар унашкал вӗре ҫӗлен. Анчах йӗркеллех мар-ха санӑн. Чирлетӗн. Ӗҫкӗпе аташатӑн. Ҫавӑнпа сӑну ват карчӑкӑнни пек халь сан. Хамӑн сӑнпитне таплаштармастӑнах. Ытла хуралса, тӗксӗмленсе лартӑн. Кӗпитун та кӗҫех пӑрахать, акӑ. Вара эсӗ никама кирлӗ мар сӗтӗрӗнчӗк пулса юлатӑн. Юл, юл. Ылханатӑп сана. Эс хӑвӑн хитрӳпе яла тӗлӗнтернӗ вӑхӑтра та эпӗ хам илемсӗрришӗн пайтах макӑрнӑ. Кайран та саншӑнах куҫҫуль тӑкмалла пулчӗ. Халӗ йӗместӗп. Ӑнланатӑп, пӗлетӗп, телей тенине эсӗ те, Кӗпитун та тупайман.

Эс колхозра пилӗк авса ӗҫлемерӗн, ӗҫпе ятлӑ пулаймарӑн, урӑххипе кӑна... Кӗпитун усалпа санран та ытларах чапа тухрӗ. Эпӗ халь, пӗччен пулсан та, хама хам сирӗптен темиҫе хут телейлӗрех тесе шутлатӑп. Ман юратнӑ ӗҫ пур. Юратнӑ ӗҫре — савӑнӑҫ пур. Эпӗ пурнӗрех хитререх халь...»

Ҫак шухӑшпа ӑшра калаҫса лараканскер, вӑл асӑрхаман та ферма слесарӗ Малаш Аркашӗ витене килсе кӗнине.

Ура ҫине йывӑррӑн ҫӗкленнӗ хӗрарӑм Аркашӑн кушак аҫиннн пек ҫуталса кайнӑ куҫӗнчен шӑтарасла пӑхрӗ, хӑйне шухӑш тӗпчинчен пӑрса янӑшӑн ӑна вӑрҫса тӑкас килчӗ унӑн, ҫиллине ирттерсе ячӗ те, лӑпкӑн каларӗ:

— Ирттерех килмеллеччӗ. Тислӗк транспортерӗ юсавсӑр.

Малаш Аркашӗ хӑмӑр куҫӗне хӗрарӑма нихҫан курман ҫынна сӑнанӑ евӗр тӗрӗслесе тухрӗ, аллине ун патнелле тӑсрӗ, тытма хӑяймарӗ, пуҫне чалӑштарса ҫӳлелле пӑхрӗ те:

— Пӗлетӗп-и, Укахви, ҫӳл тӳпере миҫе ҫӑлтӑрпе? — терӗ.

— Эп хӑпарса шутламан. Эс, мӗн, ҫӗрӗпех ҫӑлтӑр сурӑп-им?

— Эс ан кул. Шутлакансем пирӗнсӗрех пур. Астрономсем ҫӑлтӑрсене сакӑрвун сакӑр ушкӑна пайланӑ. Ҫӗрле пӗлӗтре ахаль куҫпа икӗ пин ҫурӑ ҫӑлтӑр курма пулать, тет.

— Вӗсен ӗҫӗ ҫав. Пирӗн хамӑрӑн ӗҫ. Кала-ха, мӗн тума кирлӗ пулчӗ халь сана купта ҫӑлтӑр?

— Хӑ, мӗн тума... Вылява... Ҫӑлтӑрсемпе выляҫҫӗ вӗт. Хӑ, мӗн тума, тет. Тытма... Ҫӑлтӑр тытма...— ҫак сӑмахсемпе Малаш кӑвак тӗслӗ халатне хывса пӑтана ҫакма пуҫланӑ Укахвие нилӗкрен ячӗ илчӗ.

Укахви вӑйлӑ кӗлеткине пӗррех туртӑнчӗ те вӑшт ҫеҫ ҫаврӑнса Аркаша тӗртсе ячӗ. Малаш кӗтесри улӑм купи ҫине чаштӑртатса лаплатрӗ.

— Ҫӑлтӑр тытасшӑн-ха апла? — хӗрелнӗ питне ывӑҫ тупанӗпе шӑлчӗ Укахви.— Арӑмун сашунӗпе витӗнсе ҫӳлелле пӑх. Унта сан валли ялапах ҫӑлтӑр пур. Тытма та

пултаран, вылямa та пултаран унпа. Ют тĕнче тӳпине ан кармаш.

Малаш Аркашĕ упаленсе ура çине тăчĕ те, намăс курнишĕн вăтанса, калаçăва урах еннелле пăрчĕ.

* * *

Укахви ĕçрен нихçан та халатпа таврăнман, ĕçе те халатпа кайман. Ферма шăршине лерех хăварма тăрăшнă. Çăвăнса тасалмалли мунча-душ тунă хыççăн, таса çӳремесен намăс та. Ял хушшине тухнă чухне йĕркеллĕ тумтир тăхăнман çынсене ачаранах кăмăлламасть вăл. «Капла эсир хăвăра хисенлеместĕр»,— ялан аса илтерет вăл «пире тусанпа пылчăк ăшĕнче те пырать» текенсене.

Тирпейлĕхе Укахви амăшĕнчен хăнăхнă. Фермăна васкаканскер, вăл çитсă кĕпе, хĕрлĕ кофта, шурă пушмак тăхăнчĕ, аллине сехет çыхрĕ. Ялти парикмахерскинче кăтралатнă çӳçне майларĕ, тĕкĕр умĕнче темиçе хут çаврăнчĕ, унтан тин урама тухрĕ, хĕпĕртӳллĕн тăвалла утрĕ.

Ферма картишĕнче никам та курăнмарĕ. Укахви витене кĕчĕ, çак кунсенче çăвăрланă амасене пăхса çӳрерĕ. Хаврунь та авă, хуçине палласа кăмăллăн нăрăхлатса илчĕ, хăйне çурăмĕнчен лăпканипе канлĕн хускалкаларĕ. Çурисем пурте пĕр кĕтесре çывăрса выртаççĕ. Укахви халат тăхăнса ярса çĕрле пухăннă тислĕке транспортер хăйăвĕ çине купалама пуçларĕ. Тасатса пĕтернĕ хыççăн сыснасене тепĕр хут пăхса çаврăнчĕ. Хаврунĕ хальхинче хăяккăн выртнă та, çурисем ăмăртса чĕчĕ ĕмеççĕ, пĕри çеç ĕмме çитменнине нăйкăшкаласа илет. Ăна Укахви пӳлĕме йăтса кайса сĕт ĕçтерчĕ, унтан сак çине сĕвенсе урисене тăсса хучĕ, çурана икĕ чĕркуççи хушшине хупса халатпа витрĕ. Кĕнеке вуласа çĕркаç сахал çывăрнăччĕ, сисмен те, вăл çаплипех тĕлĕрсе кайнă.

Сысна çури чĕрнине урисене чавтарнипе тата нăриклетсе çухăрса янипе шартах сиксе вăранчĕ вăл. Куçа уçса пăхрĕ те хăй умĕнче тăракан шăрт сухаллă Малаш Аркашне асăрхарĕ. Тапса ярас тенĕччĕ те, ури çитмерĕ. Аркаш пӳрнине ĕмсе мăкăртатать:

— Çыртать тесе ахальтен каламаççĕ иккен. Шăллă,

мур илессшĕ. Пӳрнерен юн кăларчĕ, явăл.

— Ара, кам хушнă сана аллуна унта яма? Çапла çав, шăллă эпир, çыртатпăр! — тулхăрса илчĕ Укахви.

— Эп, мĕн санпа киленсе тăтăм-тăтăм та...— пуçне кăтăрт-кăтăрт хыçрĕ Аркаш.— Халат айĕнчи чĕптĕрлĕ кĕпӳне витсе ярас тесе алла тăсрăм çеç... Сысна çури пуçĕ курăнчĕ...

— Мăшкăллаттарам, ак, эп сана? — чалтах сиксе тăчĕ Укахви.— Сухална хырасчĕ, шăлна-çăварна тасатасчĕ, аллуна çăвасчĕ хĕрарăм патне çывхариччен. Марш, халех тасалнă пул кунтан! Транспортерна юса!

— Эпĕ... мĕн... Юратап сана...

— Мĕн хур аçи пек каçăрăлса тăран? Ак, сенĕк илсен... Юраттарăп пĕрре.

Малаш, пӳрнине ĕмсе, тухса кайма васкарĕ. Укахви сысна çурине ачашла-ачашла, амăшĕ çумне кайса ячĕ.

Фермăри ĕçсене майлаштаркаланă хыççăн вăл ял тărах тухма шутларĕ. Хĕрарăмсен канашне йĕркелесе пыма хушнăранпа канăçне пушшех çухатрĕ. Хăш-пĕр пенсионеркăсемпе пĕчĕк ачапа килте ларакан хĕрарăмсем ĕçкĕ еннелле сулăнни ăна хытах пăшăрхантарать. Кун пирки вăл пухусенче те, радиопа та сахал мар калаçать. Хăйсемпе тĕл пулса пуплени тата ытларах усă паре тесе шутларĕ хальхинче.

Темиçе киле кĕрсе тухнă хыççăн Укахви Машуксем патне те çитрĕ. Машук выльăх-чĕрлĕх усрамасть, вĕрлĕкпе картланă кил хушшине курăк пусса илнĕ. Хăлтăр-халтăр пусма картлашкипе хăпарса алăка тĕртрĕ. Шалтан питĕрнĕ. Чӳрече хашаккĕнчеп шаккасан шăв-шав илтĕнчĕ. Кĕç Кĕве Кĕпитунĕ сиксе тухрĕ те мухмăрла сассипе кăшкăрчĕ:

— Машук! Хăна килчĕ. Сик тĕпсакайне! Туртса кăлар мĕн пуррине!

Мунча пек пĕчĕк пӳрте кĕрсен, хăсăк килтерсе, сăмсана çĕрĕк сывлăш пырса çапрĕ. Урайĕнче мĕн кăна сапаланса выртмасть-ши? Вырăнне пуçтармап. Сĕтелĕ таса мар. Çӳçĕсене усса янă, лӳчĕркеннĕ сатин кĕпе тăхăннă Машук хура урисене хуçлатса сак çинче ларать. Сăнĕ пăхма та хăрушă. Куçĕ-пуçĕ алчăранă. Тути хĕррисем

типсе кăвакарнă. Чĕлхи-çăварĕ аран çаврăнкалать. Вăл питне ывăçĕпех хупларĕ те ӳлесе йĕрсе ячĕ:

— Пĕт-нĕ...нĕ çын эп. Ук... Укахви. Кĕп... питун санна та суй-нă. Ман-на та. Сан юр... юра-туна та, ман-не те çи-рĕ Кĕв... кĕ-ве. Ви-лес кил... килет. А-а-аахх, тур-рă...

Вăл çапла хӳхленĕ хушăра Укахви чӳрече çумĕнчи çакăнса тăракан сăнӳкерчĕке сăнаса пăхрĕ. Астăвать вăл ăна хăçан ӳкерттернине. Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн вĕсем район хулине пасара кайнăччĕ. Çавăн чухне Машук тантăшне хистесех фотографие илсе кĕчĕ. Иккĕшĕ юнашар ларса асăнмалăх сăн ӳкерттерчĕç. Акă вăл, Машук, паянхи пекех, сатин кĕпепе. Яштака кĕлетки çинче вăл ытла та çыпăçуллă курăнать. Хулăн çивĕт, кăшт чалăштарнă пуç. Чăп-чăмăр питçăмартисем тăп-тулли.

Тулалла тухса кайнă Кĕве Кĕпитунĕ йĕп пек çухалчĕ. Укахви ăçталла пăхнине асăрханă Машук урайне тантăшĕпе юнашар анса тăчĕ, аллипе хăлаçланса тем калама пикенчĕ, анчах сăмахĕсем ăнланмалла тухмарĕç. Уптан вăл çавăнтах тӳшек çине лап кайса выртрĕ, урнă йытă пек ӳлеме пуçларĕ.

# Сип-симĕс тăраллă тусем

Сĕтел хушшинче тăлланса ларнă Нина каллех пуçне усрĕ. Куç хупсан та, уçсан та Родоп тăвĕсем куçран каймаççĕ. Сип-симĕс тăраллă, юмахри пек илемлĕ Родоп тăвĕсем..

Автобус çĕлен пек авкаланса выртакан ту сулĕ çине тухрĕ. Çӳлте авалхи крепость курăнать. Гид сăмахĕсене Нина пит тăнласа итлет. Çӳллĕ, хуп-хура çӳçлĕ вăл, Расçейрен килнĕ хăнасен ушкăнне ертсе çӳрет. Валентин ятлă. Çур сехет каярах çеç туристсемпе ерчĕ те хăй, ун çинчен Нина урăх нимĕн те пĕлмест. Пурĕпĕр гид тахçантанпа пĕлнĕ çын пек туйăнчĕ. Çурăмпа ларнăскер, çаврăнса та пăхмасть. Çапах Валентинăн хулăн куç хупаххисем, йăлтăртатса тăракан куçĕсем, тăрăхларах питçăмартийĕсем, курпунтарах сăмси, кăпăшка тути умрах пек, лайăхах курать пек уп сăнне Нина. Сасси те хăлхарах.

Тăвалла хăпарса тăватă хутлă отель умĕнче чарăнсан тин Валентин тăчĕ те хаваслăн пĕлтерчĕ: «Юлташсем, эпир Памнорована, Иван Коларов ячĕпе хисепленекен сăрт-ту курортне çитрĕмĕр, каçчен канма пултаратăр». Туристсем автобусран тухма пуçларĕç. Нина вырăнтан та хускалма хăрарĕ, малалла, тата малалла каяс, гид сăмахĕсене вĕçĕмсĕр итлес килчĕ унăн.

Вĕсем кунта эрне канчĕç. Хĕр Пампоровăра ыйхă çухатнине Шупашкарта пĕрле ĕçлекен Венерăсăр пуçне никам та тĕплĕн пĕлеймерĕ пуль. Венера çеç унăн кашни хусканăвне, ăшран тухакан вут-кăвар çулăмне курса тăчĕ, чунри улшăнăвне чĕрипе туйрĕ.

Вĕсен пӳлĕмĕ хĕвелтухăç енче. Сарлака чӳречерен Нина сехечĕ-сехечĕпе пăхса тăрать, тӳпери тулли уйăх курăнми пуличчен хăйне хăй ăшри çулăмпа асаплантарать. Тусем хыçĕнчен сисмелле мар йăлкăшса тухакан хĕвел шевлисем ăна çепĕççĕн-çепĕççĕн кăтăкласа илеççĕ. Çĕнĕ кун пуçланать. Вара Нина каллех Валентина курать, каллех ту вăрманĕсем тăрăх унпа пĕрле çӳрет, ту кӳлличчe унпа пĕрле шыва кĕрет, хĕртĕнет. Ушкăнĕ пĕчĕкех мар та, пурпĕрех вăл юнашарах.

Нина чăтаймасть, Венерăна аллинчен тытать те хăйне пĕрле алăк патнелле туртать.

«Мĕн ухмахланатăн эсĕ, Нина?» — тăн пама тытăнать Венера.

«Ах, Венера, хам та пĕлместĕп мĕн тунине, кулас та, макăрас та килет».

Нина Валентинна виççĕмĕш каçхине тин тĕл пулчĕ. Туслăх вечерĕнче. Курортри апатланмалли уçă вырăн — илемлĕ çĕрте, çӳлех мар чăрăшсен ытамĕнче. Тавраллах кăмпа пек хӳтлĕхсем. Хыçалта, лупас айĕнче, вăрăм сĕтелсем. Тăррисене хуппа витнĕ. Юман вуллинчен минерал шывĕ юхса тăрать. Уçланкă варринче кăвайтă çунать. Пăлхарсен авалхи тумне тăхăннă икĕ повар вăрăм патак çине тирнĕ аш татăкĕсене вут çинче майĕпен çавăркаласа пĕçереççĕ. Сăмсана тутлă шăршă кăтăклать.

Гид пурне те кăвайтă патне чĕнет. Аллинче унăн икĕ туталлă пысăках мар пичке. Пурин те черетпе виноград эрехĕ ĕçмелле. Темле майпа ушкăн хĕррине лекнĕ Нина

çухалса кайрĕ. Валентин тăсса панă пичкене ниепле те алла илеймест.

«Мейĕр ĕнтĕ, тутанса пăхăр пирĕн эрехе»,— Нина вăтаннине сиссе, йăл кулать пăлхар каччи.

Нина эрехе темиçе çăвар сыпать те пичкене Венерăна тыттарать.

«Валентин сыпнă çĕртенех ĕçрĕн, Нина, пăлхарпа чăваш тутисем пĕрлешрĕç»,— ихиклетсе айккинчен кăт тĕкет ăна Венера.

Ахаль те хĕрелнĕскер, Нина ниçта кайса кĕреймест. Ку хутĕнче тата унпа Валентин та ăшшăн калаçкалать. Эрехпе Венера сăмахĕсем вут пек пĕçертсе ячĕç.

Кăвайтă тавра кĕçех вăйă пуçланчĕ. Пĕр-пĕр арçыннăн пиçнĕ сурăх хӳрине шăлпа çыртса татса илмелле. Çăмал мар иккен ăна тума. Алăсене каялла тытмалла. Чĕркуçленсе ларма юрамасть. Кăварĕ те пĕçертет. Поварĕсем тата сурăха кула-кулах каллĕ-маллĕ çавăрттараççĕ. Çыртса илекене вара нарпе кĕтет — коньяк тултарнă пичке. Ялан савăнăçлă, шӳтлеме юратакан Ковальков артист аллине тăратрĕ: «Мана ирĕк парсамăр?!» Нина та ăш çуннине мансах Шупашкар артисчĕнчен каçса кайсах кулчĕ. Ниепле те çыртса илеймест вĕри хӳрене. Пит-куçĕ çупа вараланса пĕтрĕ. Часах пĕтĕм ушкăн алă çупа-çупа ахăлтатрĕ: Ковальков çăварĕнче — сурăх хӳри, аллинче — эрех пички.

Савăк каç ытамĕнче халь Нина. Валентин шăпах вĕсен сĕтелĕ хушшинче ларчĕ, çав тери кăмăллă; пĕрмаях шӳтлет вăл, тĕрлĕ мыскара каласа парать. Баянист, акă, пăлхар ташши пуçларĕ. Валентин Нинăна ташлама чĕнчĕ. «Тинех»,— шутларĕ хĕр, çиĕнчех аванмарланчĕ. Питкуç пĕçерет. Пĕкĕтне сиккелесе пăлхар ташшине часах вĕренчĕ Нина. Тепĕр ташăра, йăла тăрăх, каччăн хĕре чуптумаллаччĕ. Нина çав самантран пĕрре хăраса кайрĕ, тепре... кĕтрĕ те ăна. Сасартăк кĕвĕ татăлчĕ. Нина умрах пысăкланса-пысăкланса пыракан куçсене курчĕ, тата — тăрăхларах питçăмартийĕсем, курпунтарах сăмси, кăпăшка тути... Çак кĕвĕне хĕрĕн çĕнĕрен те çĕнĕрен ярăнас килчĕ. Çук, туслăх вечерĕ вĕçлениччен те ташă кĕвви илтĕнмерĕ.

Нинăсем хăйсен отельне таврăнаççĕ. Утнă май хĕрĕн урисем йывăрланса-йывăрланса пычĕç, тем вăхăтра вăл хыçала юлчĕ. Венера ăпа айккинчен «сисстĕн» тенĕн чĕнĕтрĕ те малалла чупрĕ. Юнашарах — Валентин. Нина та тантăшĕ некех чупма, ытти туристсене хуса çитме пултарать. Анчах та урасем çанлах çăмăлланмаççĕ. Çанлах-ха юнашар пăлхар каччи утать.

Нина пӳлĕме кĕрсен, Венера пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Утиялпа витĕннĕскер, юриех çывăриш пулса выртать. Выртăр-иç. Нинăшăн пурпĕрех. Вăл тусем хыçнелле тарса пыракан уйăха чӳречерен сăнать. Куç умĕнче — туслăх вечерĕ, тĕтре ăшĕнчен сирĕлсе, якалса тухакан Валентин сăнĕ. Уйăх пытаннăшăн та кулянмасть Нина. Пытантăр-иç! Вĕсен чӳречине çутатса ывăнчĕ пуль. Тепĕр темиçе сехетренех ун вырăнне ту хысакĕ енчен сикче тухнă хĕрлĕ çăмха йышăнать. Хĕвел чӳречерен кĕрсе Нинăна ачашласа вăратĕ, вăл вара каллех Валентинпа пĕрле пулĕ...

Ирхи апат хыççăнах Нинăсен ушкăнĕ Юр пĕрчи ятлă ту тăрне васкарĕ. Юлашки кун ту кӳллинче шыва кĕрес, терĕç туристсем.

Айлăмран унта канат çулĕ илсе хăпарать. Акă вĕсем пĕрерĕн-пĕрерĕн куçса пыраççĕ. Нина умĕнче, вунă-вуннилĕк метрта, Валентин улăхать. Шупашкар çинчен çырнă юрра вăл лайăххах вĕренейменнине пулас, кăштах хуçкаларах тăсать, каялла пăхса аллине сулать. Нинăн чĕри пăчăртана-пăчăртана илет. Хаш! сывлать те таврари симĕс вăрмана сăнать. Чăваш вăрманĕ пекех-çке: чăрăшĕ, çăки, юманĕ...

Нина вĕсем çине ăшшăн пăхса иртсе каять, Валентин хыççăн хăвалать. Анчах та канат çулĕ çинче умри çынна çитейместĕн, çулĕ çавнашкалскер.

Валентин вырăсла лайăх пĕлет. Калаçнă чухне çеç кăштах такăнкалать. Поэзие юрататъ. Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай унăн юратнă поэчĕсенчен пĕри иккен. Пăлхарсемпе вырăссен, чăвашсен туслăхĕ çинчен çырнă сăвăсене йĕкĕт вырăсла шăрантарчĕ, Нина Юр пĕрчи тăвĕ тăрринче вĕсене каçса кайсах итлерĕ. Хĕр ăпа кайран Чăваш çĕршывĕ çинчен каласа пачĕ.

«Тахҫанах Атӑл тӑрӑх курса ҫӳресшӗн, хамӑрӑн Болгари пекех юрататӑп сирӗн ҫӗршыва»,— терӗ Валентин.

«Ун чухне пирӗн Шупашкара та кӗрӗр. Хамӑр хулана, пысӑк стройкӑсемпе, республикӑпа паллаштарӑпӑр. Эпӗ сире чӑваш сӑрине ӗҫтерсе кӑтартӑп, хамӑр килте юхтарнине. Кӑпӑклӑ сӑра. Эсир пире пичкерен ӗҫтертӗр, эпир — алтӑрпа. Сирӗн ушкӑнпа ӗҫсе ямалла, пирӗн — пӗччен, пӗр пы-ы-ысӑк алтӑр».

Валентин, ҫак сӑмахсене итлесен, ура ҫине тӑчӗ, тавралла пӑхса ҫаврӑнчӗ те:

«Пӗлетӗр-и, Нина, эпӗ сан валли ун чухне ҫак ту тӑрринчен пысӑк юр пӗрчи илсе ыратӑп. Вӑл, пирӗн авалхи юмахсенчи пек, темле шӑрӑх ҫанталӑкра та ирӗлмест. Тулӗк хӗлле, юр ҫунӑ чухне, ҫакӑнта ту тӑрринче тӑмалла. Пит, тута ҫине ӳкнӗ юр пӗрчисем ирӗлсе йӗр хӑвараҫҫӗ. Юратнӑ хӗршӗн вара вӗсем тахӑш вӑхӑтра та чӑн-чӑн юр пӗрчи пек курӑнаҫҫӗ, туйӑнаҫҫӗ»,— терӗ.

«Кулатӑн эсӗ»,— ӗненмен пек пулчӗ Нина.

«Кулса мар, чӑнах. Пирӗн ӗлӗкренпех ҫавӑн пек калаҫҫӗ»,— лӑплантарчӗ хӗре Валентин.

«Илсе пырӑр апла,— пуҫне усрӗ Нина,— кӗтетӗп».

Юлашки каҫ та Валентин унпа ташларӗ. Тен, ытти хӗрсем кӗвӗҫсе ларчӗҫ пуль, вӗҫӗмсӗрех вӗсем ҫине пӑхрӗҫ пуль.

Венерӑпа Нина пӳлӗме кӗнӗ ҫӗре катӑлнӑ уйӑх та чӳречерен пӑхмастчӗ. Тусем хушшине кӗрсе ҫывӑрнӑ пулӗ-и, тен...

Вагон урапisем кӑртлатнине вӑранса кайрӗ Нина купере. Пампоровӑран Софийӑна ҫитнине, Софийӑра поезд ҫине ларса тухнине хӑвӑрт аса илчӗ те чӳречерен тинкерчӗ.

Чӗре кӑлт-кӑлт сикет. Родоп тӑвӗсем, сип-симӗс тӑрӑллӑ, юмахри пек илемлӗ Родоп тӑвӗсем. Инҫете те куҫ умӗнчен каймаҫҫӗ вӗсем. Чӑн та, юмах тӗнчинче курмарӗ-ши Нина ӗнер юр пӗрчи парнелеме пулнӑ хура ҫӳҫлӗ каччӑ?

«Шанӑҫа ан ҫухат, ырра кӗт»,— илтӗнет юнашарах.

— Ку — Венера сасси. Тантӑшӗ енне ҫаврӑнать те Нина:

— Кĕтетĕп те, туссем пĕр-пĕрне нихçан та манмаççĕ,— тет.

Хай каллех вакун чӳречинчен ытарайми тавралăха тинкерет.

# Тунсăх

Маня стройкăна килнĕренпе кĕçех çулталăк çитет. Шупашкар çумĕнче ӳссе ларнă завод-«хулана» хăнăха пуçларĕ ĕнтĕ вăл. Çĕршер метра тăсăлакан цехсемпе корпуссенчен пĕри, акă, ун куçĕ умĕнчех çĕкленчĕ. Иртнĕ кĕркунне хастар каччăсем хăватлă никĕс çине тимĕр юпасем лартса тухрĕç. Аякран пăхсан, çав юпасем туратсăр-çулçăсăр тăрса юлнă вăрман евĕрех курăнатчĕç. Хĕл каçиччен вĕсем çумне тавраллах тимĕр-бетон плитасем вырнаçтарчĕç. Тăрă витрĕç. Цех кăшкарĕ пулса та тăчĕ. Бетонщиксем шалти ĕçсене вĕçленĕ хыççăн унта штукатурка тума, сăрлама тата урай сарма Маньăсен бригади куçрĕ.

Ялти лăпкă та шăп пурнăçа хăнăхнă хĕре автокрансемпе компрессорсен сасси куп каçа йăлăхтармаллипех йăлăхтарса çитерет, комбинезон кĕлеткене тăвăрлатать, пуçа каска хĕсет, тусанпа сăрă шăрши йĕпхĕртет.

Апат вăхăчĕ çитсен, Маня хĕрсемпе пĕрле уçă сывлăша тухрĕ, ешĕл тавралăха пăхса çаврăнчĕ. Мăн çул хĕрринчи хурăнсем çилпе аванса юрлаççĕ, çерем çинчи чечексем шел-кăваррăн йăлкăшаççĕ. Пуç тăрринчи тачка пралуксем тăрăх чĕкеçсем эрешленсе ларса тухнă. Уçă сывлăша кăкăр тулли çăтса илчĕ те вăл столовăя утрĕ.

Электролинии çывăхĕнче çурт-йĕр лартмаççĕ. Çавăнпа çĕр лаптăкĕ çеремленнĕ. Пушă çаранпа Маньăсен колхозĕ усă курать, унта çăвĕпех ĕне-выльăх çӳретет.

Çул урлă каçса, хурăнсем хушшипе пĕрерĕн-пĕрерĕн йăраланса тухакан ĕнесене курсан, Маня тăнах чарăнчĕ. Малта пыракан Красулькăна вăл аякранах палларĕ. Красулька, хӳри вĕçĕпе шăна-пăвана çатлаттарса, строительсем çӳрекен сукмак тăрăх васкамасăр мăшлатса утать. Кĕçех вăл тем пулнăн пуçне çĕклесе силлекелерĕ те вă-

раммăн мĕкĕрчĕ, уттине хăвăртлатрĕ, унтан юрта пуçларĕ, вара Маня умне сиккипе çитсе чарăнчĕ. Хĕр ула ĕнене мăйĕнчен ыталарĕ, пуçĕнчен, çурăмĕпчен шăла-шăла ачашларĕ. Лешĕ паллана çын аллине кушăрка чĕлхипе çулласа илчĕ, йĕпе тутипе питĕнчен хуллен тĕккелерĕ. Çав самантра иккĕшĕн те куçĕсенчен тĕлпулу савăнăçĕ кăларна куççулĕ йăрлатса анчĕ. Кĕçех Маня пăхпă ытти ĕнесем те ун тавра пуçтарăнчĕç. Хĕр вĕсене кашниех ăшă сăмах калать, ачашлать. Савăк кăмăлпа хăпартланнăскер, вăл ĕнесен ункинче кула-кула, аллисемпе саркалана-саркалана çаврăнчĕ.

Çурăм хыçĕнче пушă сасси, аça çапнă пек, шартлатрĕ. Маня кăрт сиксе кукленсе ларчĕ. Пушă вĕçĕ лекнипе Красулька аяккалла сиксе ӳкрĕ, ытти ĕнесене сирсех сирпĕнтерчĕ, унтан чарăнчĕ те кĕтӳç çине шывланнă шурă куçĕпе çаврăнса пăхрĕ. Ун хыççăн ытти ĕнисем те чупа-чупа çерем çине салапчĕç.

Хĕр вăйне пухса, аран-аран çĕкленчĕ. Унран виç-тăватă утăмра Хĕветĕр шăлне йĕрсе тăрать. Хăй ик еннелле кăтраланса аннă çӳç пайăркине утмăлтурат чечекĕсем чикнĕ. Тар тумламĕсем курпунтарах, илемсĕр сăмси çумĕпе, шăрçаланса, хулăн тута хĕррине çитпех юхса аннă. Вĕсене вăл пушă аврипе шăлса типĕтрĕ те шывланчăк тĕссĕр куçĕпе Маня çине пăхрĕ. Чалăш лартпă карттусне, пушă аврипех çӳлелле сĕклесе, каялла пусса лартрĕ.

Çав тери тарăхнă Маня, кирлĕ сăмах тупаймасăр, хăй сисмесĕрех çапла персе ячĕ:

— Ухмах! Тăнсăр пуль эс?!

Каччă хăнк та тумарĕ, вăрăм пушшипе сывлăша касса, юриех тепре шартлаттарчĕ, ĕнесене тата аяккарах хăратса тартрĕ.

— Чунсăр эс! Чĕресĕр çын эс, Хĕветĕр! — куççульне алтутрине шăлса типĕтрĕ хĕр.— Мĕншĕн хĕрхенместĕн эс ĕнесене? Сана эп ялта чухнех чĕрчуна хисепleме вĕрентеттĕмччĕ-çке... Эх, пулмарĕ санран нимĕн те...

Пушшине хулпуççи урлă янă Хĕветĕр Маня умне варăм урисемпе кармакланса пырса тăчĕ, ăна лăплантарма пикенчĕ:

— Тунпă мĕншĕн йĕрмелли. Выльăх вĕт вăл? Пусса

çиетпĕр ăна. Эпĕ ку таранччен сĕтел хушшинче макăра-макăра аш çиекене курман-ха. Çитĕ, çитĕ сана пустуй куççуль тăкма. Айта калаçса татăлар...

— Мĕн калаçмалли пур саппа, тискер кайăкпа! — кăшкăрсах ячĕ Маня.— Туйăм çуккă сан, этем туйăмĕ çуккă! Пĕрре ĕнесен, тепре ман хĕпĕртÿллĕ саманта татрăн. Мĕншĕн çапрăн Красулькăна, э? Кала-ха, мĕншĕн?

Каччă ничĕ çинчи кулă таçта тарса çухалчĕ, унăн тута хĕрри чĕтренсе илчĕ, сăнĕ шурса пычĕ, чĕлхи-çăварĕ те аран уçăлчĕ:

— Кĕтÿрен тарнăшăн... Мĕн... чуп-ха вĕсем хыççăн... йытă пек. Ахаль те ăшша пиçрĕм... Тепре тарччăр тулĕк. Хас! Сире?!

Хĕр чарăна та пĕлмерĕ:

— Эс, мĕн, курмарăн-им эп Красулькăпа ыталанса ташланине? Э? Кала-ха? Мĕн туса хутăн, йытă пуçĕ! Эп сана, ак, çиччас, пушшуна туртса илем те хăвна хăваласа ярам. Манпа калаçасшăн тата... Кай! Тасал!

Çав вăхăтра Хĕветĕр хĕре сисмелле мар çатăрласа тытрĕ те, пилĕкне авса, тутинчен чуптума хăтланчĕ. Маня та çухалса каймарĕ, каччăн шăртлă питне кушак пек чавса, çирĕп ытамран вăрт вĕçерĕнчĕ. Вара, каялла çаврăнса пăхмасăрах, сукмакпа чупрĕ. Каччă юнланнă питне сулахай аллипе сăтăрса илчĕ, унтан сылтăм аллинчи пушшине хыттăн шартлаттарчĕ. Хĕр çурт хыçĕнче курăнми пулчĕ. Вилесле тарăхнă Хĕветĕр, çиллипе шăнараймасăр, канлĕн курăк çиекеп ĕнесене сиккипе хÿтерсе кайрĕ.

Столовăя çитнĕ çĕре Маньăн чун тăвăлĕ кăштах тамалчĕ. Хĕрсем ăна валли апат илсе хунă, хăйсем, çисе тăранса, тухса та кайрĕç. Маня пĕчченех таврăнчĕ. Хĕрсем сукмак хĕррипе чечек пухаççĕ. Ĕнесем те, Хĕветĕр те çук. Пралук çинчен вĕçсе аннă чĕкеçсем çеç сывлăшра ăмăртмалла ярăнаççĕ.

Паян Красулькăна тĕл пулни Маньăна шухăша ÿкерчĕ. Вăл нăхнă ĕнесенчен чи юратни, чи итлекенниччĕ-çке вăл, сĕтне те ыттисенчен пумайрах антаратчĕ.

Тĕрĕссипе, Маньăпа Красулька иккĕшĕ пĕрле вылясах ÿсрĕç. Шкулта вĕреннĕ чухне хĕрача фермăра ĕçлекеп амăшĕ патне кашни кунах чупатчĕ. Ăна пулăшмалли тем

чухлехчĕ унта. Витере вăл выльăхсене апат паратчĕ, тислĕк тасататчĕ, ĕне çиллисене çăватчĕ. Пĕчĕк аллисене сĕт сума та хăнăхтарса çитерчĕ. Çавăн чухне юратса пăрахрĕ ĕнтĕ Маня ула тынана.

Хĕрача вăтам шкул пĕтерпĕ чухне Красулька çамрăк ĕнеччĕ ĕнтĕ. Ун çумĕнче, хăй пĕчĕк чухнехи пек, улачăла пăру сиккелесе çӳретчĕ. Амăшĕ пенсие тухсан, Маня фермăра ĕçле пуçларĕ. Пĕчĕкренех хăнăхнă хĕршĕн ку ĕç йывăрах марччĕ, ытлашши ывăнпнине сисместчĕ вăл.

Маня Красулькăна кăна мар, ушкăнри пĕр ĕнене те хыттăн кăшкăрса е çапса курман. Ачашлатчĕ вăл вĕсене, выльăхпа пĕр чĕлхе тупма пĕлетчĕ. Сĕтне вăйлă антаратчĕç ĕнисем. Амăртура пĕрремĕш хут мала тухсан, правлени Маньăна алла çыхмалли сехет парнелерĕ. Мухтавхисен хучĕсем те сахал мар. Чапрах пурăнатчĕ-ха, чунне парсах ĕçлетчĕ хĕр. Таçтан инкек siксе тухрĕ-çке ун умне. Хăйсен ялĕнчи Хĕветĕр кĕтӳç сăлтавсăр-мĕнсĕр витене кĕре-кĕре туха пуçласан, хĕр хăраса ӳкрĕ. Çӳрет те çӳрет каччă ун таврашĕнче тĕккеленсе, ферма пӳртне кĕрсен те куç илмесĕр пăхать ун çине. Тантăшĕсенчен вăтаннипе, хĕр общежитирен тухса таратчĕ. Лешĕ тепĕр кунне каллех хĕр çумнерех туртăнатчĕ.

Тăсланчăк каччă хăйне килĕштернине туйрĕ Маня, çавăнпа ăна юриех çĕтĕлтерме тытăнчĕ. Хăвăрт вĕриленсе каякан каччă ун пек чухне аяккалла пăрăнатчĕ. Кăшт вăхăт иртсен, хăй пурпĕрех, хурчка чăх чĕппине тĕлленĕ пек, ун тавра явăнатчĕ. Каярахпа Маня унран хăрами пулчĕ, çапах хăй çывăхне ямарĕ. Каччăн сивлек кăмăлĕ иккĕлентерчĕ хĕре. Çапах ăна хăнăхма пулать-ха тесе шухăшламах тытăннăччĕ Маня. Хĕветĕр, ухмаххи, хăйĕн этемле мар хăтланăвĕпе, телейне тĕппипех çунтарса ячĕ.

...Каçхи сăвăм хыççăн Маня витерех юлчĕ. Вăл ĕнесене тепĕр хут пăхса çаврăнчĕ, вĕсемпе калаçа-калаçах ирччен сывпуллашрĕ. Тухма хатĕрленнĕччĕ çеç — кĕтесре хура юна пек тăрăкан тăсланкă Хĕветĕре курах кайрĕ. Сăмах чĕнмесĕр çывхаракан каччăран хĕр хăрама та пĕлмерĕ малтан, эрехпе ыхра шăрши сăмсана пырса çапсан тин унăн ура вăйĕ пĕтсе килчĕ. Хĕветĕр хĕре тимĕр пек хытă аллисемпе хăюллăнах пилĕкрен ярса илчĕ те улăм

ҫине ӳкерчӗ, чуптума пуҫларӗ, кӗпи аркине хыпашларӗ...
Кӗтмен ҫӗртен сехӗрленсе ӳкнипе Маня сасартӑк витене янратмалла ҫухӑрса ячӗ, каччӑн куҫне чӑрмаласа пӗтерчӗ. Лешӗ, арӑслан пек хаярланса, ӑна тимӗр кӑшӑлла кӑшӑлланӑн хӗстерсе лартрӗ.
Ҫуйхашнӑ сасса илтсе, витене ҫынсем чупса кӗчӗҫ. Вӗсене курсан, Хӗветӗр ура ҫине ҫӗкленчӗ ҫеҫ — янахран тукмак пек чышкӑ лекнипе, улӑм ҫине тӗшӗрӗлсе анчӗ. Тӑма пуҫласанах ҫапа-ҫапа антарчӗҫ путсӗре, асӑнмалӑхах ислетрӗҫ, хӗре мӑшкӑллама памарӗҫ.
Пуҫ ҫӗклеме те вӑтанса йӗрекен хӗре каччӑсем, хул хушшинчен тытса, уҫӑ сывлӑша илсе тухрӗҫ, ферма ҫывӑхӗнчи пӗве хӗрне ҫитерсен, пӗрле ҫерем ҫине ларчӗҫ. Ҫыран хӗрринчи шапасем мӑшкӑлланӑ евӗр ахӑраҫҫӗ. Вӗсен сассине илтнипе, Маньӑн пушшех чунӗ тӑвӑрланса килчӗ. Ӗсӗклет те ӗсӗклет хӗр. Ашӑ сӑмахсем каласа, шӳтлекелесе, аран лӑплантарчӗҫ ӑна.
Маньӑна хурчка аллинчен туртса илнӗ ӑмӑрткайӑксем Шупашкартан, вӗсен ялӗ ҫывӑхӗнчи строительсем пулчӗҫ. Трактор завочӗ тӑвакансем шефа илнӗ колхоза пулӑшма килнӗччӗ, иккӗмӗш эрне ӗнтӗ фермӑра апат пӗҫермелли ҫурта юсаҫҫӗ. Вӗсенчен пӗри, вӑтам пӳллӗ, кӗреш юман пек кӗлеткеллӗ, кӑтра ҫӳҫлӗ, типшӗмрех питҫӑмартиллӗ, ҫырӑ куҫлӑ Ҫемен Шурков ун чухнех юрату вучӗпе ҫуннине Маня, паллах, тӗшмӗртме те пултарайман.
Юлташӗсем, шӑхӑркаласа, аяккалла пӑрӑнсан, вӗсем иккӗшех юлчӗҫ. Ӗсӗклеме чарӑннӑ Маня пӗр сӑмах та чӗнмест, урисене аллисемпе чӗркуҫҫи айӗнчен тытнӑ та, кӑкӑрӗ ҫине усӑнса аннӑ ҫӳҫ пайӑркине чӑмлать, хушӑран ассӑн сывласа илет.
Каччӑ аллине хӗр хулпуҫҫийӗ ҫине хуллен хучӗ. Маня ҫав йывӑр алла мӗншӗн аяккалла сирсе пӑрахманнине хӑй те ӑнланмарӗ, шав пӗве тӗпӗнче вылякан уйӑха сӑнарӗ. Пулӑсем, ҫӳлелле сиксе, шӑмпӑлтатнипе шыв ҫийӗ вӗттӗн хумханать, тулли уйӑх ҫав хумсем ҫинче таткаланса каять, унтан каллех, чӳхене-чӳхене кӗмӗл ҫӑмха пулса тӑрать. Ларсан-ларсан каччӑ алли ҫӑмӑлланнӑн туйӑнчӗ, хӗрӗн чунӗ те уҫӑлчӗ. Маня вара пуҫне ҫӗклемесӗрех унран ҫапла ыйтрӗ:

— Мĕн ятлă эсĕ?

— Çемен,— хăюсăррăн пĕлтерчĕ каччă.— Эсĕ Манькăччĕ пулас.

— Ăçтан пĕлен ман ята? — тĕлĕннипе кăрт сиксе илчĕ хĕр.

— Пĕрле ĕçлесе те пĕлмесен, ара. Ху пире кăпăклă сĕтне хăналанине мантăн-им?

— Хăçан?

— Кормокухня тăррине витсе пĕтернĕ кун. Тулли витрене васкаса çитрĕн те кашнине пĕрер мăп курка ĕçтертĕн.

— Асилтĕм халь, асилтĕм. Эпĕ сана тем каласшăнччĕ, анчах...

— «Манька, хăвăртрах кил-ха»,— тесе хаяррăн чĕнсе илчĕ сана пaçăрхи леш тăсланкă каччă. Çавăнтан пĕлтĕм ятна.

— Çапла, чĕнсе илчĕ те тем те каласа пĕтерчĕ. Манпа çӳресшĕн тахçантанпах каçăхса пурăнать. Хăй пĕртте килĕшмест мана. Утма та памасть. Пĕрмай куккăшĕпе хăратать тата. Куккăшĕ пирĕн ферма пуçлăхĕ-çке. Качча тухмасан, сана ĕçрен кăларттаратăп, тесе лĕпĕртетет. Намăссăр, кĕççе пит. Мап атте çуккă та — пĕрмай çыпăçать. Мĕнле хăтăлас ку çĕленрен... Сăпаççипах сире паян мана хӳтĕленĕшĕн... Куккăшĕ те усал. Хĕветĕр элекĕ хыççăн çав сĕтшĕн мана кăшласа яратчĕ вĕт. Укçа тытса юлнăшăн кулянмастăп-ха. Правленипре намăслантарса пĕтерчĕ. «Шупашкар каччисене ĕçтернипех сĕт сахалтарах суса пама тытăнчĕ»,— тет. Пулăшнăшăн сире тав тăвас вырăнне... Тем тумалла ĕнтĕ халь ман...

— Кунта хамăр пур чухне ан хăра, Маня,— хĕре икĕ аллипе вăшт! çĕклесе тăратрĕ каччă.— Çулăхса пăхтăр-ха тепре. Çак чышкăсем мĕн чухлĕ тайнине курĕ...

— Эсир кайсан?..

Çемен пĕве çинче вĕтĕ хумсем йăрăлтатнине пĕр хушă сăнаса тăчĕ те, хĕре куçран пăхса:

— Эпир-и?.. Эпир... Эпир сана хамăрпа пĕрлех илсе каятпăр,— терĕ хăюллăн.— Ырапах вырнаçтарма пултаратăп хамăн бригадăна. Шăпах пĕр вырăн пур сан валли.

— Чăпах-и? — савăнса ӳкрĕ Маня.— Апла ирех заяв-

лени кайса парап. Мана вĕсем çакăн хыççăн пурпĕрех йĕркеллĕ ĕçлеме парас çук. Нуша курса пурăниччен... Тульккӑш Красулькăна, ытти ĕнесене те шалккă. Юрататӑп-çке эпĕ вĕсене, чĕререн юрататăп. Мĕнле уйрăлас-ха ман вĕсенчен?

— Хĕветĕр куккăшĕ хĕсме тытăнсан, пурпĕрех сывпуллашма тивет вĕт фермăпа, Маня? Сăмахран, урăх яла качча тухас пулсан, пĕрле илсе каяймастăн-çке выльăха?

— Çапли çаплах-ха... Çапах, чун ыратать. Киле таврăнсан та ман куç умĕнчех вĕсем...

Инкеклĕ самантра паллашнă хĕрпе каччă пĕр-пĕрне часах хăнăхса çитрĕç. Уйăх Атăл леш енчи вăрман хыçне пытаннă çĕре кăвак çутă килчĕ. Çамрăксем, пĕве пусĕпе кайса, тулă пусси витĕр кукăрăлса выртакан урапа çулĕ тăрăх ялалла утрĕç. Хыçалти ферма çутисем кĕçех курăнми пулчĕç.

Çемен Шурков прех Шупашкара кайрĕ. Вăл кунта хăй бригадинчи çынсем мĕнле ĕçленине курма çеç килнĕ иккен. Ыттисем унăн стройкăра, тĕп ĕçре, тарлаççĕ. Строительсен кунĕ тĕлне цех стенисене сăрласа, урайне тимĕр плиткăсем сарса пĕтерме тĕллев лартнă-мĕн. Ĕçĕ нумай. управлени пуçлăхĕ пурпĕрех пилĕк çынна колхоза янă. Малтан палăртнине халĕ сахалтарах йышпа пурнăçлама тивет. Çавăнпа бригадăра апат вăхăтне чакарчĕç, ирпе иртерех килме, каçпа каярах юлма пуçларĕç. Шăп çав вăхăтра тата пĕр хĕр стройкăран пăрахса тарчĕ. Комсомол путевкипе романтика шырама килнĕ тӳрпилĕк йывăрлăха чăтаймарĕ. Çав таркăн вырăнне йышăнма шантарчĕ те ĕнтĕ бригадир витере тĕл пулнă Маньăпа.

Уйăхлă каç хыççăн Çемен йăлтах канăç çухатрĕ. Стройкăра ĕшенни те ним мар ăна. Смена вĕçленсен, бытовкăна эртелне пухса, ĕç кунне пĕтĕмлетет те тӳрех Маньăсен ялне чупать. Çемеп фермăна çитнĕ çĕре хĕр ĕне суса пĕтерет.

Яра купа тăрмашакан строительсен колхозра ĕç пĕтсе пырать ĕнтĕ. Ĕнесем валли апат хатĕрлемелли çурт тултан та, шалтан та хăтлă курăнса ларать. Председатель каччăсене ырлать, бригадира çеç ӳпкелет. Сăлтавĕ паллă: Маня ĕçреп хăтарма ыйтнă. Ферма хуçи хирĕçлесех кай-

масть, колхоз пуҫлăхĕ вара хастар хĕре ялтах хăварасшăн.

Ҫук, председатель зоотехника вĕренме яратăп тесе илĕртни те, комсомол комитечĕн секретарĕ ятлани те, амăшĕ ӳкĕтлени те тытса чараймарĕ ҫĕнĕ ĕҫе, инкекре пулăшакан вăйлă каччă патне каясшăн ҫунакан Маньăна. Тухса чавтарчĕ вăл хулана. Анчах та, пĕртте фермăри йывăр ĕҫрен хăраса, стройкăри вăрăм укҫашăн ҫунса мар — мăшкăла, кӳренĕве, хăйне хĕсĕрленине чăтаймасăр, чĕрери ҫулăма пусараймасăр.

Ҫемен Шурков бригадинчи ăстасем ăна хăйсен йышне хаваспах йышăнчĕҫ, стена якатма, сăрлама, бетон-растворпа ĕҫлеме, плиткăран урай сарма майĕпен вĕрентрĕҫ. Пурăнма общежитие вырнаҫтарчĕҫ. Канмалли кунсенче вăл яла, амăшĕ патне, ҫӳрет.

Пĕррехинче Ҫемен ăна хăйсем патне чĕнчĕ, Маня хăпана каййма килĕшрĕ. Шурковсен ялĕ Шупашкарăн тепĕр енче, Чулхула ҫулĕ хĕрринчех. Автобуспа ҫитме питĕ ҫăмăл.

Килĕнче Ҫеменĕн амăшĕ, пиччĕшĕпе инкĕшĕ тата вĕсен виҫĕ ачи пур. Аппĕ, Маньăнни пекех, ҫамрăкла вилнĕ. Хăй вăл профтехучилище пĕтернĕ те заводра ĕҫле пуҫланă. Каярахпа ăна, пултаруллă коммуниста, стройкăна янă. Ҫавăнтанпа вăл — бригадир.

Ҫуркунне общежитири хĕрлĕ кĕтесре Ҫемен Шурков менелникне паллă турĕҫ. Ăна унта шӳтле-шӳтле авлантарсах яратчĕҫ. Маня ҫирĕме ҫитмесĕр качча тухма килĕшменни ҫеҫ тытса чарчĕ...

Электромотор кĕрлевĕ Маньăн шухăшне татрĕ. Анат вăхăчĕ вĕҫленнине тин аса илчĕ вăл, вара хăмапа ҫапса тупă хӳтлĕхе кĕчĕ. Кунта Ҫемен темле машинăпа тĕрмешет. Ăна хута ярсан, цеха раствор икĕ пыршăпа пырса тăма пуҫлать иккен. Вара малярсем степасене тата хăвăртрах тирпейлеме тытăнаççĕ. Механизаци управленине шанса лармасть бригадир, унашкал япаласене хăех тытса тăвать. Заводра чапа тухнă слесарĕн ылтăн алли кунта та кирлĕ пулчĕ иккен. Халĕ, Маня ҫине пăхса, йăлл кулчĕ те вăл каллех, пуҫне чиксе, гайка хытарма пикенчĕ.

Хӗрӗн те каччӑпа йӑпанса тӑма ерҫӳ ҫук, маляр ӗҫне тин кӑна хӑнӑхма пуҫланӑскер, вӑл та хӑйне вӗрентекен хӗрарӑмран юласшӑн мар. Анлӑ стенана сирпӗтме ҫӑмӑлтарах, пӗчӗк пӳлӗмре вара сывлама йывӑр, сӑрӑ шӑршин пуҫа ыраттарать, хӑвӑртрах уҫӑ ҫӗре тухас килет. Анчах вӗрентекенӗн куҫӗ часах шӑйрӑка асӑрхать, ҫав вырӑна тепӗр хут пӗрӗхтерме тивет.

Шурков раствор парса тӑмалли машинӑна хута янӑ ҫӗре малярсем канма ларчӗҫ, кӑшт сывлӑш ҫавӑрса ячӗҫ те каллех ӗҫе пикенчӗҫ.

Ку машина бригада ӗҫ тухӑҫлӑхне икӗ хут ӳстерчӗ. Строительсен уявӗ умӗн стена шуратмалли тата урай сармалли плансене чиперех тултарчӗҫ. Ҫавӑнпа ӗҫчен йыша куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялав пачӗҫ.

Савӑнать Маня стройкӑра. Яла кайса килсен ҫеҫ чунӗ хурланать унӑн, мӗншӗн тесен амӑшӗ кашнинчех фермӑри ӗҫсем пирки калаҫу пуҫарать. Хӗветӗр куккӑшӗ ҫеҫ Маня хулана кайнӑшӑн хӗпӗртенӗ. Вӑл ун вырӑнне тӳрех хӑйсен хурӑнташне илсе пынӑ. Лешӗ тахҫантанпах ҫунатчӗха ӗне сума кӗресшӗн.

Кӑнтӑр анатне кайнӑ чухне Маня эрешмен карти пек эрешленсе тӑракан пралуксем айӗнче ялан ӗне кӗтӗвне курать. Хӗветӗрӗ те, мӑшкӑлланӑ пекех, паниҫкесене бытовка ҫывӑхӗнче кӗтет. Красулька хӑйӗн малтанхи хуҫине асӑрхать те ун патнелле ыткӑнать. Кӗтӳҫ хыҫран хӑвалать, вӑрӑм пушшине шартлаттара-шартлаттара чупать.

— Красулькӑна та, мана та ан асаплантар капла, Хӗветӗр. Этем пул,— йӑлӑнма тытӑнчӗ пӗррехинче Маня.— Эс луччӑ ан хуса кил кунта ҫити ӗнесене, урӑх ҫӗрте кӗт вӗсене. Ҫаран татах пур.

Хӗветӗр хӗр ҫине кӑнн пӑхса илчӗ те, пушӑ аврине ӗнсине хыҫса:

— Манька! — терӗ хыттӑн.— Эп сапах качча илеп. Кӗтӗве те сана курас килнипех хӑваласа килеп. Юлташа та ҫиллентерен уншӑн. Айта яла. Мӗн ҫӑрӑлан ҫакӑнта! Кала, ыратин?

Ӗнесене ачашла-ачашла курӑк ҫитерсе тӑракан Маня хуллен ҫапла тавӑрчӗ:

— Пымастӑп, Хӗветӗр, пымастӑп. Юратмастӑп эпӗ

сана. Ман каччă пур. Туп эс урăххине.

Карттусне çамки çине пусса лартрĕ те Хĕветĕр пушша сывлăшалла явăнтарса шартлаттарчĕ. Ĕне, хăранипе, тапăрт сикре. Хĕр чĕрине ярса тытрĕ. Кĕтӳç Красулькăна çурăменчен туртса çапрĕ те каялла çаврăнса юнарĕ:

— Пымастăн апла! Пымастăн? Юрĕ, кăтартăп сана юрату!..

Тепĕр кунне кĕтӳ çав вырăнах килчĕ. Хĕветĕр Красулька хыççăн ни утмасть, ни чупмасть, аякран çеç пăхса тăрать. Маня ĕнене малтан хатĕрлесе хунă пăявпа мăйракинчен çаклатрĕ те бытовка çумне кăкарчĕ. Фермăна кайма вăхăт çитсен, Хĕветĕр унта йăпшăнса пычĕ, бригада çыннисенчен сехĕрленчĕ-ши — Маньăна кӳрентерме те, ĕнене пушăпа тивертме те хăяймарĕ.

— Вĕçертсе яр ĕнене! — çиллессĕн хушрĕ вăл.

— Сапа, Хĕветĕр,— сăмахĕсене татса каларĕ Маня,— Красулькăна урăх шапса памастăп, ăна пушалантарттармастăп. Тасал кунтан хăвăртрах!.. Атту...

Ятлаçа-ятлаçа, аяккалла сулланчĕ Хĕветĕр. Красулька васкамасăр, канлĕн кавлесе выртса юлчĕ. Ĕç кунĕ вĕçленсен, Маня бригада çыннисене сĕт суса ĕçтерчĕ. Ытла та техĕмлĕ-çке кăпăклă сĕт! Каçалапа Маньăпа Çемен, ĕнене çавăтса, ялалла уттарчĕç, ăна хуралçа парса хăварчĕç.

Каçĕ, малтанхи тĕлпулу чухнехи пекех, лăпкă та тӳлек. Пĕвери вĕтĕ хумсем çинче уйăх ташлать. Шапасем ахăраççĕ, пулăсем выляççĕ. Улăх тăрăх уçă сывлăш хăпарать. Уй тасалнă ĕнтĕ. Унта йывăççемпе хутăш улмурисем курăнаççĕ. Савăк кăмăлпа таврăнчĕç каччăпа хĕр ялтан.

Икĕ кун килмерĕ кĕтӳ стройка патĕнчи çерем çине. Виççĕмĕш кунĕнче çул хĕрринчи хурăнсем хушшинчен ĕнесем йăраланса тухма пуçларĕç, анчах... Красулька ниçта курăнмарĕ. Маня, тĕлĕннипе, Хĕветĕр патне пырса ыйтрĕ. Вăл хăяккăн пăхса кулançи çеç турĕ:

— Качча кайнă сан юратнă ĕнӳ...

Ĕç ăнмарĕ хĕрĕн çакăн хыççăн, ăш вăркама тапратрĕ. Пуçра пĕр шухăш янăрарĕ: «Мĕн те пулин тунă ман Красулькăна». Каçченех яла кайрĕ вăл, килне кĕрпччен

фермăна чупрĕ. Хуралçă ăна витене уçса кертрĕ. Улăм çинче выртакан ĕнене курсан, Маня хĕпĕртессе ӳкрĕ, ăна пуçĕнчен, мăйĕнчен, çурăмĕнчен ачашлама тытăнчĕ. Красулька, муклатса, пĕтĕм кĕлеткипе туртăшрĕ, пурпĕрех ура çине çĕкленеймерĕ.

— Мĕн пулнă ăна? — хăраса ыйтрĕ Маня.

— Урине хуçнă,— хуйхăрса пĕлтерчĕ хуралçă.— Хĕветĕр уйран хытă хăваласа килнĕ те шăтăка сиктернĕ. Ыран патшалăха леçеççĕ...

— Ай-уй, пĕтрĕ пуç, пĕтрĕ пуç...— тесе ӳлесех йĕрсе ячĕ Маня.

Вите алăкĕ уçăлчĕ те Хĕветĕр тайкаланса кĕчĕ, хăй урмăш сасăпа мăкăртатать:

— Ак-кă, эп-пĕр, кал-лех в-в-вите-ре тĕл-л пул-л-тăм... ăр. Ка-ачча тух-ух-тух-хат-ăн-и ман-на...

Пĕр утăм турĕ, тепĕр утăм турĕ кĕтӳç хĕр патнелле. Маня хăруШăн кăшкăрса ячĕ те пӳлмек çумĕнче таракан сенĕке ярса илчĕ...

# Велосипед

Çу варринчи лăпкă ир. Ешĕл йывăç тăррисене йăмăхтарса, хĕвел ӳркевлĕн хăпарать. Сывлăш çуса тасатнă кĕленче пек тăрă. Пит-куçа ачашласа-уçăлтарса ăшă çил вăркăшкалать..

Хĕвел çине хускалмасăр пăхса таракан Михаил Алексеев, хыçалтан такам тĕртнипе, картлашка çинчен çĕрелле чупса анчĕ. Казармăран салтаксем сиксе тухрĕç, сержант команда панине илтсе, строя йĕркеленсе тăчĕç.

Михаил Алексеев — хыткан та çӳллĕ каччă. Çавна пулах — пысăккипе ĕнтĕ — стройри вырăнĕ ун яланах чи хĕрринчи малти ретре. Алексеевăн çар службинчи вĕçленсе пырать ĕнтĕ. Анчах ку тарана çитсе ятне ярса курман-ха вăл. Акă паянхи увольнение те Алексеев ефрейтор ахальтен мар тивĕçлĕ пулчĕ. Иртнĕ эрнере çар вĕренĕвĕнче вăл «стройран тухнă» капитан вырăнĕнче кăткăс аппаратурăпа ăста ĕçлерĕ, «тăшманăн» сывлăшри мишение вăхăтра

пĕтерсе хума пулăшрĕ. Часть командирĕ çавăншăн ăна, ытти палăрнă салтаксемпе пĕрле, строй умĕнче тав турĕ. Паян, вырсарникун, Михаил увольнение каять ĕнтĕ, касчепех ирĕкре пулать, Василисăпа курнăçать.

* * *

Каснă вăрман вырăнĕнче, пĕр тĕлте, хунав йывăç ӳснĕ, унтах хăмла çырли тĕмисем ĕрчесе кайнă, чĕркуççи таран курăк çитĕннĕ. Çав хунав çуммипе ансăр сукмак тăсăлса выртать, вăл тӳрех Василисăсен Çирĕклĕх ялне тухать. Миша Алексеев ура айĕнчи çатракасене уямасăр ярăнса утать. Ăна хăйне хирĕç халь Василиса ăнтăлса чупнăнах туйăнать.

Эх, Василиса, Василиса... Атăл хĕрринче ӳснĕ вырăс хĕрĕ! Миша чĕринче ăнсăртран йăва çавăрчĕ те вăл тухма та пĕлмест ĕнтĕ халь: юрлаттарать те, макăртать те... тăнран та ярать тепĕр чух. Малтанхи чи хĕрӳллĕ юрату кăварĕпе çунтарать вăл йĕкĕт чĕрине...

...Ун чухне шăп кăна май уйăхĕ пуçланнăччĕ, вăрман çурхи тум тăхăннăччĕ, тавралăха чĕрĕ йывăç-курăк шăрши сарăлнăччĕ. Çавнашкал илемлĕ вăхăтра пĕррехинче салтаксен клубне ял «артисчĕсем» концерт кăтартма килнĕччĕ. Лайăх юрлакан-ташлакан сахал марччĕ вĕсен хушшинче, анчах пуринчен ытларах Миша кăмăлне каяканни хĕрсем хушшинче пĕрререн пĕрре пулнăччĕ — Василиса Радостева. Миçе хут чĕнсе кăлармарĕç-ши салтаксем çав кăвак куçлă та кăшт каçăртарах сăмсаллă хĕре сцена çине! Миша та Василиса кашни юрламассеренех алă тупанĕсем ыратакан пуличченех алă çупнăччĕ, «бис» кăшкăрнăччĕ. Кайран, концерт хыççăн ташăсем пуçлансан, мĕн тери тăрăшмарĕ-ши тата Миша çав ăшхыптармăш хĕрпе хăть пĕрре те пулин ташласа юлас тесе, анчах Радостевăна çамрăк лейтенант çавăрса илчĕ те, кăвак куçлă хĕр умне пырса тăрасси ах çăмăл пулмарĕ вара ефрейторшăн. Çапах та юлашкинчен меллĕ самант тупрĕ-тупрех вăл, вальс пуçлансан, хĕрпе юнашар лейтенант ларнине пăхмасăрах, Василиса умне хăюллăн пырса пуç тайрĕ. Лешĕ тăчĕ, Миша вара чĕтрекен аллисене хĕр

пилĕкĕ çине хучĕ, пĕтĕм салтака чăтма çук илемлĕ юрласа тĕлĕнтернĕ хĕре куçран вăтанса пăхрĕ.

Пĕр ташă ташласа юлма ĕлкĕрчĕ ефрейтор хĕрпе, тепринче ăна каллех лейтенант çавăрса илчĕ...

Май уявĕ çапла Мишăна савăнăçпа пĕрлех пысăк асап та парнелерĕ. Кăшт каярахпа ефрейтор чăтаймарĕ, Василиса патне çыру çырса ячĕ. Каялла килекен çырăвĕсем чăннипех те тĕлĕнмелле пулса тухрĕç вара. Эрне хушшинче вăл Çирĕклĕх ялĕнчен виçĕ алăпа çырнă виçĕ çыру илчĕ! Пурне те вĕсене тĕрлĕрен Василиса Радостевасем çырнă иккен. пурте салтаксен клубне концерт кăтартма пынă, тет, тата. Тамашалла япала мар-и чăнах та?

Мĕн пулать те мĕн килет тесе, ефрейтор кашнин патнех çырма пуçларĕ. Сăнӳкерчĕк ыйтса ячĕç — ярса пачĕ. Çырусем çапла темиçене çитичченех пухăнса кайрĕç салтакăн... Пĕр Василиси ăна тĕлпулăва та чĕнет тата. Акă шăпах вăрманти сукмакпа çав тĕлпулăваваскать те ĕнтĕ паян Миша.

Ял хĕрринчи тарăн мар çырма урлă каçсан, ăна хирĕç карта çумĕнчен утмăлсенелле çитнĕ хĕрарăм тухрĕ.

— Сывă-и, Мишенька! Салтакăм, иртеппе кĕтетĕп сана. Палларăн-и? Эпĕ — Василиса Радостева пулатăп ĕнтĕ.

Каччă чарăнса ват хĕрарăм çине пăхрĕ те, ку этем хăйĕнчен куçкĕретĕнех мăшкăллапине курса, малалла утрĕ. Анчах та пумай та каяймарĕ — ун умне тепĕр ватăрах хĕрарăм пăркаланса тухрĕ.

— Тинех тĕл пултăмăр, Мишуля, кĕтсе ывăнтăм, ара. Сана çыру урлă калаçса татăлнă Василиса Радостева эпĕ пулатăп-ха вăл.

Ефрейтор, пуçĕ çаврăнса кайнипе, ним калама аптрарĕ, хĕрарăм çине шăтарасла пăхрĕ, вара хăй май уявĕнче салтаксен клубĕнче ташлană хĕрарăма аса илчĕ. Халь ĕнтĕ чăннипех те лайăх астурĕ вăл: концерт кăтартма çак хĕрарăм çеç мар, лешĕ те, ватти, пынăччĕ вĕт ун чухне гарнизона! Хальхинче те ним тума пĕлменнипе салтак пуçне хыçса та ĕлкĕреймерĕ, укăлча хапхинчен кавак куçлă, каçăр сăмсаллă хĕр кулкаласа утса тухрĕ. Шаках хытса кайрĕ Миша ăна курсан. Хĕр ефрейтор патнелле

хăюллăн пычĕ те ăна аллине тăсса пачĕ.

— Василиса, калăр, тархасшăн, мĕн пулса иртет манпа кунта? Лешсем те, хыçрисем, чăнах та Василиса Радостевасемех-и? Апла пулсан, миçен эсир, Василиса Радостевасем? Миçен ман ăша çапла çунтаратăр? Миçен манран кулатăр? — ыйтрĕ каччă шӳтлесе те, шӳтлемесĕр те.

— Виççĕн! — ахăлтатса кулса ячĕ хĕр.— Эсир малтан хирĕç пулни — асанне, ман умĕн тĕл пулни — инке, ку — эпĕ.

— Ах тур-тур, чăн-чăн тункатах мар-и эп капла? — хĕре аллинчен тытрĕ салтак.— Виçĕ Василисăна юратакан çăпата вĕт эпĕ чăнахах та!

— Ай, салтак, ай, салтак! Казармăран тухнă çеç — упа аллине лекнĕ, упаран хăтăлнă — кашкăр аллине лекнĕ, кашкăртан хăтăлнă...

— Тилĕ аллине лекнĕ,— хăех хушса хучĕ Миша.

— Ну, мĕнле, куртăн-и ĕнтĕ халь «чĕререн юратакан, пĕрле пулма хатĕр савнийусене?» — çаплах кулма чарăнаймарĕ Василиса.

— Куртăм ĕнтĕ,— хĕрелчĕ салтак.— Çавăнпа каялла пăха-пăха тартăм лешсенчен. Эх... хаваслă çынсем пулас сирĕн йăхра?!.

— Вăт халь итле апла пирĕн ку мыскара мĕнле пулса тухнине,— аллине вĕçертрĕ Василиса.— Сирĕн патра концерт кăтартнă хыççăн эпĕ хулана кайнăччĕ, тăвансем патне. Сирĕн çырăвăра почтальонка çавăн чухне асаннене парса хăварнă. «Ман пата салтак таврашĕ çырас çукха» тесе, асанне çав çырăва инкене тыттарнă. Инкен чунĕ чăтайман, уçнă та вуланă ăна. Икĕ шӳтник Василиса мансăрах сирĕн пата çыру çӳретме пуçланă вара. Эпĕ хуларан таврăнсан, мана çавăн пирки каласа култарасшăн пулчĕç вĕсем. Малтан чăнах та култăм, кайран... уп пек кулма аван мар пек пуль тесе шутлама тытăнтăм. Чăнах та эсир, ефрейтор юлташ, каçарăр ĕнтĕ пире уншăн... Ну, халь мĕн тăвăпăр эпир? Çакăнта, ял хĕрринчи улăхра уçăлса çӳрер-и е яла кĕрер?

— Маншăн пурпĕрех, Василиса,— терĕ Миша, хĕр çине ытараймасăр пăхса.— Сирĕнпе пĕрле кăпа пулас килет ман...

— Пĕлетĕр-и, Миша, çав лейтенант пирки мĕн калам сире? — терĕ каяраха йĕкĕте Василиса.— Мана вăл çав каçхинех, юлашки хут ташланă чухнеччĕ пулас, тӳрех качча илетĕп терĕ те, чун сасартăк сивĕнчĕ ман унран. Ара, шутлăр-ха, ухмах-им эп ăна ĕненме? Курнă-курман хĕре кам тӳрех «качча илетĕп» тесе калатăр? Анчах каçарăр та вăтанмасăрах каланăшăн, Миша, сирĕн пирки те кăшт шутласа пăхрăм-пăхрăмах эп ун чух. Темшĕн хăçан та пулин пурнĕрех тĕл пулассăн туйăннăччĕ эпир иксĕмĕр çав каç хыççăн...

Ку сăмахсене илтсен, салтак чĕри ирĕлсех кайрĕ, вăл, улăхри кӳлĕ хĕрринче çерем çинче хĕрне юнашар лараканскер, вăштах ура çине сиксе тăчĕ. Ытлашши хытă савăннипе кӳлле салтăнмасăрах кутăн чăмма та хатĕрччĕ пуль, тупата, Алексеев ефрейтор!

Çакăн хыççăн чăнах та пĕрре мар тĕл пулчĕç, пĕрпĕрне хытах юратса пăрахрĕç вĕсем.

Вăрман хĕрринчи кивĕ çăка тункати çинче пуçне чечек кăшăлĕ тăхăннă, аллине чечек çыххи тытнă кăвак куçлă хĕр тăрать. Акă вăл вăрмантан салтак тумтирлĕ çамрăк каччă вашкăртса тухнине курчĕ те, аллинчи чечекне пуç тăрринче çавăрттарса илчĕ, тунката çинчен сиксе анчĕ, унтан чăтаймарĕ, хăй те йĕкĕте хирĕç чупрĕ.

— Итле-ха, Миша,— ăшран тухакан сăмахпа çемçен калаçрĕ Василиса.— Сана эпĕ паян акă мĕн пĕлтерме чĕнтĕм. Пĕлетĕн-и, мĕн?.. Йывăр мана сансăр... сансăр пурăнма. Эп сана чунтан-чĕреренех юратнине кашни кун вăйлăрах та вăйлăрах туйма пуçларăм. Сан çемçе хăмăр çӳç пĕрчисем те, ялан ăшă çапса тăракан куçусем те, тӳп-тӳрĕ сăмсу та, кăшт хулăнрах туту та, вăйлă аллусем те, çӳллĕ кĕлеткӳ, пурте-пурте йăлтах мана, пĕртен-пĕр мана пӳрнĕ пек туйăнать юлашки вăхăтра... Каччă ытамĕнчи хĕр пӳлĕне-пӳлĕне сывларĕ, вара чăтаймарĕ, йăлтах вăйран кайса çитсе, пуçне йĕкĕтĕн анлă кăкăрĕ çине хучĕ. Миша ăна ачана йăтнă пек йăтрĕ те пĕр-икĕ хутчен вырăнта вăр-вар çаврăнса илчĕ, вара, урисене чармакласарах тăрса, пĕтĕм вăйĕпе кăшкăрса ячĕ:

— Эй, вăрман! Эй, Çирĕклĕх! Эй, Атăл! Итлĕр! Чăваш ачи Михаил Алексеев калаçать сирĕнпе: мана Василиса

Радостева юратать. Вăл мансăр пурăнма пултараймасть! Эпĕ те йна юрата-ап, хы-ытă юрата-ап! Юрата-ап!

— Ват ухмах. Асаннене инке çывăхрах кăмпа пуçтараççĕ! Илтсен, мĕн калĕç? Тăнран кайнă ку салтак, тейĕç!

— Калаччăр-и, шутлаччăр-и,— эпĕ пурпĕрех никамран та хăрамастăп халь. Акă сана çаплах йăтатăп та вĕсен умне çитсе тăратăп, служба пĕтсенех Василисăна мана качча пама ыйтатăп!

— Итле-ха, Миша,— каччă ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ хĕр.— Çапах та шутласа пăх-ха эс малтан, тӳрех çапла каличчен... Унсăр пуçне тата... ман хăрах шăл та хитрех мар шăтса ларнă ача чух... Пăх-ха, ав мĕнле вăл, питĕ вăтанатăп çавăншăн.

— Ах, Василиса, Василиса! — ахăлтатса кулса ячĕ Миша.— Ан калаçса тăр-ха эс ун пек. Маншăн эс çĕр çинче пулни, пурăнни телей. Атя, кайрăмăр!..

Вăрмантан тухакан кукăр-макăр çул уй хĕррипе пырать. Сулахайра пысăках мар çирĕклĕх. Унта çитиччен тĕллĕн-тĕллĕн сыхланса юлнă хурамасем, çăкасем каркаланса лараççĕ, çырма икĕ енĕпе вĕтлĕх чашкăрса ӳсет. Малалла вĕсем тусанлă сукмакпа çарран утса кайрĕç, часах вăрман кукăрĕнчи ĕне кĕтĕвĕ патне пырса тухрĕç. Ват хурама айĕнче, сулхăнра, çамрăках мар кĕтӳç тĕлĕрсе ларать.

— Ах, мĕн тери хитре çапах та Атăл тăрăхĕнчи çутçанталăк, Василиса,—терĕ Миша, кунти тавралăха ытараймасăр.— Çăкасем, хурамасем, шур çамкаллă ĕнесем, инçене тăсăлакан ешĕл улăх, вăрман енче шăнкăртатса юхакан тăп-тăрă шыв, çилпе юрлакан хăмăшлăх, ак çак пирĕн умри сарлака улмуççи... Пăх-ха, пăх, Василиса, мĕн чухлĕ илемлĕх кунта, куç умĕнче! Улмуççийĕ те хĕсĕрскер мар иккен тата, улмаллă! Пĕрне сана татса парам-и, Василиса?

Йĕкĕт кармашрĕ те çавăнтах темиçе панулми татса та илчĕ.

— Йӳçĕ,— пит-куçне пĕркелентерчĕ Василиса, панулмие çыртса пăхсан.

— Туйра «йӳçĕ!» тесе кăшкăрнă чух та çапла куç-

çуль каларăн-ши? — кулса пăхрĕ хĕр çине йĕкĕт.

— Каlармасăр,— çыртăк панулмие алă çинче сиктеркелерĕ Василиса.— Хĕр ĕмĕрĕпе сывпуллашнă чух кирек мĕнле çын та йĕрет пуль ăна?

— Эп пĕртте йĕрес çук, Василиса. Ах, мĕнле пысăк телей пулнă пулĕччĕ вăл маншăн санпа пĕрлешесси! Çук, çук, пуçăма та шăнăçаймасть çав телей манне, Василиса!..

Йĕкĕт çапла калаçни хĕр кăмăлне кайрĕ пулас, Миша çине юнашар ăшшăн-ăшшăн пăхса пычĕ вăл.

Дачниксен пĕчĕк поселокĕ пуçланчĕ, кунта Василисăпа Миша тарасаллă çăл курчĕç. Шывĕ питĕ тарăн. Сăнчăрлă витрене антарса-хăпартса ăш каниччен шăла тивекен сивĕ шыв ĕçрĕç. Аслă çул урлă каçсан, хăйăрлăх пуçланчĕ. Лерелле пĕчĕк катасем, хăва тĕмисем çеç курăнкалаççĕ. Хуларан канма килнĕ çынсем уткалаççĕ.

Атăл хĕррине тухрĕç.

— Сулахай çырапа каçса килместпĕр-и? — ыйтрĕ Миша Василисăран.

— Каçмастпăр,— терĕ Василиса.— Аттене курăпăр та унта, вăрçса пĕтерĕ вăл мана тата... Çук, курăнас марччĕ ăна халь. Кунтах, ав çав пĕчĕкçĕ çамсахра, шыва кĕрĕпĕр!

* * *

Василиса Мишăна хăйĕн пурнăçĕ çинчен малалла каласа панăччĕ.

Çирĕклĕх ялĕ Атăл хĕрринчен икĕ çухрăмра майлашăнса ларнă. Пулă тытакансем, пулă заводĕнче ĕçлекенсем йышлăн пурăнаççĕ унта. Василиса ашшĕ те пулăç пулнă. Василиси хăй ăна астумасть, лăп та шăп хĕрачи виççĕре чухне шыва путса вилнĕ ашшĕ. Амăшĕ, Верук, упăшкинчен çирĕм пиллĕкрех тăлăха тăрса юлнă.

Ку тăрăхра, Атăл леш енче, колони те пур иккен. Василиса ашшĕ вилнĕ çулсенче çав колонирен Афанасий Алексеев текен темле çын хăйĕн срокне ларса пĕтерсе ирĕке тухнă пулнă, вара кунтах пулă заводне ĕçе вырнаçнă та кăшт пурăнарахпа унта Василиса амăшĕпе пал-

лашнӑ. Пӗччен хӗрарӑма, паллах, арҫын хӳтти те кирлех пулнӑ ӗнтӗ, ҫамрӑк ҫулсене те тӑлӑххӑн, хӑр-пӗчченирттерес килмен-тӗр — Василиса амӑшӗ Афанасий Алексеева часах киле кӗртнӗ, иккӗмӗш хут качча тухнӑ ӑна, урӑхла каласан. Ҫав ҫынна халӗ Василиса вунпилӗк ҫул атте тесе пурӑнать.

Вӑтам шкул пӗтернӗ хыҫҫӑн Василиса института кӗме те хӑтланса пӑхнӑ, анчах конкурсра такӑннӑ та яла таврӑннӑ, фермӑна ӗҫе кӗнӗ, ӗне сӑвать халӗ. Ҫавӑнпа ун ывӑҫ тупанӗсем те, пӳрнисем те кушӑрка, аллисем вӑйлӑ.

Пӗррехинче, Атӑлта шыва кӗнӗ чухне, Мишӑна Василиса ниҫех мар ҫыранпа утакан пӗр ҫынна кӑтартнӑччӗ. Ҫӳллӗ те тӑлпан кӗлеткеллӗ арҫынччӗ лешӗ. Василисӑн тӑван мар ашшӗ пулнӑ иккен вӑл. Кайран ӑна Миша теприхинче хӑйсен чаҫӗнче курчӗ. Офицерсем валли вӑл пулӑ илсе килнӗччӗ пулас, капитанпа тем ҫинчен васкамасӑр калаҫса чӗлӗм туртса тӑратчӗ. Шаклаланма пуҫланӑ ҫамкине тӑтӑш шӑлкалать хӑй, хӗсӗкрех куҫне мӑчлаттарать, пӗркеленсе хытнӑ тӑрӑхла типшӗн пичӗ, калаҫнӑ май, татах та ытларах пӗркеленнӗ пек туйӑнать. Сухаллӑ. Василиса пӗррехинче Миша ҫине пӑхса тӑчӗ-тӑчӗ те: «Эс, Миша, ватӑлсан каспӑ лартнӑ мап атте пек пулассӑн туйӑнать. Чӑнах, чӑнах, Миша, утту та, кӗлеткӳ та йӑлтах ман тӑван мар аттепни пек сан!» — тесе хучӗ. «Сап аҫу темшӗн пӗрре пӑхсах ман кӑмӑла каймарӗ. Апла эпӗ, Василиса, ҫын кӑмӑлне каймалли этемех мар пулӗ»,— тесе хунӑччӗ кӑна хирӗҫ салтак.

...Пулӑ заводӗнчен пӑрӑнса иртрӗҫ. Ҫӳлтен, ҫыранран, тӑрӑхла ҫуртсем, пулӑ типӗтмелли сарайсем курӑнаҫҫӗ. Причал ҫумӗнче пысӑк кимӗсем кӑкарӑнса тӑраҫҫӗ. Пулӑ шӑрши кӗрет.

Заводран иртсен хӗрпе каччӑ шыв хӗррине анчӗҫ, меллӗ вырӑн тупса, Атӑла сикрӗҫ. Чылайччен выляса-ашкӑнса чӑмпӑлтатрӗҫ вӗсем улах вырӑнта, уртан, тухса типӗнчӗҫ те, каялла ҫырана хӑпарчӗҫ.

Хӗвел Атӑл леш енчи вӑрман тӑррине ҫитсе пӗрӗнме ӗлкӗрнӗччӗ те ӗнтӗ. Ефрейторӑн тахҫанах чаҫе кайма вӑхӑт ҫитнӗ, Василисӑн та часах фермӑра ӗне сума тытӑнмалла. «Ах, кая юлатӑп пулас, Василиса, вӑхӑтра ҫи-

теймесен е гаупвахтăна хупса хурĕç, е наряд парса тултарĕç. Тепĕр вырсарникун увольнени тухасси пирки те ан шухăшла вара ун чух!» — хыпăнса ӳкрĕ Миша.

Завод тĕлне каялла васкаса çитсен, ăнсăртран вĕсем çул хĕрринчи тĕмĕ çумĕнче такам таянтарса хунă велосипед тĕлне çитсе тухрĕç.

— Хуçи ăçта-ши? Хуçи пулсан çак велосипеда ыйтса илме те пулатчĕ пуль-ха та,— сасартăк чарăнса ун-кун пăхкаласа илчĕ хĕр, анчах таврара никамах та курăймарĕ. «Эй, велосипед хуçи, эй, велосипедлă çын!» — икĕ хутчен çине-çинех кăшкăрса пăхрĕ Василиса, пурпĕрех ăна хирĕç никам та сас памарĕ. «Атя хут çырса хăварар, хамăр велосипед çине ларса каяр?!» — чăнниех, шӳтлемесĕрех сĕнчĕ вара хĕр ефрейтора.

— Аван мар пулать вĕт-ха ун пек,— хирĕçлерĕ Миша, анчах хĕр салтака кĕсйинчен хутпа кăранташ кăларттарчĕ те, велосипеда кам, мĕншĕн, ăçта илсе кайни çинчен хăй каласа тăрсах хăвăрт çыртарчĕ, хутне хăва тĕми çумне курăнмалла чиксе хучĕ. «Ан хăра, хамăр заводри пĕр-пĕр çын велосипечех вăл, ыран кăнтăрла хамах пырса илеп!» — лăплантарчĕ йĕкĕте Василиса. Вара вĕсем иккĕн пĕр велосипед çине ларса кайрĕç.

Ефрейтор часе вăхăтра çитрĕ, велосипеде КППна лартса хăварчĕ, дежурная ун хуçи кунта паян е ыран килме пултарасси çинчен асăрхаттарчĕ, тревога сиреннне илтсе казармăна кĕмесĕрех хăйĕн вырăнне чупрĕ.

* * *

Ирхине Алексеев ефрейтора строй умне чĕнсе кăларчĕç. Мĕншĕнне салтак тӳрех ăнланчĕ. Велосипедпăн шухăшласа ахаль те çĕрĕпех лайăх çывраймарĕ вăл, халь акă строй умĕнче намăс курма тивет пуль-ха тата. Ку таранччен ун пек-кун пек айăпа кĕрсе курманччĕ-ха Миша. Чăнах та, командир ăна тем те пĕр намăслантарса пĕтерчĕ, хут çырса хăварнине пăхмасăрах, ку ĕçе чăп-чăн вăрăлла ĕç вырăнне хучĕ, вара ефрейтора гауптвахтăпа хупса хурасси çинчен пĕлтерчĕ.

— Ан кулян, Миша,— шӳтлесе пычĕ ефрейтора гаупт-

вахтăна илсе каякан салтак.— Часах демобилизаци пуçланать ак сирĕн, эс вара ку таранччен те унта ларса курман тетчĕç-ха, гауптвахтăра ларса курман салтак — салтак та мар!

Ефрейторăн шÿтлеме кăмăл çук. Юлташĕ çине пăхса ирĕксĕртен кулкаларĕ те малалла утрĕ.

Гауптвахтăра пар çинче хăяккăн вырттармарĕç ефрейтора, ĕçлеттерчĕç. Мунча хыçĕнче кунта склад тума тытăнпăччĕ. Алексеева та часах унта илсе тухрĕç, виçĕ салтакпа çак стройка валли Атăл хĕрринчен хăйăр турттарма ячĕç. Юлашки рейса машинăпа ларса таврăнмаллаччĕ. Шоферăн тÿрĕ тухас килчĕ-ши аслă çул çине, малтанхи çĕртен мар, урăх çĕртен ячĕ те вăл машинине пĕр пĕчĕк çырма пуçĕнче лакса ларчĕ. Улаттарчĕ-улаттарчĕ вăл мотора, çавăрттарчĕ-çавăрттарчĕ кустăрмасене, усси пулмарĕ. Машина лачакаран ниепле те тухаймарĕ.

Вăрман хĕрринчи сукмакпа Василисăн тăван мар аппĕ таплаттарса аппине асăрхарĕ Алексеев ефрейтор, вара ăпа кунта хăйсем патне чĕнсе илме шутларĕ. Лешĕ хăй те машина лакса ларнине курчĕ, сукмак çинчен пăрăнчĕ.

— Эсир халь завода каятăр пулас. Сирĕн унта телефон пурах ĕнтĕ, пирĕн часе шăнкăравлаймăр-ши? Тягач кирлĕ,— хăйсен инкекне пĕлтерчĕ савнă хĕрĕн аппĕне ефрейтор.

— Телефон тетĕн-и, велосипед вăрри? — салтак çине куç айĕн пăхрĕ Василиса аппĕ.— Ха, телефон кирлĕ ăпа... Ярăттăм та пĕрре янаххунтан... Çуккă манăн сирĕн валли телефон! Урăрсем пур. Çуран утăр!..

Хирĕç чĕнме те ĕлкĕреймерĕ ефрейтор, лешĕ хăвăрт çаврăнса хăй çулĕне утса та кайрĕ.

Çĕрле хăма пар çинче выртнă чухне Алексеев ефрейтор хăлхинчен Василиса аппĕн сăмахĕ чылайччен туха пĕлмерĕ. «Велосипед вăрри! Велосипед вăрри!» — вĕççĕрех янрарĕ таçта шалта çав сиввĕн каланă намăслантаракан сăмах. Куç умĕнче тата шăрт сухаллă çыннăн хаяр та сивлек сăн-пичĕ çухала пĕлмесĕр аптратса тăчĕ. «Малтан пĕрре пăхсах кăмăла каймапччĕ те вăл этем мана, чăнахах та питĕ усал çын пулас çав Василисăн тăван мар аппĕ. Ах, мĕнле пурăнать-ши унпа Василиса? Ун пек

атте пулнинчен пулманни лайăх!.. Хамăнах ав ни атте, ни аçаçури çук та — пурăнатăп хам тĕллĕн çапла атте мĕнне пĕлмесĕр»,— ыйхă тĕллĕн шухăшларĕ гауптвахтăри салтак. Унтан çапла ыйхă тĕллĕнех хăйĕн тĕтреллĕ ачалăхне аса илчĕ вăл, ĕмĕчĕпе тăван Вăрнар поселокне таврăнчĕ.

Икĕ хутлă нумай хваттерлĕ йывăç çуртра пурăнатчĕç Алексеевсем. Аялти хутĕнче, пĕчĕк пӳлĕмреччĕ вĕсен хваттерĕ. Чӳрече умĕнче виçĕ хыр ӳсетчĕ, пĕри темшĕн хăрнăччĕ. Хăрсан та никам та касманччĕ ăна, çавăнтах ларатчĕ вăл. Анчах халĕ Алексеевсем унта пурăнмаççĕ ĕнтĕ. Хими завочĕ чугун çул леш енче кайран çĕнĕ хула турĕ, вăтăрмĕш çулсенчи кивĕ çуртсене йĕркипех пăсрĕ. Алексеевсен хваттерĕ халь Нурăсалла тухса каякан çул хĕрринче ларать. Пӳрт умĕнче çамрăк хурăнсем ӳсеççĕ. Унта амăшĕ паян кун тăр-пĕччен пурăнать.

* * *

Çук, вĕлтрен кайăк травшĕ пулмап Миша, унăн амăшĕ Марине çемье пурнăçне çамрăк чух ытти çынсем пекех пулас упăшкипе йĕркеллĕн паллашса пуçласа янă, туй тунă, ашшĕ-амăшĕнчен пил илсе, мăшăрланни çинчен пĕлтерекен хутпе те йăлтах пичет çаптарса, алă пуссах йĕркелеттерпĕ. Чиперех пурăннă вĕсем малтанхи вăхăтра, Марине упăшкипе савăнтармалăх маттур ывăл çуратса панă, ăна Миша ят хунă.

Çапла, малтан чиперех пурăннă Маринепе Ахваниç, шăкăр-шакăр, кĕрĕс-мерĕс сасăсем-мĕнсем пихçан та илтĕнмен вĕсен килĕнче, анчах кайран шоферта ĕçлекен упăшки райпори пĕр хĕрарăмпа явăçса кайнă та... мирлĕ, илемлĕ пурнăç та çавăн хыççăн вара куллен-кун пĕтсех-пĕтсех пынă Мишăсен килĕнче. (Ахваниç райпо автолавкине турттарса çӳренĕ, леш хĕрарăмĕ унта сутăçра ĕçленĕ).

Паллă ĕнтĕ кун пек чухне мĕн пуласси — килте урлă-пирлĕ калаçусем, хирĕçӳсем пуçланса каяççĕ. Арăмĕ упăшкине ӳкĕте кĕртме тăрăшать пулин те, ĕç шалаллах кĕрсе пырать, автолавка сутуçи, чиперккескер, шофера ух-

махах каларса ярать. «Пĕчĕк упа çурин», Мишуткăн, хăйĕн пурнăçĕ, хăйĕн нушисем. Ку вăхăта самаях аталанса çитнĕскерĕн, ялан пĕр юрă унăн: «Атте, мана леçипет хăçан илсе паран? Леçипет илсе пар мана!»

Ăçта унта, ашшĕн велосипед шухăшĕ-и халь? Чылай каççенче килте те пулмасть ĕнтĕ Ахванис, килсен те харкашу-хирĕçӳ кăна упта. Пĕррехинче, хытă ĕçсе таврăннăскер, Маринене ачи умĕнчех вилес пек хĕнесе пĕтерет вăл. Çухрашăва, шăв-шав илтсе, Мишăсем патне кӳршисем чупса каçаççĕ. Аран лăплантараççĕ вĕсем кăтăрса кайнă арçынна. Лешĕ вара килĕнчен тухса каять, темиçе каç таврăнмасăр пурăнать. Амăшĕ ачине кăкăрĕ çумне пăчăрта-пăчăрта йĕрет...

Çавăн пек сивĕнет те ĕнтĕ Мишутка чунĕ ашшĕпчен. Ашшĕне мĕн, пăсăлнă çын вăл — пăсăлнă çынах. Ĕçлессе хăй çавăнтах ĕçлет-ха, ерĕшкипе пурăнма та ниепле те пăрахмасть. Хушăран киле те кĕркелесе тухать. Мишуткăн унпа вылямa чунĕ туртмасть, халь ашшĕнчен вăл велосипед та урăх ыйтмасть. Тепĕр тесен, мĕн калаçмалли ун ашшĕпе. Халĕ вăл ытларах кукашшĕпе кукамăшĕсем патĕнче кӳршĕ ялта пурăнать, амăшĕ ăна киле шăматкунсенче çеç илсе таврăнать. Анчах пĕррехинче шăматкун та пыраймасть вăл ачине илме. Миша кăшт çеç сĕм-тăлăха тăрса юлмасть, амăшне машина таптаса кайнине пĕлет. Амăшĕ, Марине, виçĕ уйăх ытла выртать больницăра, кайран унтан хул патаккипе çӳремелле пулса тухать.

Машина çынна таптасси пурнăçра сахал мар пулать. Юри таптакансем, паллах, пин çинче мар, пин-пин çинче те пĕрререн ытла пулмаççĕ пулĕ-ха. Кун вара, Маринене таптаканнин, айăпĕ ытла та йĕрĕнчĕклĕ, киревсĕр пулнă та, ун çинчен каласа пама теприн чĕлхи те çаврăнаймĕ. Поселок урамĕпе тĕттĕмре машинăпа пыракан Миша ашшĕ хăй арăмне Маринене асăрхаман мар, лайăхах асăрханă, анчах юнашар ларакан ӳсĕр ерĕшки, сутуçă хĕрарăм, руле хăй аллипе тытсах варт сылтăмалла пăрнă та, çул хĕррипе пыракан Маринене ĕмĕрлĕхе çапла амантсачăлахлатса хăварнă.

Кайран иккĕшне те вĕсене суд туса нумай çуллăха

ҫирӗп режимлӑ колоние янӑ. Ыттипе вулакан пӗлет ӗнтӗ, Миша ашшӗ Ахвапиҫ прӗке тухсан килне урӑх таврӑнман, кунтах, Атӑл хӗрринчи яла юлса, Василиса амӑшӗпе мӑшӑрланнӑ...

Миша Алексеев «атте» текен сӑмаха тахҫанах манса кайнӑ ӗнтӗ. Амӑшӗ ӑна ашшӗ аварие лексе, машинӑпа ҫапӑнса вилнӗ тесе пӗлтернӗ, чылай вӑхӑт ялта кукамӑшӗ патӗнче усранӑ, хӑй, инвалид пулса юлнӑскер, ҫӗнӗ ӗҫе вӗренсе, ҫӗвӗ ҫӗлекен мастерскойне вырнаҫнӑ.

Шкулта сакӑр ҫул вӗреннӗ хыҫҫӑн Миша та поселокри ӗлӗк амӑшӗ ӗҫленӗ хими заводне ӗҫе кӗнӗ. Пӗрремӗш шалу укҫине киле илсе таврӑнсан, Марине ӑна, аҫу сана пӗчӗк чух велосипед илсе пама ӗлкӗреймерӗ тесе, тӳрех магазина кайса чӑн-чӑн велосипед туянма хушнӑ.

Тӗлӗнмелле, ашшӗн сӑн-питне те, кӗлеткине-мӗнне те пите тӗтреллӗн ҫеҫ астӑвать Миша, ҫавна вара, хӑй унран ялан велосипед илсе пар тесе нӑйкӑша-нӑйкӑша ыйтнине, паян куп та кӑшт та пулин манман...

* * *

Михаил Алексеев гауптвахтӑра ларнӑ вӑхӑтра Василисӑран чаҫе ҫыру та килнӗ иккен. «Эпӗ,— тенӗ вӑл ҫырӑвӗнче,— ҫав велосипедпӑн мӗн те пулин пулассине малтанах сисрӗм ҫав, Миша. Атте киле таврӑнсан ай-яй мӗнле урчӗ. Шутла-ха эс, шӑпах уп велосипечӗ пулнӑ вӗт-ха вӑл тата. Ҫыранран хӑпарсан вӑл эпир хӑварнӑ хута вуланӑ та тӳрех сирӗн чаҫе шӑнкӑравланӑ, «вӑрӑ» хушаматне пӗлтернӗ. Лӑплантӑр тесе, иксӗмӗр ун чухне пӗрле пулни ҫинчен каласа патӑм та ӑна, лӑпланма мар, хама та пӗтӗмпех асар-писер тустарма тытӑнчӗ. Юрӗ, Миша, уншӑн ытлашшипех ан хуйхӑр, ҫилли иртсе каййӗ-ха аттен. Уп ҫинчен мар, ман ҫинчен шухӑшла эс халь. Эпӗ те сана кӗтетӗп, сан кунусене шутлатӑп. Саншӑн пурӑнатӑп! Василиса».

* * *

Алексеев ефрейторӑн служба пӗтерсе килне кайма вӑхӑт ҫитрӗ. Хайӗн пӗтӗм салтак пурлӑхне чӑматапа тул-

тарчĕ те вăл юлашки хут КПП алăкне уçса хупрĕ, анчах хайĕн ытти юлташĕсем пек тӳрех машинăпа ларса хула еннелле мар, çуранах Василисăсен ялнелле, хăйĕн савнийĕ патне, уттарчĕ.

Акă вăл урамалла тăватă чӳрече тухакан паллакă пысăк çурт тĕлне çитсе чарăнчĕ. Ăна хирĕç крыльца алăкĕ уçăлчĕ. Урама, салтак патне, Василиса амăшĕ тухрĕ. Хĕрĕхсенчен тинтерех иртнĕ чипер хĕрарăм Василиса амăшĕ. Паян вăл — те Миша килсе çитессине пĕлсех? — уяври пек тумланнă: кĕрен юбка, чечеклĕ кофта, çĕнĕ хăмăр пушмак тăхăннă, мăйне ылтăн вăчăра çакнă. Василисăнни пекех пысăк кăвак куçĕсем салтак çине ăшшăн кулкаласа пăхаççĕ.

Те Василисăн ашшĕ кăмăла кайманнипе, хĕрпе паллашнăраннă та çак çурта шала кĕрсе курманччĕ-ха халиччен Миша. Хальхинче вара кĕме лекетех ĕнтĕ унăн. «Мĕншĕн мана кĕтсе илме Василиса мар, амăшĕ тухрĕха?» — пăшăрханса шухăшларĕ йĕкĕт малтанлăха, анчах хĕр мĕншĕн тухманнин ăна кайрантарах паллă пулчĕ: вăл кăмака умĕнче çимĕçсем пĕçерсе аппаланнă пулнă иккен.

Алăк урати урлă ярса пусма ĕлкĕрчĕ кăна Миша, ун патне чи малтанхи хут укăлча çумĕнче курнă хайхи карчăк йăпăртатса чупса пычĕ те.

— Ай, ман савни çитрĕ-çке! — терĕ те вăл салтака мăйĕнчен ыталаса илсех чуптурĕ. Çур çул каялла чи малтан çыру çӳретнĕ Василиса Радостева-ватти пулчĕ ĕнтĕ ку. Пурте ахăлтатса кулса ячĕç. Ун хыççăнах шалти пӳлĕмрен Мишăн тепĕр «савнийĕ» сиксе тухрĕ.

— Чĕререн юратакан варлийĕм, кĕтсе ывăнтăм! —терĕ ку, анчах ватти пек чуптумарĕ, алă кăна пачĕ. Миша юрнех унăн аллине хытă чăмăртарĕ те, лешĕ ыратнипе кăшт çеç кукленсе лармарĕ. «Çур çул каяллахи хăвăн шӳтӳшĕн тавăрни пултăр-ха ку сана»,— терĕ ăшĕнче Миша кулкаласа. Чи юлашкинчен хăна патне Василиса — чи кĕçĕн Василиса Радостева тухрĕ. Ашшĕ килĕнче пулмарĕ, вăл чĕрĕ пула патне кайнă тесе пĕлтерчĕç ун пирки.

Шалти пӳлĕмре малтанах чаплă кĕреке хатĕрлесе хунă иккен виçĕ Василиса Радостева. Салтака тӳрех унта сĕтел хушшине кĕртсе лартрĕç. Никĕшĕ упăшкине каçса

илчӗ. Кил хуҫи те пулӑ йӑтса таврӑнчӗ. Шӑнӑрлӑ аллине тӑсса пачӗ те вӑл салтака, уп ҫине пӗр хушӑ тӗлӗннӗ пек-рех пӑхса тӑчӗ, вара сӗтел умӗнчи пукан ҫине сарӑлса ларчӗ.

— Ну-с, тӑвансем, ларӑр пурте майлашӑнса, салтак сывлӑхӗшӗн, уп службн вӗҫленнӗшӗн шалтти туса ӗҫсе парар малтанхи черккене,— сӗтел хушшинчи ҫынсем ҫине йӗркенӗрӗн пӑхса тухрӗ Ахваниҫ, вара чи малтан эрехне хӑй тӗппипех ӗҫсе ячӗ те, кряклатса, сухалне шӑлса илчӗ, ӑшӑ кукӑль татки ярса тытрӗ.

Ӗҫкӗ-ҫикӗ сӗтел хушшинче ҫапла каҫ пуличченех тӑсӑлчӗ. Ахваниҫ юлашкинчен салтака хулӗнчен тытрӗ те тул енчи пӳлӗме илсе тухрӗ, тенкел ҫине лартрӗ. Хӑй те ӑна хирӗҫ вырнаҫрӗ.

— Ну, Михаил, санран каҫару ыйтас теп эп паян,— чӗлӗм чӗртсе ячӗ ӳсӗрӗлме пуҫланӑ кил хуҫи.— Велосипедшӑн каҫару ыйтап, салтак. Пнтӗ тарӑхнӑччӗ те уп чух сана, гауптвахтӑпах лармалла туса хунӑ иккен ӗҫпе... Ха, уп пекех пулассине пӗлмеп ӗнтӗ. Тепӗр хут каҫару ыйтатӑп, иксӗртен те. Итле, эп сана уншӑн, тӑванӑм, спортивнӑй велосипед туянса парас терӗм. Мӗнле, туй парни тесе йышӑнӑп-и ӑна манран?

— Мӗнле туй, мӗнле туй парни? — аптраса ӳкрӗ Миша.

Ахваниҫ йӗкӗте шӗвӗр пӳрнипе юпаса илчӗ.

— Шалишь, туй тӑватпӑр! Паянах. Эй, Вера? Кил-ха кунта? Хӗре качча паратпӑр-и паян?

— Мӗн терӗн эс, Афоня? — арҫынсем патне тухрӗ Василиса амӑшӗ.— Василисӑна качча паратпӑр тетӗн-и? Ара, ап ухмахлап-ха уп пекех. Йӗркеллӗрех калаҫ ҫынпа. Тӑпларах тыт хӑвна. Атя луччӗ ташлама. Атьӑр, атьӑр, Миша, эсир те. Мӗн пустуй итлесе лармалла ӳсӗр ҫын палкаишне.

Вӗсем патне шалтан Василиса тухрӗ, амӑшӗ вара упӑшкине малти пӳлӗме илсе кайрӗ.

— Илтрӗп-и аҫу калаҫнине? — хӗр ҫине кулкаласа пӑхрӗ Миша.

— Илтрӗм,— терӗ хӗр Миша ҫумне ларса.

— Мӗн шутлан уп сӑмахӗ пирки?

— Ана ёнтĕ каччи лайăхрах пĕлме тивĕç! — куç-пуçне çиçтерсе илчĕ Василиса.

— Ах, савниçĕм, савниçĕм! — ыталаса илчĕ хĕре йĕкĕт.— Телейлĕ эп санпа, Василиса! Килĕшетĕн апла туй тума?

— Килĕшетĕп, Миша...— пуçне каччă хулпуççийĕ çине хучĕ хĕр.

— Çук, малтан хамăр пата, анне патне, кайса килетпĕр, Василиса. Вара туйне те кунта мар, лере, пирĕн патра тăвапăр! Çавăнпа та акă мĕн каласшăн эп сана, чунăм: çула пуçтарăнма лекет пуль сан кĕçĕрех...

Вĕсем патне каллех малти пӳлĕмрен Василиса аппĕ тухрĕ, хĕрне пĕр самантлăха хăйне салтакпа кăна хăварма ыйтрĕ.

— Итле-ха, ывлăм,— аллине Миша хулпуççийĕ çине хучĕ вăл Василиса кайсан,— паçăрах ыйтасшăнччĕ эп санран... Ăçтисем пулатăн эс? Сан хушамату, яту темскер... такама аса илтерет...

Миша хăй кунта салтака ăçтан килнине каларĕ.

— Чăваш республикинчен тетĕн-и? — тепĕр хут ыйтрĕ Ахваниç тĕлĕнсе.

— Çапла, Чăваш республикинчен.

— Хуларан-и, ялтан-и вара?

— Поселок, теççĕ пирĕн станцие. Ял тес — ял мар, хула тес — хула та пулса çитеймен. Канашпа Çĕмĕрле хушшинче ларать вăл, Вăрнар ятлă. Тен, иртсе кайма та тивнĕ пуль хăвăра та хăçан та пулин?..

Ахваниç тем каласшăн пулчĕ, анчах пырне чăмакка ларчĕ пуль-и — ӳсĕрсе кăна илчĕ.

— Аçу-аннӳ пур-и? — кăштахран ыйтрĕ вăл каччă çине çаплах питĕ сăнаса пăхса.

— Атте вилнĕ, анне пур,— ним пулман пекех сăмахларĕ Миша.

— Юрать, юрать, пĕрле пулăпăр малашне... Атя, кĕрсе ĕçер-ха тепрер черкке, тем, пыр тппе пуçларĕ пек туйăнать ман...

* * *

Аппĕне Миша, паллах, паллаймарĕ. Ахваниçĕ вара Василиса каччи кам пулнине халь ёнтĕ тĕппипех пĕлчĕ.

Ҫапах та вăрттăнлăха вăл никама та систермерĕ, халлĕхе хăй ăшĕнче кăна усрама тăрăшрĕ. Туй пирки те урăх сăмах хускатмарĕ. Ыйтăвне хĕрпе каччă каярахпа хăйсемех пĕрле татса пачĕҫ. Туйне кунта мар, Мишăсем патĕнче Вăрнарта тума калаҫса килĕшрĕҫ вĕсем. Миша ун пирки тепĕр куннех амăшне ҫырса пĕлтерчĕ.

Василисăсен килĕнче хĕрсех туя хатĕрленме пуҫларĕҫ, хĕрĕ валли пĕркенчĕксем, кĕпесем, ҫĕлеттерчĕҫ, парнесем хатĕрлерĕҫ. Хайĕн сăмахне ӳсĕрпе персе ячĕ пулин те, Ахваниҫ ун пирки манмарĕ, вăл та, салтак гауптвахтăра пулнине каҫарттармалла пултăр тесе, хуларан велосипед туянса килчĕ. Пурте хаваслă ҫӳрерĕҫ Василисăсен килĕнче, пĕртен-пĕр Ахваниҫ ҫеҫ ыттисен умĕнче темшĕн сăмаха питех ваклами пулчĕ. Хăй ҫуралнă тăвап ҫĕршывне ывăлне авлантарма унăн питĕ-питĕ каяс килчĕ, анчах хăранине ирттерсе яма ниепле те вăй ҫитереймерĕ-ха вăл. Куҫ умĕнчен Марине кайма пĕлмерĕ тата. Вăрнара каяс мар тесе сăлтав та шыраса пăхрĕ Ахваниҫ, анчах усси пулмарĕ, путлĕ сăлтавсем тупăнмарĕҫ. Василисăна амăшĕ ăна ним тусан та хăвармарĕҫ. Ҫапла вĕсем юлашкинчен тăваттăн ҫула тухрĕҫ.

Малтан пуйăсра Ахваниҫ йĕркеллех пычĕ, шӳтлекелеме-кулкалама та пăхрĕ вăхăт-вăхăтпа, анчах Шупашкар пуйăсĕ ҫине ларсан, чĕри ыратнипе аптраса ӳкрĕ. Ҫапах пăйкăшмарĕ-ха вăл, чирĕ пирки те ыттисем умĕнче пытарма тăрăшрĕ.

Хăйĕн пулас хунĕшĕ кам иккенне Миша Ҫĕмĕрлене ҫитес чухне пĕлчĕ. Купере вĕсем Ахваниҫпе иккĕш ҫеҫ юлчĕҫ те, лешĕ, ун умĕн вагон-ресторанран эрех ĕҫсе килнĕскер, йăлтах каласа пачĕ вара.

— Эх, ывăлăм, ывăлăм, «пĕчĕк упа ҫури», Мишутка!— йĕрсе ячĕ Ахваниҫ.— Леҫипет та леҫипет, теттĕнччĕ ача чух. Аҫу велосипед та илсе параймарĕ сана ун чухне. Аҫу путсĕртен те путсĕр ҫын пулчĕ саншăн!.. Атăл тăрăхĕпчен ют ҫын велосипечĕ ҫине мар, аҫунни ҫинех ларса тарнă вĕт-ха эсĕ! Халь, авă, илсе патăм сана, анчах кая юлса пулчĕ вăл, кая юлса... Каҫар мана, ывăлăм, каҫар... Ах, епле тĕлпулу, епле тĕлпулу!

Самаях хĕрĕнкĕ ашшĕ мĕн пакăлтатнипе Миша мал-

танах ĕненесшĕн те пулмарĕ, анчах каярахпа ĕненмех лекрĕ ăна. Хăй те йăлтах тунката пек пулса шанках хытрĕ вара вăл. Ашшĕ ăна халлĕхе ку вăрттăнлăха Василисăна та, ун амăшне те пĕлтерме хушмарĕ, пĕлтерместĕпех тесе ывăлĕнчен сăмах та илчĕ.

Çĕмĕрле станцийĕ хыçала тăрса юлчĕ. Кĕçех Вăрнар пулмалла, Мишăн тăван поселокĕ. Унта ывăлне пĕччен пурăнакан Марине кĕтет, паян вăл пулас кинĕпе пĕрле килсе çитессе те пĕлет!

Акă пуйăс вăрмантан тухса хими завочĕ патне çитрĕ. Пилĕк хутлă пысăк çуртсем, вокзал. Миша чӳрече патне чупса пычĕ, перрон çинче амăшĕ хул патаккисем çине уртăнса вакун алăкĕсене ăнтăлса сăнанине курчĕ. Пуйăс чарăннă-чарăнман Миша çĕре сикрĕ, Василисăпа амăшне анма пулăшрĕ те амăшне хирĕç чупрĕ.

Тамбурта велосипед йăтса тăракан Ахваниç те Маринене тӳрех асăрхарĕ, ывăлĕ амăшне мĕнле ыталанине курчĕ. Велосипедне вăл Василисăна тыттарчĕ, лешĕ ăна Миша патнелле чунтарса кайрĕ. Анма тесе урине те ярса пуснăччĕ ĕнтĕ Ахваниç, анчах тем шухăш кĕчĕ çав вăхăтра пуçне, хăвăрт каялла чакрĕ этем. Тепловоз малалла кăрт туртăнчĕ, пуйăс тапранчĕ. Унăшки юнашар çуккине Василиса амăшĕ тин сисрĕ, вакун енне çаврăнса пăхрĕ те кăшкăрса ячĕ:

— Афоня! Сик хăвăртрах! Афоня!

Пурте хыпăнса ӳкрĕç. Ахваниç, тамбурта тăраканскер, аллине сулчĕ те курăнми пулчĕ. Пуйăс апаталлаваскарĕ.

**ТУПМАЛЛИ:**


Туртăм . . . . . . . . . 1
Çырма Машукĕ . . . . . . . . . 5
Пирĕн Петюка курман-и? . . . . . . . . 9
Нимĕç кин . . . . . . . . . 16
Вăрçă участникĕ . . . . . . . . . 22
Вилĕм улшуçĕ . . . . . . . . . 26
Тăрри шăтăк . . . . . . . . . 32
Курск шăпчăкĕ . . . . . . . . 36
Упăшкин палăкĕ . . . . . . . . . 43
Хĕрлĕ пушмак . . . . . . . . 46
Çĕрĕ . . . . . . . . . . . 50
Кĕве çинĕ юрату . . . . . . . . . 57
Сип-симĕс тăраллă тусем . . . . . . . 63
Тунсăх . . . . . . . . . 68
Велосипед . . . . . . . . . 78



Библиотека «ВУЧАХ», № 2

**ВЛАДИМИР ПРОКОПЬЕВИЧ КУЗЬМИН**

**НЕ ВСЕ ПАЛЬЦЫ РАВНЫ...**

Рассказы

На чувашском языке

Редактор **М. Н. Юхма**
Художественный редактор **В. М. Михайлов**
Художник **В. И. Агеев**
Корректор **Л. Г. Чермакова**

Сдано в набор 11.11.1991 г. Подписано к печати 8.01.1992 г. Формат 50×100 1/32. Объем 5,0 уч. издат. л. Заказ № 2469. Тираж 15000 экз. Цена подписки 50 коп. В розницу — 3 руб. ИНДЕКС 78352.
Типография № 1 Государственного комитета Чувашской Республики по делам издательств, полиграфии и книжной торговли, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

35=

29825